КС(Чув.)
Д18
22120-чув.

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# Фронтра

*КАЛАВСЕМ*
*ОЧЕРКСЕМ*

КНИГОХРАНИЛИЩЕ
ЦАУ. ЧАССР.
Инвент. № 1475

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1944

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач ________

Сух. тип. № 7. 10296 — 10 000 000.

КФ
К С(Чув)
Д18

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# ФРОНТРА

*КАЛАВСЕМ*
*ОЧЕРКСЕМ*

фх
3
ОТ.К.

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1944

ПРОВЕРЕНО
2007

м 22120 - чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

# УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ

## 34-МĔШ АТАКА УМĔН.

... Виççĕмĕш хут вăрçăра пуласси çинчен эпĕ мирлĕ вăхăтра шутламан та темелле. Аллă çула çитнĕскер, хам ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăтăм.

1941-мĕш çулта пирĕн тăван çĕршыва хаяр тăшман тапăнса кĕчĕ. Çамрăксене вăрçа иле пуçларĕç. Тăван çĕршывăма хаяр та усал тăшманран сыхламалла. Эпĕ хамран-хам ыйтатăп: аллă çула çитрĕм, эпĕ ватă ĕнтĕ, вăрçă çыннисен ретĕнчен тухнă. Икĕ хутчен вăрçăра пулнă. Анчах халĕ, çĕршывшăн питех те хăрушă кунсем килсе тухнă вăхăтра, мĕнле килте ларас-ха? Çук, эпĕ ун пек çын мар. Маншăн тăван çĕршыв хаклă. Эпĕ ăна вĕçĕмсĕр юрататăп, уншăн вăрçма граждăн вăрçи вăхăтĕнче хамăн ирĕкĕмпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, тăшмана çĕмĕрсе тăкичченех çапăçрăм. 1914—16 çулсенче нимĕçсемпе вăрçнă. Суранланнă. Халĕ эпĕ каллех сывлăхлă. Тăван çĕршыва мăшкăллас, ăна чуралăха кĕртес шутпа килнĕ ирсĕр тăшмана çивчĕ шăлсемпе туртса çурас килет.

Тăшман ирсĕр те хаяр. Пирĕн хуласене, ялсене çĕмĕрет, çунтарать. Совет çыннисене—стариксене, карчăксене, хĕрарăмсене, ача-пăчасене çакса, персе вĕлерет, вутта пăрахса çунтарать. Ĕçлеме юрăхлă çамрăксемпе хĕрарăмсене Германие чура тума хăваласа каять. Вĕсене выçăллă-тутăллă усрать. Ĕçлейми пулсан — персе пăрахать. Çак мăшкăла илтсе, курса тăрса, епле-ха эпĕ килте ларма пултарăп? Çук, эпĕ вăрçăра пулма тивĕçлĕ! Пĕр нимĕç фашистне персе пăрахсан та, Хĕрлĕ Çара усă туни пулĕ. Çук, ку сахал. Эпĕ вăйлă-ха. Пĕр фрица çеç мар, вуннăшне, çĕрĕшне те пĕтерме вăй çитĕ.

Эпĕ вăрах шухăшласа тăмарăм. Хĕрлĕ Çар ретне хам ирĕкпе каясси çинчен заявлени çырса военкомата васкаса утатăп.

Малтанах мана çара илесшĕн мар пулчĕç.

— Çитĕ сана, эсĕ икĕ вăрçăра пулнă. Пирĕн çамрăксем те çителĕклех-ха. Килте пурăн,—теççĕ мана военкоматра.

— Эсир манăн çула ан пăхăр, сывлăха тĕрĕслĕр,—тетĕп эпĕ.

Военкоматра ĕçлекенсем ман çине пăхаççĕ те кулаççĕ. Вĕсем эпĕ шӳт тăватăп теççĕ пулас.

— Эсир ан кулăр. Эпĕ сирĕнпе кулăшла выляма килмен кунта. Вăрçă вăл кулăш мар,—тетĕп эпĕ çиленерех.

Кураççĕ: эпĕ вĕсемпе шӳт тумастăп. Хăйсем хушшинче хуллен калаçса илчĕç.

— Ну, юрĕ. Паянлăха киле кай. Тепĕр хут шухăшласа пăх. Ыран татăклăн пĕлтерĕпĕр,—тесе ăсатса ярасшăн мана.

— Мĕн шухăшламаллине эпĕ тахçанах шухăшланă. Эсир мана каллĕ-маллĕ ан çӳретĕр. Эпĕ фронтра пулма тивĕçлĕ,—терĕм юлашкинчен татса.

Хам çирĕп тăман пулсан, эпĕ халĕ те фронтра пулас çукчĕ-и тен...

— Ну, юрĕ апла пулсан. Ыран кил,—терĕç юлашкинчен.

— Тавтапуç ырă сăмахăршăн,—тесе тавтурăм та, пурне те алă тытса тухрăм.

Тепĕр кунне ирех военкомата çитрĕм. Вĕсем мана фронта ăсатмалли хутсене хатĕрлесе хунă.

— Ну, юлташ, ăнăçлă çул пултăр. Нимĕç захватчикĕсене лайăхрах çĕмĕрме сывлăх сунатпăр. Ырă, сывă таврăнмалла пултăр,—тесе ăсатрĕç вĕсем.

Паян ака эпĕ фронта çитсе фашистсене хирĕç çапăçма пуçлани 14 уйăх тулчĕ. Çак вăхăтра 33 хутчен наступленире пултăм. Икĕ хутчен çăмăл суранлантăм. Анчах суранлансан та, стройран тухман. Сурана туртса çыхнă та, малаллах кайнă. Мĕнле те пулин нимĕç салтакĕсене нумайрах пĕтерме тăрăшатăп.

Хăвăрах шутласа пăхăр ĕнтĕ: çав 33 наступленире эпĕ вă-

тамран икшер фрица çеç пĕтерне пулсан та—66 фриц „леш тĕнчере". Виçшер вĕлернĕ пулсан—99... Пĕр ӳстермесĕр калатăп: фронта килнĕренпе эпĕ 100 фрица вĕлернĕ-вĕлернех. Эпĕ вăл шута малашне татах ӳстерсе пыратăп.

Виçĕ хут вăрçăра пулса, виçĕ хут çĕнĕрен çуралса ӳсрĕм эпĕ. Фашистсем манăн пĕртен-пĕр юратнă ывăлăма вĕлерчĕç. Унăн вырăнне эпĕ вĕсене çĕр хут тавăрăп. Эпĕ ашшĕ. Манăн ватă алă чĕтресе тăмĕ.

Хисеплĕ редактор, çак çырăва эпĕ пичетлесе кăларма ыйтатăп. Чăваш халăхĕ эпĕ мĕнле çапăçни çинчен пĕлтĕр.

Çырăва çĕрле, шăши куçĕ пек çутăра çыратăп. Эпир черетлĕ наступление кĕме хатĕр. Халĕ пурте тенĕ пек тăванĕсем патне çырусем çыраççĕ. Эпĕ те çак çырăва çырса пĕтерсе, 34-мĕш наступление кĕме приказ кĕтетĕп.

Май, 1943 ç. *Действующи çар.*

# АШШĔСЕМПЕ ЫВĂЛĔСЕМ

## I

Фронта почта кун сиктерсе пырса тăрать. Почта килнĕ кун пуриншĕн те савăнăçлă: хăшĕсем çĕнĕ хаçат вуласа çĕнĕ хыпар-хăнар пĕлеççĕ, çырусем урлă çемйисен, тăванĕсен, тусĕсен пурнăçĕсемпе паллашаççĕ. Почтальон кашни блиндажа кĕрсе кашни красноармееца, командира, политработника мĕн те пулин парса хăварать.

Почтальон тухса кайсан вара, пĕр вăхăта блиндажра шăп пулать. Пурте вулаççĕ.

Акă паян та, яланхи пекех, почтальон хаçатсем, çырусем салатса тухрĕ. Иван Кузьмин килĕнчен çыру илчĕ. Конвертне тирпейлĕн уçрĕ те вулама тытăнчĕ. Пĕр хут вуласа тухрĕ, унтан тепĕр хут. Пичĕ çинче савăнăç. Тутисем ачашшăн кулаççĕ.

Кузьминăн юлташĕ, красноармеец Макаевский, унăн çумне пырса ларчĕ.

— Çыру илтĕн-им?

— Илтĕм,—кĕскен ответлерĕ Кузьмин.

— Арăмăнтан-и?

— Çук, ывăлтан... Хам фронта тухса кайнă чух пирвайхи хĕл шкула кая пуçланăччĕ. Халĕ вăн—çырма та вĕренсе çитнĕ. Лайăх çырать тата. Ӳсет. Хам киле таврăннă тĕле чăн-чăн писарь пулать.

Макаевский темшĕн тарăнăн сывласа илчĕ.

— Çамрăксем вĕсем ӳсеççĕ... Манăн та, санни пекех, 10 çулхи ывăлăм пурччĕ. 2-мĕш класра вĕренетчĕ. Иккĕмĕш çул çине кайрĕ ĕнтĕ, пĕр хыпар-хăнар та çук. Те чĕрĕ, те нимĕçсем мĕн те пулин турĕç. Амăшĕпе пĕрле пулсан татахчĕ хăть. Амăшне уйăрса Германине илсе кайнă пулсан,

пĕтрĕ вара. Ытла йăваш ачаччĕ. Пĕччене юлсан, унран çăкăр татăкĕ тупса çиесси те пулмасть. Выçах вилĕ...

Кузьминпа Макаевский иккĕшĕ икĕ вырăнтан. Кузьмин—Чăваш республикинчен, Макаевский—Белоруссирен. Вĕсем пĕри—чăваш, тепри белорус пулсан та, çав тери татуллăн пурăнаççĕ, пĕр тăвансем пек.

Анчах Кузьмин килĕнчен час-часах çырусем илсе тăрать. Макаевский ниçтан та çыру илмест.

— Ан хуйхăр, санăн çĕршывна та час нимĕçсенчен тасатăпăр,—тесе йăпалантарать вара ăна Кузьмин.

Макаевский пĕр вăхăта чĕнмесĕр ларать. Унтан:

— Тасатассине тасатăпăр, Кузьмин юлташ. Анчах хăçан? Инçе вĕт-ха эпĕ пурăнакан вырăна çитесси? — тет вăл хуйхăллăн.

— Нумай кĕтнине, сахала кĕтсе илĕпĕр. Илтместĕн-им, пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малаллах кайса пыраççĕ? В... пирĕн алăра. Унтан Я... хули те час пирĕн пулĕ,—тесе йăпантарать Кузьмин хăйĕн юлташне.

Макаевский Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе пĕр иккĕленмесĕр ĕненет. Анчах унăн арăмĕпе ывăлĕн сывлăхĕсене тата вĕсем мĕнле пурăннине пĕлес килет. Çакă унăн чĕрине ыраттарать.

— Юлташсем, фрица курма тухăр. Пирĕн разведчиксем пĕрне тытса килнĕ,—сасă илтĕнчĕ çак вăхăтра тултан.

Красноармеецсем блиндажсенчен сике-сике тухрĕç. Пăхаççĕ — чăнах та нимĕç салтакĕ. Вăл сылтăм аллине котёлок тытнă, котёлокĕ ăшĕнче туллиех ыраш. Красноармеецсем тĕлĕнсе тăраççĕ.

— Вĕсем иккĕнччĕ. Пĕр лупашкара ыраш пăтти пĕçерсе ларатчĕç. Пĕри тарма хăтланчĕ те — персе пăрахрăмăр,—тесе пĕлтерчĕ разведчик Лукьянченко.

Красноармеецсем ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Выçăхса çитнĕ апла? Ыраш пăтти çисе тăранса пурăнаççĕ иккен. Çапах пире çĕнтерме шутлаççĕ хăйсем. Ых, выçă çăхансем!..

Нимĕç салтакĕ, вырăсла пĕлмест пулсан та, хăйĕнчен

кулнине чухлать. Вăл пĕрре красноармеецсем çине, тепре котёлокĕнчи ыраш пăтти çине пăхса илет. Унтан пуçне çĕрелле чиксе, сăмси тăрăх пăхать. Намăс. Гитлер салтакĕсем çăкăр вырăнне—ыраш пăтти пĕçерсе çиеççĕ! Вăл ырашĕ те пулин хăйсен мар.

Макаевский тыткăна лекнĕ салтак çине йĕрĕнчĕклĕн пăхса илчĕ. Унтан çывăхарах утса пычĕ.

— Ых, Гитлер йыттисем! Выçă, çапах çапăçатăр. Ку ыраш пăтти камăн? Пирĕн арăмсен, ачасен пайĕ. А эсир, тулласа илсе тухнă та, кĕрпе тумасăрах пĕçерсе çиетĕр. Выльăхсем эсир, çынсем мар, — пĕтĕм чунĕнчен тарăхса вăрçать Макаевский. Унтан вăл нимĕç салтакĕ умнех пырса çитрĕ те хаяррăн пăхса илчĕ. Ирĕк парсан, вăл тыткăна лекнĕ салтака çакăнтах таткаласа тăкнă пулĕччĕ.

Макаевский тӳрех командир патне утса пычĕ:

— Командир юлташ, эпĕ разведчик пулас тетĕп.

— Пулма пултаратăн... Хăравçă мар-и эсĕ?—кăшт шӳт туса ыйтрĕ командир.

— Командир юлташ, мĕншĕн апла калатăр? Эпĕ хам çине хам шанатăп. Çавăнпа та хам ирĕкпе разведчик пулса, нимĕçсен тылне кайса, вĕсене таврма ĕмĕтленетĕп,—терĕ Макаевский.

— Аван ĕмĕт. Анчах эсĕ унти вырăнсене пĕлетĕн-и?— ыйтрĕ командир.

— Çав вырăнта çуралса ӳснĕ эпĕ. Манăн çемье те унтах,—тесе пĕлтерчĕ Макаевский.

— Юрать, эсĕ шухăшланă пек пулĕ,—терĕ командир.

— Тавтапуç, командир юлташ,—пĕтĕм чунĕнчен тавтуса командир патĕнчен тухрĕ вăл. Кузьмина хăйĕн савăнăçĕ çинчен пĕлтерчĕ.

— Ырă çул пултăр. Сывă çаврăнса килессе кĕтетĕп. Май пулсассăн, хăвăн тăван ялна та çит. Арăмна, ывăлна курса савăн, вĕсене хамăр енне каçарма тăрăш. Пирĕн яла кайса колхозра пурăнма пултараççĕ. Пӳрт манăн пысăк, санăн çемйӳне те çитĕ.

Унтан вĕсем пĕр-пĕрин аллисене тытса хытă чăмăртарĕç.

— Икĕ эрнерен çаврăнса çитме тăрăшăп. Кĕт,—тесе уйрăлчĕ Макаевский.

Вăхăт, яланхи пекех, малалла шăвать. Кун сиктерсе почта килет. Вăхăт-вăхăт наступленисем пулаççĕ. Унтан каллех лăпланать. Хĕрлĕ Çар хуллен-хулленех фашистсене хĕвеланăçнелле хăвалать. Фашистсем хĕçпăшалĕсене пăрахса тараççĕ. Хуласене, ялсене çунтарса хăвараççĕ.

## II

Макаевский фронт урлă каçса ӳкрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл фашистсен тылĕнче. Кăнтăрла вăрманта е хăмăш хушшинче пытанса выртать. Çĕрле фашистсен вăйне пĕлсе, вĕсем хăш вырăнта тăнине асăрхаса çӳрет. Халĕ вăл красноармеец тумтиррипе мар, унăн çийĕнче хура тăла пиншак, пуçĕнче çĕлĕк, уринче кивĕ сăран атă. Çулĕ хĕрĕхрен çеç иртнĕ пулин те, сăнĕ çине пăхсан, ватă старик пек курăнать. Сухалне ӳстернĕ, уссийĕ тутисем çинелле усăнса аннă. Вăл халĕ пĕтĕмпех урăх çын.

Çапла тĕплĕн разведка туса, Макаевский хăйĕн тăван ялĕ патнелле çывхарать. Вăл арăмĕпе ывăлне курасшăнваскать. Тата унăн хăйĕн çаçне вăхăтра таврăнмалла. Вăл хăйĕн командирне сăмах pană. Вăл хăйне шаннине çухатасшăн мар. Пуринчен ытла ăна юлташĕ Кузьмин кĕтет. Вĕсем вĕт пĕр-пĕринпе мĕн вăрçă чарăничченех пĕр-пĕринчен уйрăлмалла мар, тесе сăмах пĕтернĕ. Вăрçă чарăнсан та, пĕрле пурăнма, е Белоруссинчи колхоза, е Чăваш республикине куçса кайма калаçса татăлнă. Вăрçăра вĕсем çавтери туслашса çитнĕ. Вĕсене ĕнтĕ никам та уйăрас çук. Уйăрсан та вĕсене—çапăçури вилĕм çеç уйăрма пултарать. Анчах вĕсене вилĕм те хăратмасть, мĕншĕн тесен вĕсем ватă воинсем. Çапăçусенче пиççе хурçă пек çирĕпленнĕ. Вилĕмрен хăрать пулсан, Макаевский пĕр пĕччен фашистсен тылне те кайса çӳремĕччĕ.

— Кам пĕлет... Задача çăмăл мар. Тен эпĕ каялла çав-

рăнса килеймĕп те. Вăрçă чарăнсан эсĕ вара, Кузьмин юлташ, манăн арăмпа ачана ан пăрах. Ху патна кусар. Сана мĕн те пулин пулсан, эпĕ те санăн çемйуне пăрахмăп,—тенĕччĕ Макаевский разведкăна тухса кайнă чух.

— Большевиксен сăмахĕ çирĕп. Мĕн каланине пурнăçлăпăр,—тесе юлчĕ Кузьмин.

III

Кузьмин хăйĕн юратнă юлташне кашни кун кĕтет.

Пĕррехинче каллех:

— Пирĕн разведчиксем пĕр çынна тыткăна илнĕ. Курма тухăр, тени илтĕнчĕ.

Чăнах та пĕр çынна тытса килнĕ. Анчах ку çитĕннĕ çын мар, вунă-вунпĕр çулхи ача кăна. Нимĕç те мар, белорус ачи.

— Ăçта каятăн эсĕ? Фронт урлă мĕнле каçрăн?—тесе ыйтаççĕ ачаран.

— Манăн атте Хĕрлĕ Çарта служить тăвать. Эпĕ аттене шыраса фронт урлă каçса килтĕм,—тесе пĕлтерет ача.

— Мĕн ятлă эсĕ?

— Эпĕ Петр, аттене Афанас, теççĕ. Хушамат пирĕн Макаевский, — тесе тăрать ача.—Хăй савăнса красноармеецсем çине пăхса тăрать, тутисем кулаççĕ, куçĕсем йăлтăртатаççĕ.

— Акă, манăн шкулта вĕреннĕ чухне учитель çырса панă хут та пур,—тет ача.

Чăнах та хут çинче: „Макаевский Петр Афанасьевич, 3-мĕш класра вĕренекен школьник“, тесе çырнă.

— Аçуна курсан паллайăн-и?

— Ăçта вăл? Халех паллатăп,—тесе тăрать ача.

— Аннӳ пур-и? Халĕ ăçта вăл?

Ку ыйтăва хирĕç ача часах ответлеймест. Вăл красноармеецсен куçĕсенчен тилмĕрсе пăхать:

— Анне-и? Анне пур. Анчах халĕ çук ĕнтĕ вăл... Ăна фашистсем тытса кайрĕç. Эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм.

Çавӑнпа аттене шырама килтӗм. Ӑçта манӑн атте?—пӗтӗм чунӗнчен йӑлӑнса ыйтать ача.

— Ан васка. Аçуна эсӗ курӑн. Вӑл пирӗн патра. Кӗт,— тесе йӑпатать ачана Кузьмин.

— Манӑн ӑна халех курас килет. Кӑтартӑр. Мӗншӗн пытарса усратӑр?—тесе тарӑхать ача.

— Пытарса мар, вӑл командировкӑна кайнӑ. Çак кун-сенче таврӑнать,—тесе ачашлать ачана Кузьмин.

Ача лӑпланать. Фашистсем хӑйсене тарӑхтарни çинчен каласа парать:

— Аçу килсен, эпир сана Чӑваш республикине ӑсатӑпӑр. Унта манӑн та сан пекех ывӑл пур. Вӑрçӑ чарӑнич-чен пӗрле пурнӑр,—тесе йӑпатать ачана Кузьмин.

Куншӑн ача çав тери савӑнать. Халӗ ӗнтӗ уншӑн Кузь-мин хӑйӗн тӑван ашшӗ пекех туйӑнать.

## IV.

Макаевский çӗрле çитрӗ. Вӑл Хӗрлӗ Çаршӑн чи хаклӑ сведенисем илсе килчӗ. Анчах арӑмӗпе ывӑлне курай-манни ӑна хурлантарать. Вӑл пуринчен малтан командир патне кӗрсе ӑна хӑй мӗн курнине, пӗлнине каласа пачӗ. Командир шӑппӑн итлесе хут çине çырса илчӗ.

— Халӗ ӗнтӗ канма пултаратӑн. Ку хаклӑ ӗçшӗн сана пирӗн правительство ахаль тумӗ—наградӑ парӗ... Ах, ка-лама манса кайнӑ. Саншӑн пысӑк савӑнӑç пур кунта,— терӗ командир юлашкинчен.

— Мӗнле савӑнӑç? Кала командир юлташ,—кӑшкӑрса ыйтрӗ Макаевский.

— Халӗ каламастӑп. Кузьмин патне кай, унта курӑн,— терӗ командир.

Макаевский хӑй пурӑннӑ блиндажа хӑвӑрт пырса кӗчӗ. Лешсем пурте çывӑраççӗ.

— Кузьмин, Кузмин! Вӑран,—урисенчен лӑскаса вӑ-ратрӗ ӑна Макаевский.

Кузьмин сиксе тӑрса ларчӗ.

— А, Макаевский юлташ! Çавăрăнса çитрĕн!—ыйăх тĕлĕшпе калаçса илчĕ Кузьмин.

— Мĕн çĕнни пур? Кала хăвăртрах!—васкатать Макаевский.

— Çĕнни нимех тек çук,—анаслать лешĕ.

— Командир маншăн темĕнле савăнăç пур тесе пĕлтерчĕ.

— А-а-а...—Вăл пур,—карăнса анаслать Кузьмин.

— Мĕнле савăнăç? Кала хăвăртрах!

Кузьмин хăйпе юнашар çывăракан ача çине пўрнипе тĕллесе кăтартрĕ:

— Паллатăн-и, кам пулать çак ача саншăн...

Макаевский пĕр вăхăта ача çине пăхса шăнкаx тĕлĕнсе тăчĕ. Вăл хăйĕн куçĕсене хăй ĕненмест. Унтан çывăракан ачине ыталаса илсе, вĕçĕмсĕр чуптăва пуçларĕ:

— Петя! Петр! Петрусь!..

Ашшĕ сассине илтсен, ачи те ыйхинчен вăранчĕ:

— Атте! атте!..—ачашланса йăшăлтататать.

Ашшĕпе ывăлĕшĕн, Кузьминшăн тата ытти красноармеецсемшĕн те калама çук савăнăç пулса тăчĕ.

Июль—1943 ç.

## КАМ АЙĂПЛĂ?

Ирхине. Юханшыв хĕрри. Çанталăка шурă тĕтре хупласа илнĕ. Курăк çинче, çăмăр çуса иртнĕ хыççăнхи пек, вăйлă сывлăм тăрать. Тĕтре витĕр тин çеç тухнă хĕвел хĕрелсе тăни курăнать. Пирĕнтен инçе те мар, сывлăмлă курăк çинче пĕр хура мĕлке мĕкĕлтетет. Мĕскер мĕлки вăл? Те çын, те выльăх, те пĕр-пĕр аманнă тискер кайăк? Çывăхне пымасăр пĕлме çук. Мĕлке пĕрре çĕкленет, тепре çĕр çумне ўкет. Хăй çапах тин çеç тухнă хĕвел еннелле туртăнса, хĕвеле хирĕç кайма тăрăшать. Анчах питех те ерипен кăна шăвăнать. Акă хай мĕлке патнелле çывăхаратпăр. Вăл йĕпе курăка сирсе хĕвеле хирĕç упаленет. Чарăнса тăрса мĕлке çине пăхатпăр. Ăнланма çук. Татах та çывăхарах пытăмăр. Ку япала—выльăх та

мар, тискер кайăк та мар—çынах иккен! Кам вăл? Мĕнле çын? Мĕншĕн-ха капла, тăватуран упаленет?!. Тен вăл чирлĕ, тен аманнă, тен ÿсĕр?

Мĕлке эпир çывăхарнине сисет. Çĕре чăсăлса ÿкет. Хăлхине çĕр çумне çыпăçтарса итлет, чылай вăхăт пĕр хускалмасăр выртать. Эпир татах çывăхаратпăр. Кĕлетке пиртен курăк ăшне пытанма тăрăшать. Хăй тавăрашĕнчи курăксене аллисемпе çăлса хăйĕн çине пăрахать. Курăкпа витĕнме тăрăшать.

Эпир ун патнех çитрĕмĕр.

— Кам эсĕ? Мĕншĕн капла йĕпе курăк çинче йăваланан?—тесе ыйтатпăр.

Пирĕн сасса илтсен, хай çын пуçне çĕклет. Пичĕпе пирĕн еннелле çавăрăнать. Анчах çынăн куçĕсем курăнмаççĕ. Куç улмисем вырăнĕсенче пушă путăк çеç курăнать.

— Кам эсĕ?—тепĕр хут кăшкăрса ыйтатпăр.

Çын аллисемпе сывлăша хыпаласа ури çине тăчĕ. Унăн çамки çинче юн кĕвелчĕкĕ хытса ларнă. Хăвăл куçĕсенчен юн шывĕ сăрхăнса тăрать. Вăл хăй камĕ çинчен пĕлтерме те хăрать пулас. Пĕтĕм ÿт-пĕвĕпе siksе чĕтрет. Тĕплĕн пăхсан, çÿçенсе каятăн: тумтирĕ ун шăтăк-çурăклă, тĕлĕ-тĕлĕпе ÿчĕ курăнать. Сывлăмлă курăк çийĕпе шуса пынипе хăй, шыва кĕрсе ÿкнĕ пекех, лачкам йĕпе.

— Эпĕ... Эпĕ...—хуллен пăшăлтататать вăл. Юнĕ пĕтнипе кăвакарнă тутисем йĕнĕ чухнехи пек мăклетеççĕ.

— Кам вара эсĕ?—тĕпчетпĕр эпир.

— Эпĕ нимĕçсен аллинчен, пленран тарса ÿкнĕ çын... Манăн хушаматăм—Егорчук... Халĕ ĕнтĕ эпĕ хам хăш вырăнтине хам та пĕлместĕп,—тет вăл.

— Эсĕ мĕнле, ăçта суккăрлантăн капла?—ыйтатпăр унтан.

Егорчук ассăн сывласа илчĕ:

— Мана нимĕçсем суккăрлатрĕç.. Куçсене шăтарчĕç... Нимĕн те курмастăп. Хĕвел хăш енчине çеç унăн ăшши пит çине ÿкни тăрăх чухлатăп, çапла вара хĕвеле хирĕç килетĕп... Хĕвелтухăçре—манăн тăван çĕршыв,—терĕ вăл хурлăхлă сасăпа.

— Ан хăра, эсĕ ĕнтĕ хамăрăн тăван çĕршывра. Эпир красноармеецсем пулатпăр,—тесе пĕлтертĕмĕр эпир. Егорчук савăнса карĕ. Вăл кĕл тĕслĕ кăвак тутисене сиктеркелесе кăшт кулнă пек турĕ.

— Юлташсем!.. Эсир чăнах та красноармеецсем-ши? Суймастăр пулсан, килĕр-ха ман патăма, манăн сире чуптăвас килет,—терĕ те вăл, пире ыталаса тытма хатĕрленсе, аллисене икĕ еннелле хăлаçларĕ.

— Мĕншĕн суяс. Чăн калатпăр. Эпир красноармеецсем.—Пирĕнтен пĕри суккăр çын патне пычĕ. Суккăр ăна ыталаса илсе вĕçĕмсĕр чуптума пуçларĕ.

— Тавтапуç сире, юлташсем! Халĕ ĕнтĕ эпĕ, куçăмсем курмаççĕ пулсан та—сывă. Совет халăхĕ мана пăрахмĕ,—тесе пăшăлтатать вăл.

— Кала-ха: хăçан, ăçта, мĕнле куççăрлатрĕç сана?—ыйтатпăр эпир.

Егорчук шăппăн йĕрсе калама пуçлать. Анчах куçĕсенчен ун, куççуль мар, юн шывĕ сăрхăнса тухать, шĕвек хĕрлĕ шыв питçăмартийĕсем тăрăх юхса анать:

— Эх, тăвансем, хам суккăрланни çинчен мĕн калас ĕнтĕ... Эпĕ хам та айăплă. Яла фашистсем пырса кĕрес умĕн, хамăр ялти колхозниксем пурте пекех вăрмана тухса тарчĕç. Эпĕ, мана нимĕнех те тумĕç-ха тесе, ялах тăрса юлтăм... Питех те хытă йăнăшрăм иккен. Фашист салтакĕсем яла пырса кĕчĕç те—тӳрех мана ярса тытрĕç: „Кала, колхозниксем ăçта?“—тĕпчеме пикенчĕç. Мĕн тăвас? Каларăм: „Вăрмана тарса пĕтрĕç“ тетĕп. „Тупса пар“! теççĕ мана. „Вăрман аслă. Ăçтан тупас манăн вĕсене? Пултараймастăп“—тетĕп. Çакăн хыççăн тытăнчĕç мана хĕнеме. Хĕнерĕç, хĕнерĕç те каллех: „Тарнă çынсене тупса парсан, хăвнах çăмăл пулĕ. Унсăрăн—чĕррĕн юлмастăн, теççĕ.—Çук, хуть те мĕн тăвăр манпа. Вĕлерсен—вĕлерĕр. Вăрманти колхозниксене тупса пама пултараймастăп“, терĕм эпĕ.

Фашистсем вара нумай каласса тăмарĕç, хăйсен тискер ĕçне тума тытăнчĕç.

— Куçĕсене чавса кăларăр та, ялтан кăларса ярăр ăна,—тесе хушрĕ нимĕç офицерĕ хăйĕн салтакĕсене.

Эпĕ ку сăмаха малтанах ĕненмерĕм. Мана хăратма çеç калать пулĕ терĕм. Малалла татах та мĕн пуласса кĕтетĕп. Сасартăк пĕр фашисчĕ манăн алăсене ярса тытрĕ те хыçалалла çавăрса хучĕ, иккĕмĕш салтакĕ пуçа тытрĕ, виççĕмĕшĕ штык вĕçĕпе куçăмсене чава-чава кăларса илчĕ. Малалла вара мĕн пулнине пĕлместĕп. Ăн çухалчĕ. Халĕ тĕлĕкри пек çеç кăшт кăна астăватăп. Фашист салтакĕсем мана шыва пăрахрĕç. Шывран мĕнле тухнă, ăна астумастăп. Темле шыва путса вилмен... Такам, пĕр-пĕр çын курса кăларнă пулĕ, тен. Халĕ акă маншăн тĕнче сĕм тĕттĕмех. Кам айăплă ĕнтĕ çакăншăн? Е эпĕ хам?.. Паллах, фашистсене кăшт та каçарма çук! Вĕсем тискертен те тискер этемсем! Çавах та, эпĕ хамăр колхозниксемпе пĕрлех вăрмана тарнă пулсан, мана никам та капла тăваяс çукчĕ. Куçăмсем тĕрĕс-тĕкĕлех пулĕччĕç. Вĕсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçаттăм. Халĕ ĕнтĕ эпĕ фашистсен мăшкăлĕ пулса юлтăм!—тесе пĕтерчĕ Егорчук хăйĕн сăмахне.

Эсир те, вулакан юлташсем, шухăшласа пăхăр: кам айăплă ĕнтĕ çак тискер ĕçре?

Июль—1943 ç.

## ВИЛĔМРЕН ХĂТĂЛНИСЕМ

Апрель уйăхĕ. Сăрт тăррисем хуран курăнаççĕ. Кăнтăрла хĕвел хĕртсе пăхать. Анчах ирлĕ-каçлă çаплах шăнтать-ха. Çырмасенче те пăр хускалса каяйман, аялтан шыв тулнипе çӳлелле çĕкленнĕ те, мăкăрăлса тăрать.

Хĕвеланăç енчен пĕр çын мĕлки утса килни курăнать. Вăл çулпа мар, варсем тăрăх пытанса утать. Унăн çийĕнче çĕтĕк-çатăк шинель, урисенче—тĕпĕ тухса ӳкнĕ çăмата. Урисем тухса каясран çăматтисене пралукпа чике-чике

туртса каркаланă, пуçĕнче нимĕç салтакĕсем тăхăнакан кивĕ пилотка. Унăн сăнĕ хура-сарă курăнать. Çулĕ çамрăк пулсан та çухаллă, çÿçĕ вăрăм. Вăл çын нумайранпа тăраничч̆ен çимен пулас. Халĕ ун темиçе талăк хушши çăварĕнче çăкăр тĕпренчĕкĕ те пулман пулĕ тен. Çурхи çил çинче çÿренипе тутисем çуркаланса пĕтнĕ, куçĕсем шалалла путса аннă. Вăл çын пĕтĕмпех халсăрланса çитнĕ, тайкаланса, пĕр уринчен тепĕр урине ирттереймесĕр ярса пусать.

Кам вăл? Ăçтан килет? Вăл хăй утаймиех ыванса çитнĕ пулин те, таçта васканă пек туйăнать. Ăçта васкать? Ăна никам та хыçĕнчен хăваламасть вĕт! Вăл хăй ирĕкĕпе утать. Ытах, ыванса çитнĕ пулсан, кăшт та пулин ларса канасчĕ. Унтан—каллех малалла. Кам пĕлет ăна, тен вăл çавăн пек хăйне-хăй шеллеме пĕлмен çын пулĕ. Вăл çын вăрахранпа çывăрман та пулас, утса пынă çĕртех куçĕсем хупăна-хупăна анаççĕ. Ыйăх тĕлĕшпе урисем тикĕс пусманран, пĕвĕ чут çеç çĕре чикĕнсе анмасть. Çавăнтах куçĕсене уçса пăхать те: „Ых, сана, мĕн кирлĕ мар ыйхуна парăнса пыратăн! Вăхăт çитсен акă Çывăрса тăранăн. Инçе юлмарĕ ĕнтĕ, часах çитес çĕре çитĕн“, тесе хăй тĕллĕн калаçать. Хăйне-хăй çĕклентерсе, малалла васкать. Анчах супса çитнĕ урисем питех те итлесшĕн мар. Çитменнине тата шыв сăхса кÿпченĕ çăматтисем чул пек йывăрланса çитнĕ. Халĕ уншăн чул мар, çур кĕренке те тем пек йывăр туйăнать. Анчах, çăматтисем çав тери йывăр пулсан та, вĕсене хывса ывăтма çук, ура айĕнче юр, вăл сĕлкĕшленсе çитнĕ. Кашни ярса пусмассерен ура-сыппи таран, хăш вырăнсенче чĕркуççи, пĕçтĕп таран путса анать. Çурхи юрлă-пăрлă шыв çăматтисен кунчинчен кĕрсе тĕпĕнчен юхса тухать. Урисем шăнса кÿтнипе нимĕн те туймаççĕ.

Çын, утсан-утсан пĕрре хыçалалла, тепре йĕри-тавра пăхать те, каллех малалла васкать.

Мĕн тăвас тетĕн, урисем итлеççĕ, майĕпен пулсан та, яра-яра пусаççĕ. Çыннăн пĕтĕм ÿт-пĕвĕ, чĕри, юнĕ, алли,



22120-чув
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

урисем вилĕм аллинчен тухасшăн, хăтăласшăн, пурнăçшăн кĕрешеççĕ. Пурнăç епле йывăр пулсан та, çын тӳсет. Вилĕм хăрушă. Çын вилĕмрен тарать, пурнăç патнеллеваскать. Эх, пурнăç... Никама та вăл йăлăхтармасть. Тăван çĕршыв хуть те камшăн та хаклă.

Пăхăр ĕнтĕ çак çын çине. Вăл вĕт çутă тĕнчешĕн, пурнăçшăн, тăван çĕршывшăн кĕрешсе утать. Çавсем уншăн хаклă пулмасан, вăл çакăнта, юрлă-пăрлă çурхи шыв çине выртăччĕ те вилĕччĕ. Çук, вăл вилĕм çинчен шухăшламасть те. Вăл ун çинчен мансах кайнă. Вăл темиçе талăк хушши çимен, çывăрман, йытă пек супнă пулсан та, малалла, çитес çĕре çитме тăрăшать.

Акă вăл пĕр тарăн вар тĕпне анса кайрĕ. Вар тăрăх çурхи юр шывĕ шавласа юхать. Унăн çав шыв урлă каçмалла. Шыв тарăн, сивĕ. Ăна пăхса тăма юрамасть, каçасах пулать. Мĕнле каçас? Утса е ишсе... Çын шыв-ран хăраса тăмарĕ, шампăртаттарса кĕрсе кайрĕ. Ыткăнса юхакан шыв ăна çапса ӳкерчĕ. Вăл юхать, ишет. Халĕ ĕнтĕ вăл пĕтĕм хуйхине манчĕ. Мĕнле те пулсан шывран тухасшăн çапкаланать. Пĕтĕм вăйне пухса шывран тухрĕ. Хăй тăрăх шапăртатса шыв юхать. Алли-урисем кӳтсе çитнĕ. Пуçĕнчи пилоткине шыв юхтарса кайрĕ.

„Шел мар. Ун пек пилотка тупăнĕ. Пурлă-çуклă тапакăм йĕпенчĕ, шел. Ăçта типĕтсе туртас-ши?"—тесе шухăшлать.

Ăшăнас тесе хăвăрт васкаса утать. Пĕр-пĕр яла кĕрсе типĕнĕччĕ, юрамасть, унта—нимĕç салтакĕсем. Вĕсем курсанах, ăна тытма пултараççĕ. Тепĕр хут лексен, вара урăх хăтăласси те пулмĕ. Ан та шухăшла.

Каç та пулать. Хĕвел анса ларас пекех. Çын ута-ута юханшыв хĕрне çывхарать. „Пăр хускалса кайиччен каçса ĕлкĕресчĕ", тесе шухăшлать. Анчах шыв урлă каçасси нимех те мар-ха. Инçех те мар—нимĕçсен окопĕ. Çав окоп урлă каççан... Часовойсем сиссен е тытса илĕç е тӳрех автоматран персе вĕлерĕç. Пĕр хут вилĕм-

рен хӑтӑлнӑ ҫыннӑн тепӗр хут вилӗм аллине пырса кӗресси килмест.

Вӑл тӗрлӗ мел шырать.

Акӑ вӑл тӗттӗм пуласса кӗтсе, пӗр снаряд шӑтӑкне пытанса выртрӗ. Унта та типӗ мар, шыв пулмасан та, юр ирӗлсе пӗтмен-ха. Ури ҫине тӑрсан, нимӗҫ салтакӗсем курма пултараҫҫӗ. Ҫитменнине тата ҫул инҫе мар, унпа час-часах машинӑсем, юланутлӑ нимӗҫсем иртсе ҫӳреҫҫӗ.

Ҫын пӗтӗмпех шӑнса ҫитрӗ. Шинелӗ айӗнчи йӗпе кӗпи ӳчӗ ҫумне ҫилӗмпе ҫыпӑҫтарнӑ пек ҫыпӑҫать. Ҫынна каласан ҫын ӗненес ҫук йывӑр пулсан та, вӑл чӑтать. Снаряд шӑтӑкӗ тӗпне чӗрӗп пек хутланса ӳкнӗ те, пӗр хускалмасӑр выртать. Шӑнсӑ чӗтренипе ҫеҫ хулпуҫҫи ҫийӗнчи шинелӗ кӑшт хускалнӑ евӗр курӑнать.

Сасартӑк, хӑйӗнчен инҫе те мар, ура сасси илтӗнчӗ. Ҫын шартах сикрӗ. Шӑнни иртсе кайрӗ, ҫанҫурӑмӗ вутла пӗҫерсе илчӗ: „Нимӗҫ салтакӗсем килеҫҫӗ. Каллех вӗсен аллине лекетӗп“, тесе шухӑшларӗ. Хӑй ҫапах хускалмасть. Тен, курмасӑр иртсе кайӗҫ...

Ура сасси унпа юнашарах. Пӗр ҫын снаряд шӑтӑкне анать. Леш чӑтаймарӗ, пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ.

— Кам эсӗ? Мӗн туса выртатӑн кунта? Эпӗ сана вилнӗ тесе.

Сасӑ хуллен те йӑвашшӑн илтӗнет.

Ҫын хӑй патне пынӑскере сассинчен палларӗ. Вӑл — хӗрарӑм. Ҫын тӗлӗнсе пӑхать. Ӑҫтан, мӗнле майпа килсе тухрӗ ку хӗрарӑм? Кам вӑл?

— Кам эсӗ? — тепӗр хут тӗпчесе ыйтрӗ хӗрарӑм.

Ҫын хӗрарӑм умне чӗркуҫленсе ларчӗ:

— Малтан ху камне кала...

— Куратӑн, эпӗ вырӑс хӗрарӑмӗ. Эсӗ вырӑс-и е нимӗҫ?

— Эпӗ те вырӑс ҫынни, — пӗлтерчӗ ҫын.

Хӗрарӑм тата хӑюллӑнтарах калаҫа пуҫларӗ. Ҫын ҫумнерех кукленсе ларчӗ:

— Апла пулсан, пирӗн иксӗмӗрӗн ҫулсем пӗрле пулӗ...

— Эсӗ ăҫталла каятăн?

— Эпӗ Совет Союзне таврăнма тухнă,—кӗскен пӗлтерчӗ хӗрарăм.

Ҫын ҫакна илтсен хӗпӗртесе ӳкрӗ. Вӗсем иккӗшӗ те вырăс ҫыннисем.

— Ăҫтан килетӗн капла?

— Тыткăнран тартăм.

— Эпӗ те...—терӗ ҫын савăнăҫлăн.

Унтан вӗсем юнашар ларса, пӗртăвансем пек ăшшăн калаҫа пуҫларӗҫ.

Хӗвел анчӗ. Ҫанталăка касхи сăн хупларӗ. Халӗ ӗнтӗ питех хăрамалла мар, ку снаряд шăтăкӗнче нимӗҫсем часах курас ҫук.

— Эсӗ красноармеец-и е ахаль ҫын?—ыйтрӗ хӗрарăм.

— Эпӗ Иван Перепёлкин,—темшӗн тӳррӗнех каласшăн пулмарӗ ҫын.—Ху мӗн ятлă?

— Эпӗ Ляля Краснова.

Вӗсем мӗнле йывăрлăхсем пулсан та, пӗрне-пӗри пăрахмалла мар сăмах пачӗҫ: вилсен те, пурăнсан та—пӗрле.

— Халӗ ир-ха. Тăхтар. Ҫӗрле пуларах патăр. Нимӗҫсем ҫӳреме лăпланччăр,—тет Перепёлкин.

— Тăхтар. Ҫурҫӗр тӗлнелле фронт урлă каҫăпăр. Анчах пăр хускалса ан кайтăрччӗ,—тесе пăшăлтатать Краснова.

— Кӗҫӗрех хускалса каяймӗ-ха. Шăнтать. Шыв урлă каҫсассăн вара унта хамăрăннисем,—тесе хăйне-хăй лăплантарать сержант Перепёлкин.

— Ваня, санăн ҫийӗнти тумтиррӳ йӗпе. Манăн типӗрех. Манăн пальтопа витӗнсе ăшăнмастăн-и? Витӗр шăннă эсӗ. Чирлесе ӳкӗн,—тет Ляля юлташне шеллесе.

— Апла хăна сивӗ пулӗ. Ҫук, кирлӗ мар. Эпӗ арҫын, тӳсӗп,—тет сержант.

— Манăн пальто питӗ шалпар. Вăл сана витӗнме те, мана валли те ҫителӗклӗ. Тыткăнра пурăннă чухне эпир вăл пальтопа виҫҫӗн витӗнсе выртаттăмăрччӗ: Пурсăмăра

та ăшататчĕ. Хыв хăвăн йĕпе тумтирруне,—тесе хушать Краснова.

Сержант итлет. Çийĕнчи йĕпе шинельне хывать.

Вĕсем типĕ пальтопа витĕнеççĕ. Самаях ăшă пек туйăнать.

— Ман çуммарах çыпăç,—тесе пăшăлтататать Ляля.

— Ух, ăшă. Ялан çакăн пек ăшăра пурăнасчĕ. Хăçан, мĕнле хамăрăннисем патне çитсе ÿкĕпĕр-ши? Унта вара каллех пурăнаттăмăр.

— Ан кулян. Тыткăнран хăтăлса кунта çитрĕмĕр ĕнтĕ. Фронт урлă çеç каçăпăр. Мĕн тăвас тетĕн. Вĕлерсен—вĕлерĕç. Урăх ĕнтĕ вăл тăшмансен аллине лекессĕмĕр çук,—тесе лăплантарать Ляля.

— Çук, манăн пĕртте вилес килмест. Пурăнас килет. Вилĕм тесен çÿç-пуç вирелле тăрать. Эпир вĕт санпа вилĕмрен хăтăлнă çынсем. Каллех вилĕм аллине лекмĕпĕр.

— Чăн, вилĕмрен хăтăлнă çынсем эпир... Ахаль çеç калатăп эпĕ. Манăн та, сан пекех, вилес килмест. Тĕнчере пурнăçран хакли нимĕн те çук... Ара, ху 23 çулта çеç тетĕн, çÿçÿн пĕрчисем шуралнă,—тет Ляля.

Вăл сержантăн вăрăм çÿç пĕрчисене тыта-тыта пăхрĕ.

— Çапла, шуралнă. Çÿç пĕрчисем шураласси вăл çултан килмест. Хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ мĕншĕнне...

— Пĕлетĕп. Манăн хамăн та, санăнни пекех, шураласçĕ,—терĕ Ляля хуйхăллăн.

Çапла вĕсем пурнăçа юратса, вилĕме кураймасăр, ăшă пальто айĕнче пĕтĕм чĕрисенчен калаçрĕç.

Вăхăт çурçĕр тĕлне çитрĕ. Нимĕç салтакĕсем лăпланчĕç. Çав каç çĕрĕ те çав тери тĕттĕм пулчĕ. Тÿпене хура тĕтĕм евĕр тачка пĕлĕтсем хупласа тăчĕç. Çавăнпа пĕрлех кăвак тĕтре çĕкленчĕ. Уйăх та, çăлтăрсем те курăнмаççĕ. Анчах нимĕçсем пĕр вĕçĕмсĕр, унта та кунта та ракета ярса тĕттĕм çĕре çутатаççĕ.

Перепĕлкинпа Ляля умлă-хыçлăн утса, нимĕçсен окопĕ патне çывхараççĕ.

— Ракета çӳлелле çĕкленсенех, çĕре чăсăлса вырт. Ан хускал,—тесе вĕрентет сержант Ляльăна.

— Пĕлетĕп. Эсĕ ытла ан васка. Часовой тăнă тĕле пырса тухас мар,—тесе утать Ляля.

Акă траншей патне пырса çитрĕç. Пăхкаларĕç. Никам та çук. Траншей урлă упаленсе каçрĕç. Чарăнса итлеççĕ. Сас-хура илтĕнмест. Ракета ялтăртатса çутатрĕ. Вăл çур минутран сӳнчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсен йĕплĕ пралук карта урлă çеç каçмалла. Унтан юхан шыв, унтан—хамăрăннисем. Хăш çĕрте тăватуран упаленсе, хăш тĕлте хырăмпа шуса йĕплĕ пралук карта умне çитрĕç. Асăрхаса пăхаç-çĕ. Карта виçĕ хутлă. Мĕнле каçас? Тата тимĕр картан тулашĕнче минăсем пулма пултараççĕ. Вĕсем çине çитсе кĕрсен—каллех вилĕм...

Халĕ ĕнтĕ вĕсем нимрен те хăрамаççĕ. Хăрассине маннă вĕсем. Хăравçă çынсем пулсан çакăнта çитеймĕччĕç те. Сержант, йĕплĕ пралуксен хушшинчен хĕсĕне-хĕсĕне, тепĕр енне тухрĕ.

— Хăвăртрах!—васкатать вăл юлташне.

— Манăн пальто кансĕрлет,—тесе пăшăлтатать Ляля.

— Хывса ывăт пальтоне карта урлă,—хушать сержант.

Ляля çийĕнчи пальтоне хывса карта урлă ывăтма тăчĕ. Анчах пальти леш енне каçмарĕ, йĕплĕ пралук çине çакăнса тăчĕ. Хăй хăвăртрах пралук карта айĕнчен хĕсĕнсе юлташĕ патне тухрĕ. Çак вăхăтра ракета çутăлса кайрĕ. Нимĕçсем пралук карта çийĕнче пальто çакăнса тăнине асăрхарĕç пулас. Ракета хыççăн ракета çутата пуçларĕç. Кăшкăрашаççĕ. Автоматсенчен пеме пикенчĕç. Нумай пульăсем çитсе лекнипе, пальторан çĕтĕк-çурăксем татăлса сирпĕнеççĕ. Çак вăхăтра таркăнсем пăр çине анма ĕлкĕрчĕç. Нимĕç автомачĕсен пульлисем вĕсен пуçĕсем урлă çеç шăхăрса иртеççĕ.

— Ну, Ляля, халĕ ĕнтĕ хăтăлтăмăр,—терĕ сержант ирĕккĕн сывласа.

Нимĕçсем çур сехет ытла пальто çине пĕр чарăнмасăр

перse тăчĕç. Пальто таткаланса пĕтсе çĕре ӳксен тин перкелешӳ лăпланчĕ.

Хамăрăннисем патне вĕсем пĕр шиксĕр пычĕç:

— Чарăнăр! Камсем килеççĕ? Пропуск?—тесе кăшкăрчĕ часовой.

— Хамăрăннисем. Тыткăнран тарса килекенсем эпир. Пропуск пĕлместпĕр,—терĕ сержант.

Часовой караульнăй начальнике чĕнсе илчĕ. Çынсене штаба ăсатрĕç.

Унтан вĕсене, сывлăхĕсене юсама, госпитале ячĕç.

— Госпитальте канăпăр ĕнтĕ, тăраниччен çывăрăпăр, тăраниччен çиййĕпĕр,—тет Перепёлкин.

— Халĕ ĕнтĕ канăпăр. Вилĕмрен хăтăлтăмăр,—тет Ляля, савăнăçлăн йăл кулса.

1943 ç.

## ШĂТĂК-ÇУРĂКА ХĔСĔННĔ ФАШИСТСЕМ.

Вăйлăн штурмовать тунă хыççăн, нимĕçсене „К" ятлă пĕчĕк хуларан хуса кăлартăмăр. Хули пĕчĕкçĕ пулсан та—пуян, илемлĕ хула пулнă. Анчах халĕ ĕнтĕ фашистсем унăн илемне пĕтернĕ, пурлăхне çаратса кайнă. Нумай çуртсене çунтарса хăварнă. Хула варринче сад пулнă, унти йывăççене касса пĕтернĕ, тункатисем анчах шакăртатса лараççĕ. Кино-театр пулнă, ăна ишсе антарнă. Акă икĕ хутлă чул çурт. Кунта хула халăхĕн библиотеки пулнă пулас, мĕншĕн тесен унăн таврашĕнче çунса пĕтмен кĕнекесем сапаланса выртаççĕ. Вĕсем хушшинче М. Горький, Л. Толстой, Пушкин тата ытти аслă писательсен произведенийĕсем те нумай. Çак картинăсем çине пăхатăн та, чĕре йĕппе чикнĕ пек ыратса каять. Фашистсене пĕр шеллемесĕр пĕтерес килет. Тепре пăхатăн та—чуну кăшт лăпланать, мĕншĕн тесен ăçта пăхнă унта вилнĕ фашист салтакĕсемпе офицерĕсем йăванса выртаççĕ. Вĕсем, Совет Союзĕн çĕрне тытса илме килнĕскерсем, хăйсене валли çăва шăтăкĕ тупнă.

Манăн юлташ старшина Давыдов хулари пурнăçа курса çӳреме шут тытнă:

— Атя, хулана тухса, курса çӳрер. Тен хула çыннисене курăпăр,—терĕ вăл.

Эпĕ унпала килĕшрĕм.

Автоматсене илтĕмĕр те хулана тухрăмăр. Пĕр тăвăр урампа пыратпăр. Ку урамра йывăç çуртсем пулнă, вĕсене пурне те çунтарса пĕтернĕ. Ишĕлсе анман кăмакасем анчах тăлăххăн пăхса лараççĕ. Сасартăк, пире хирĕç пĕр 12—13 çулхи арçын ача сиксе тухрĕ. Вăл пире курсан савăнăçлăн кăшкăрчĕ:

— Боец юлташсем! Килĕр-ха кунта, килĕр хăвăртрах!

— Мĕскер унта?—ача патне пыратпăр.

— Ав, куратăр-и, кăмака,—аллипе чăсса кăтартать вăл пире.—Çав кăмакара фриц-офицер пытанса выртать. Вăл хуларан тухса тарма ĕлкĕреймен. Каç пуласса кĕтет,—тесе пĕлтерчĕ ача.

Кăмака патне пытăмăр. Пысăк кăмака,—унăн ани хупă. Давыдов кăмака çăварне уçрĕ. Пăхатпăр, унта чăнах та çын выртать.

— Тух! Кам эсĕ?—кăшкăртăмăр.

Офицер пĕр сăмахсăр кăмакаран ĕселенсе тухрĕ. Вăл, тыткăна парăннă пек, аллисене çӳлелле çĕклерĕ. Куçĕсем капкăна çакланнă кашкăрăнни пек йăлтăртатаççĕ, урисем чĕтреççĕ: „Ан вĕлерĕр. Манăн пурăнас килет“ тесе каласшăн вăл. Анчах эпир ăна ĕненместпĕр. Çитĕ, пурăннă ĕнтĕ вăл. Çак хулана кам хушнипе çунтарса, ватса пĕтернĕ? Çак офицерсем хушнипе. Вырăс халăхĕн кĕнекисене кам çунтарнă? Çак офицер, тата унăн салтакĕсем. Халĕ тин вăл пирĕнтен пурнăç ыйтасшăн.

— Пиччесем!—сасартăк кăшкăрчĕ ача.

— Мĕскер?

— Ав хĕрарăмсем пыраççĕ!—терĕ ача.

Пăхатпăр. Чăнах та икĕ хĕрарăм хула хĕрринелле тухни курăнса кайрĕ.

— Вĕсем хĕрарăмсем мар,—фрицсем,—тесе тăрать ача.

— Чӑнахах-и?!

— Эй, инкесем! Тӑхтӑр-ха?—кӑшкӑрчӗ Давыдов.

Хӗрарӑмсем ҫавӑрӑнса пӑхрӗҫ те, тарма пикенчӗҫ.

— Пичче, пер автоматӑнтан! Тараҫҫӗ. Эпӗ сире суйса каламастӑп,—фрицсем вӗсем!—васкатать ача.

Давыдов аллинчи автомат тр-тр-трр!—турӗ. Хӗрарӑмла тумланнӑ фрицсем чӑсӑла-чӑсӑла ӳкрӗҫ...

— А-а, тараймӑр!—савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрать ача.

Кӑмакаран тупнӑ офицере штаба леҫрӗмӗр те, каллех хулана тухрӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ эпир виҫҫӗн. Пирӗнпе пӗрле ача. Вӑл пире хуларан тарма ӗлкӗреймен фрицсене шыраса тупма пулӑшать. Мӗншӗн тесен вӑл ҫак хулара пурӑннӑ. Ӑҫта шӑтӑк-ҫурӑк пур—вӑл пурне те пӗлет. Фашистсем шӑтӑк-ҫурӑксене пытаннӑ. Каҫ пуласса кӗтеҫҫӗ. Ҫӗрле хӑтӑлма шутлаҫҫӗ. Анчах пире хулари ачасем, хӗрарӑмсем, стариксем фрицсене тупса тытма пулӑшаҫҫӗ.

Июнь—1943 ҫ.

# „КУЧЧЕНЕҪЛӖ“ НИМӖҪСЕМ

Ҫӗр айӗнче—траншейра ларнӑ вӑхӑтра нимӗҫсем питӗ хастарлӑ вара. Траншейӑран хуса кӑларсан, мулкачсем пекех хӑравҫӑ. Ниҫта вырӑн тупаймасӑр каллӗ-маллӗ чупкала тӑраҫҫӗ. Тарса хӑтӑлма май пулмасан, тыткӑна парӑнма хатӗрех. Ӗнер эпир нимӗҫсене пӗр ялтан хуса кӑлартӑмӑр. Ҫакӑн хыҫҫӑн канма шутларӑмӑр. Повар яшка пӗҫерсе ӗлкӗртнӗ. Апатланса ларатпӑр. Сасартӑк пирӗн умра икӗ грузовик килни курӑнса кайрӗ. Грузовиксем ҫине нимӗҫ салтакӗсем тиеннӗ, тӳрех пирӗн паталла килеҫҫӗ. Эпир апатланма пӑрахса, автоматсене ярса тытрӑмӑр. Халех ҫулса тӑкма хатӗр. Нимӗҫсем пире курсан пурте урасем ҫине тӑчӗҫ: — Рус!..—кӑшкӑраҫҫӗ вӗсем.

„Ара, ку мӗн?!. Ӳсӗрскерсем пулас кусем! Ҫавӑнпа аташса пирӗн пата килсе тухнӑ“—тесе шухӑшлатпӑр.

— Аллӑрсене ҫӗклӗр! Унсӑрӑн халех перетпӗр!—тесе кӑшкӑратпӑр эпир.

Нимĕçсем грузовикĕсене чарчĕç. Пурте аллисене çӳлелле çĕклесе тăраççĕ. Шоферĕсем кабинăсенчен тухрĕç.

Нимĕçсем патне пытăмăр. Пăхатпăр,—вĕсем ӳсĕр мар, пурте урă.—Мĕн тума килтĕр? Мĕн кирлĕ сире?—ыйтатпăр.

— Пирĕн малалла кайма çул çук. Вырăссем пӳлсе илнĕ. Çавăнпа эпир тыткăна парăнатпăр,—тесе тăраççĕ.

Пăхатпăр: пĕр грузовикĕ çинче 20 ещĕк мина. Теприн çинче икĕ офицера çыха-çыха пăрахнă та, вĕсем месерле пăхса выртаççĕ. Хытă хĕненĕ пулас, иккĕшĕ те юнпа вараланнă, пичĕсене кăвакартса пĕтернĕ.

— Кусем мĕне пĕлтереççĕ!—тĕлĕнсе ыйтатпăр эпир.

— Вĕсем—сире валли кучченеç пулаççĕ,—тесе тăрать пĕр салтакĕ. Пирĕн красноармеецсем ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Фашистсем „кучченеçсемпех“ тыткăна парăнма пуçларĕç.

— Питĕ аван. Ку минăсене те кучченеçе илсе килтĕр-и?—тетпĕр эпир.

— Кучченеç. Сирĕн пата мĕнле-ха пушă алăпа килес пирĕн?—тесе тăрать нимĕç салтакĕ.

Мĕн тăвас, алла килнĕ „кучченеçсене“ йышăнтăмăр. Пирĕн алра—вуникĕ нимĕç салтакĕ, икĕ офицер, çирĕм ещĕк мина, икĕ грузовик машина.

— Ухмахсем эсир, сирĕн тахçанах çапла тумалла пулнă. Пурсăр та пирĕн пата тыткăна килнĕ пулсан, тахçанах вăрçă пĕтнĕ пулĕччĕ,—тетпĕр эпир.

— Пĕлмен вĕт эпир. Ак çаксем вĕт пире: вырăссем вĕлереççĕ, тесе хăрататчĕç. Çавăнпа хăраса, тыткăна парăнмасăр пурăннă,—тесе ответлеççĕ нимĕçсем, çыхса пăрахнă офицерĕсем çине кăтартса.

— Халĕ ĕнтĕ хăвăрах куратăр пулĕ. Эпир харпăр ирĕкĕпе парăнакан нимĕçсене пĕрине те вĕлерместпĕр. Хирĕç тăраканнисене—шеллеместпĕр...

— Чăн,—тесе тăраççĕ нимĕç салтакĕсем. Вĕсем хăйсемпе лайăх калаçнăран савăнса кăна тăраççĕ.

Апатланнă хыççăн эпир Орёл хули еннелле, ăна фашистсенчен ирĕке кăларас хаваслăхпа хускалса кайрăмăр. Нимĕç салтакĕсене хыçалалла ăсатрăмăр.

Июль, 1943 ç.

# ЛИЗАВЕТА ЕГОРОВНА

Пушово ялӗнче ӗнер нимӗҫсем пулнӑ. Паян вӑл пирӗн алла куҫрӗ. Мӗнле каламалла: халӗ ӗнтӗ вӑл ял мар, ялӑн вырӑнӗ ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Ҫурт-йӗрӗсем ҫунса пӗтнӗ, кӑмака мӑръисем ҫеҫ (ишӗлсе анайманнисем) тӑрна мӑйӗсем пек вӑрӑммӑн курӑнса лараҫҫӗ, ҫунса пӗтеймен пӗренесем тӗтӗм кӑларса выртаҫҫӗ. Кашни колхозникӗн панулми сачӗ пулнӑ, вӗсем те ҫунса пӗтнӗ. Ялта пӗр выльӑх-чӗрлӗх чунӗ те юлман, пурне те нимӗҫ оккупанчӗсем пуҫтарса хуса кӑйнӑ.

Ҫынсем те курӑнмаҫҫӗ. Ӑҫта саланса пӗтнӗ-ши вӗсем? Тен ҫынсене те нимӗҫсем пуҫтарса хӑйсемпе пӗрле илсе кайнӑши? Тен вӗлерсе пӗтернӗ пуль? Апла тесен виллисем курӑнӗччӗҫ.

Пӑхатпӑр, ҫунса пӗтеймен пӗренесем хушшинчен пӗр хӗрарӑм пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ:

— Вырӑссем-им эсир?—тесе хурлӑхлӑ сасӑпа ыйтрӗ вӑл пирӗнтен.

Эпир, хӗрарӑма курсан, ун патне пытӑмӑр. Унӑн пичӗ-куҫӗ чӗп-чӗрӗ юн, ҫийӗнчи кӗпи ҫуркаланса пӗтнӗ.

— Вырӑссем. Красноармеецсем эпир,—тет командир.

Хӗрарӑм савӑннипе кулса илчӗ:

— Эпӗ ӗнтӗ: эсир килместӗр пулӗ. Ҫаплипех вилме тивет, тесе, пӗтӗм шанчӑкӑма ҫухатнӑччӗ. Тавтапуҫах сире,—тесе ури ҫине тӑчӗ хӗрарӑм. Вӑл темшӗн аллисемпе сывлӑша хыпалать.

— Мӗн пулнӑ сана, инке?—тесе ыйтатпӑр.

Хӗрарӑм аллисемпе хӑлаҫланса, пирӗн паталла утма тӑчӗ, анчах пӗрене ҫине такӑнса йӑванса кайрӗ:

— Ах, куҫӑмсем курмаҫҫӗ ҫав ӗнтӗ манӑн. Ылханлӑ фашистсем мана сӗм суккӑр туса хӑварчӗҫ. Сассӑра илтетӗп те, хӑвӑра курмастӑп-ҫке.

Эпир ӑна аллинчен тытса ҫӗклесе тӑратрӑмӑр. Чӑнах, хӗрарӑмӑн икӗ куҫӗ те шӑтса юхнӑ. Куҫ шӑрҫи вырӑнӗсем пушӑ. Куҫхупанкисене ҫӗклесе пӑхать пулин те, ни-

мĕн те курмасть. Çутă тĕнче уншăн пĕтĕмпех тĕттĕмленнĕ. Унăн куçĕсем ĕнтĕ нихăçан та юсанас çук, çутă хĕвел те уншăн сĕм тĕттĕм. Вăл хăй пĕчĕк ача пек ĕсĕклесе йĕрет, анчах унăн куççулĕ тухмасть. Чĕри патĕнчен тарăхса тухакан сасси çеç вăл йĕнинĕ пĕлтерет тата вĕри сывлăшпа типнĕ тутисем çавна калаççĕ.

Кам-ха çак хĕрарăм? Мĕншĕн ăна фашист палачĕсем ĕмĕр-ĕмĕр асапланмалла туса хăварнă? Капла суккăрлантарса хăвариччен, вĕлернĕ пулсан тен уншăн çăмăлтарах пулнă пулĕччĕ?!

— Эпĕ хамăр ялта колхоз председателĕ пулса ĕçлеттĕм. Манăн икĕ ывăлăм тата упăшкам Хĕрлĕ Çара кайрĕç. Эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм... Мана халăх суйласа лартнă, халăх мана шаннă. Колхоз калама та çук пуянччĕ пирĕн. Иртнĕ çул ĕçкунĕ пуçне вуншар килограмм тĕштырă, пилĕкшер тенкĕ укçа валеçсе патăмăр. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнма пуçланăччĕ. Фашист оккупанчĕсем килсе пĕтĕмпех пĕтерчĕç. Хама суккăр туса хăварчĕç,—тесе пуçларĕ хĕрарăм хăйĕн сăмахне.

Вăл хĕрарăмăн хушамачĕ—Губанова, ячĕ—Елизавета. Ăна колхозниксем—Лизавета Егоровна,—тесе чĕнеççĕ.

Вăл çав тери хастарлă та тӳрĕ хĕрарăм пулнă. Ăна пурте юратнă. Вăл хушнине итленĕ.

— Лизавета Егоровна колхоз председателĕ çеç мар, вăл пирĕн питĕ те çывăх çын. Эпир вăл ертсе пынипе çапла ырлăхлă пурăнатпăр,—тесе мухтаннă колхозниксем. Вĕсем çак хĕрарăмшăн вутра çунма, шывра путма хатĕр пулнă. Анчах ялта Лизавета Егоровнăна курайман çын та пулнă. Çав çын ăна фашистсене сутнă. Çав тăшман пирки вăл халĕ çутă тĕнчене çухатнă, ĕмĕрлĕхе суккăр пулса юлнă. Мĕн каласан та, кашни çыннăн хăйне кура тусĕсем пур, çавăнтах тăшманĕ те çапкаланса çӳрет. Анчах вăл тăшман вăхăт çитиччен тискер кайăк пек пытанса пурăнать. Вăл хăй сурăх пек йăваш курăнсан та, вăхăт çитсен сурăх тирне хывса пăрахать те, кашкăр

тирне тăхăнса, асав шăлĕсемпе хире-хирĕç шаккаса, хăйĕн тискер ĕçне тума тытăнать.

Июнь уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр ирхине Пушово ялне фашистсен карательнăй отрячĕ пырса çитет. Отряд начальникĕ—офицер, вырăсла таса калаçма пĕлекенскер, тӳрех колхоз правленине пырса кĕрет:

— Калăр-ха, кам кунта сирĕн колхозра председатель пулнă?—тесе ыйтать вăл.

Правленинче Лизавета Егоровнăран пуçне тата икĕ колхозник лараççĕ. Пĕри—Сырцов Павел, тепри—Воронцов Сидор.

— Ара, ку нимĕç мар-çке, вырăс,—хăйсен хушшинче калаçса илеççĕ Сырцовпа Воронцов.

Лизавета Егоровна хăй председательне пытармасть:

— Эпĕ пулатăп председатель.

Офицер ун çине урлă та тăрăх пăхса илет:

— Аван. Халех колхозниксене пуçтар. Манăн вĕсемпе калаçмалли пур.

— Мĕн çинчен калаçасшăн апла?

— Вăл сан ĕç мар. Каланă сана пĕрре: колхозниксене пуçтар, тесе. Пуçтар!—кăшкăрса тăкать офицер сасартăк.

Лизавета Егоровна колхозниксене пуçтарма канцелярийинчен тухса каять.

Офицер Воронцова палласа илет:

— Сидор, эсĕ вĕт ку?

— Эпĕ, паллаймарăм-çке? Эпĕ сана нимĕç офицерĕ пулĕ тесе.

— Чăн, нимĕç офицерĕ. Анчах эпĕ нимĕç мар, вырăс. Астăватăн-и Брянцев улпута?

— Астумасăр. Епле астăвас мар хамăр хуçана. Ун патĕнче манăн атте приказчикра пурăнатчĕ,—тесе тавăрать Воронцов.

— Эпĕ унăн ывăлĕ—Сергей. Мантăн-им, пĕрле вылят-тăмăр? Эпĕ сана час-часах хĕнеттĕм. Вăрах вăхăт иртнĕ çав ĕнтĕ. Çирĕм çул ытла вĕт... Эпĕ сана акă пирвай курсах палларăм,—тесе тутисене саркалать офицер.

— Сергей Васильевич! Вашбродь! Пăх-ха, ăçтан тĕлпултăмăр! Вот савăнăç,—хĕпĕртет Сидор.

Офицерпа Воронцов пĕрне-пĕри алă парса паллашаççĕ.

— Сирĕн яла фюрер мана пачĕ. Халĕ ĕнтĕ эсир пурсăр та манăн пулатăр. Ан хăра, эпĕ сана, Сидор, ялта староста тăвăп. Эсĕ мана халăха ĕçлеттерме пулăшăн. Килĕшетĕн пулĕ?—тет офицер.

Воронцов шухăшласа тăмасть:

— Тавтапуç сана, вашбродь, мана пысăк ĕç шанса панăшăн,—тесе тавтăвать.

Сырцов Воронцовпа офицер калаçнине итлесе тăма пултараймасть, тухса шăвать.

Вĕсем иккĕн çеç юлса нумайччен калаçаççĕ. Малашне мĕн-мĕн тăвасси çинчен сăмах пĕтереççĕ.

Колхозниксем часах пуçтарăнман. Вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн çеç пынă.

— Колхозниксем нумайĕшĕ килте çук, уйра ĕçлеççĕ,—пĕлтернĕ Лизавета Егоровна.

— Аван, мĕн пуçтарăннипе çитĕ мана, ĕçлекенсем ĕçлеччĕр,—тет офицер.

Пуринчен ытла ватă стариксемпе карчăксем пуçтарăннă. Çамрăксенчен пĕр-икĕ çын анчах.

— Çамрăксем ăçта?—ыйтнă офицер, Лизавета Егоровна ине пăхса.

— Паллă ĕнтĕ, вĕсем пурте вăрçа кайса пĕтнĕ,—кĕскен ответленĕ Лизавета Егоровна.

Офицер колхозниксем умне тухса тăнă та сăмах калама пуçланă:

— Эсир мана паллаймастăр пулас-ха. Паллаттарас. Эпĕ Брянцев улпут ывăлĕ пулатăп,—Сергей Васильевич. Астăватăр-и?

— Чăнах та çавă, ашшĕ сăнлах. Каллех эпир вĕсен аллине çитсе лекрĕмĕр пулать-и? Пирĕн пĕтĕм пурлăх ăна пулать,—хăйсем хушшинче калаçса илчĕç колхозниксем.

— Вырăс çынни, епле-ха вăл нимĕç офицерĕ пулнă?— тесе хуллен ыйтнă пĕр ватă колхозница Лизавета Егоровнăран.

— Улпутсем вĕсем—пурте фашистсем майлă,—ăнлантарнă лешĕ ăна.

— Малашне ĕнтĕ колхоз, совет тенĕ япаласем пĕтрĕç. Паянтан пирĕн—нимĕçсен влаçĕ пуçланчĕ. Колхоз пурлăхĕ пĕтĕмпех манăн алла куçать. Эсир ĕçлетĕр, эпĕ уншăн сире тăрантарăп. Ăнлантăр-и?—тесе ыйтрĕ офицер.

Ăнланмасăр, пурте лайăх ăнланнă. Анчах ирĕк пурăнма вĕреннĕ çынсен пĕртте чура пулас килмен. Çапах та ăна вĕсем улпут умĕнче уçса каламаççĕ. Пĕр Лизавета Егоровна çеç хăраман. Вăл сиксе тăнă та:

— Пĕтĕм колхоз пурлăхĕ сана пулать-и? А пире— хресченсене—мĕскер?—офицер куçĕнчен тинкерсе пăхса ыйтнă вăл.

Офицер аллисене хире-хирĕç тытса йăваланă:

— Сире, хресченсене, нимĕн те кирлĕ мар. Эсир ĕçлетĕр. Эпĕ сире тăрантарăп. Ăнланмалла пек?

— Ăнланмалла та, пĕтĕмпех мар,—пÿлнĕ офицера Лизавета Егоровна.

Офицер урăх нимĕн те каламан, ун ырăнне Воронцов тухса тăнă.

— Мĕн ăнланмалла марри пур вара кунта?

Лизавета Егоровна Воронцов куçĕнчен пăхса илнĕ.

— Ара, эсĕ, Воронцов юлташ, часах урăх май кайса ÿкнĕ-çке?

— Вăл сирĕншĕн текех юлташ мар ĕнтĕ,—господин староста. Вăл хушнине итлес пулать. Унăн сăмахĕ сирĕншĕн—закон. Ку та ăнланмалла пек,—тенĕ офицер.

Çакна илтсен, пурте тĕлĕнсе кайнă. Воронцов çине чалăшăн-чалăшăн пăхса илнĕ.

„Сутăннă“,—тесе шухăшланă вĕсем.

Офицер урăх нумай калаçса тăман. Халăха саланма хушнă.

— Кам та кам мана хирĕç тăрать, уншăн ĕç начар пулĕ,—тенĕ вăл юлашкинчен.

Колхоз канцелярийинчен офицерпа Воронцов юнашар утса тухнă.

— Вăл хĕрарăма пăхăнтарас çук. Совет влаçĕшĕн çирĕп тăраканскер вăл,—тесе пĕлтернĕ Воронцов Лизавета Егоровна çинчен.

— Пăхăнтарăпăр. Пит пăхăнмасан, мĕн тăвасси паллă,—тенĕ офицер.

Лизавета Егоровна хăраса ӳкмен. Вăл Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе çирĕппĕн шанса тăнă.

— Пирĕн колхоз пурлăхĕ улпута ан пултăр тесен, ăна пĕтерес пулать. Кĕçĕр кам мĕн чухлĕ ĕлкĕрет—выльăх-чĕрлĕхсене ăсатăр, тырă-пулăсене пытарăр,—тесе пĕлтернĕ председатель колхозниксене.

Колхозниксем хăйсене ертсе пыракан хĕрарăма ĕненнĕ, ăна шаннă, вăл мĕн хушнине пурнăçланă: пĕр каçра колхоз выльăхĕсем темиçе пуç çук пулаççĕ, тырă та çавах çĕр айне пытанать.

Тепĕр кунне офицер Лизавета Егоровнăна хăй патне чĕнтернĕ:

— Колхоз выльăхĕсемпе тырри ăçта кайнă?

— Пĕлместĕп. Хале ĕнтĕ эпĕ мар, эсĕ хуçа. Хăна кирлĕ пулсан—сыхла,—тесе ответленĕ Лизавета Егоровна.

— Эпĕ—хуçа, эсĕ—манăн тарçă!—кăшкăрнă офицер.— Ман сăмаха итлемесен...

— Çук, эпĕ саншăн тарçă мар!—çирĕппĕн тавăрнă хĕрарăм.

Офицер хăйĕн салтакĕсене чĕнтернĕ:

— Ан вĕлерĕр. Пăхăнтарăр, çухалнă выльăхсене, тырăсене туптарăр,—тенĕ вăл.

Нимĕç салтакĕсем Лизавета Егоровнăна темиçе сехет хушши асаплантарнă. Лешĕ шăлне çыртса тӳснĕ. Выльăхсем ăçтине те, тырăсене пытарнине те пĕр сăмах та каламан.

— Лизавета Егоровна, кала, хăвнах çăмăл пулĕ,—пырса ӳкĕтленĕ ăна Воронцов.

— Çук, эпĕ нимĕçсен тарçи пулмастăп. Эсĕ вĕсене сутăннă йытă,—ответленĕ лешĕ.

Нимĕç оккупанчĕсем Лизавета Егоровнăна вĕлермен, унăн икĕ куçне те хĕртнĕ пăшатанпа тĕксе шăтарнă:

— Халĕ ĕнтĕ кăларса ярăр. Ыттисем курччăр ăна. Эпĕ вĕсене пăхăнма вĕрентем,—тенĕ офицер.

Куççăрланнă Лизавета Егоровна аллисемпе хыпашласа, урисемпе такăна-такăна урама тухнă.

— Колхозник юлташсем! Пуçтарăнăр ман патăма. Пăхăр ман çине. Мĕн турĕ мана çĕнĕ хуçа!—тесе кăшкăрнă вăл.

Колхозниксем хăйсен председательне курсан, тĕлĕнсе каяççĕ. Ăна ытала-ытала чуптăваççĕ.

— Пирĕн тар кăларса пуçтарнă пурлăх çĕнĕ хуçана ан пултăр! Колхоз витисене, кĕлечĕсене, сарайĕсене вут тĕртĕр. Çĕнĕ хуçана кĕлĕ çеç юлтăр!—тенĕ Лизавета Егоровна.

Çав каçхине вара пĕлĕт çине хĕрлĕ шевле ӳкнĕ. Колхоз ялĕнчен çĕнĕ хуçа валли кĕл тата çунса пĕтеймен вут пуççисем çеç тăрса юлнă.

— Лизавета Егоровна, ытти колхозниксем ăçта?—тесе ыйтатпăр эпир куççăр хĕрарăмран.

— Вĕсем пурте вăрмана тарса пытаннă,—тесе пĕлтерчĕ вăл пире.

Тепĕр çур сехетрен вăрмана тарса пытаннă колхозниксем пурте пирĕн пата пуçтарăнчĕç. Вĕсем, нимĕнсĕр тăрса юлнă пулсан та, Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе килнишĕн çав тери савăнаççĕ.

— Ан кулянăр, юлташсем! Хамăр тара кăларса пуçтарнă пурлăха хамăр алăпа пĕтертĕмĕр. Нимĕç оккупанчĕсене нимех те тивмерĕ. Совет влаçĕ сывă пултăр! Пурлăха ăна каллех тăвăпăр. Кивĕ ял вырăнне çĕнĕ ял шăтса тухĕ,—тесе ĕнентерет колхоз председателĕ Лизавета Егоровна. Вăл, нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешсе суккăрланнă пулсан та, шанчăкне çухатмасть. Кирлĕ пулсан, вилсе çĕр айне кĕриччен тăшманпа кĕрешме хатĕр.

1943 ç.

# КРАСНОАРМЕЕЦ САМСОНОВ

Пирĕн подразделенинче служить тăвакан красноармеец Ефим Григорьевич Самсонов çамрăк мар ĕнтĕ, хĕрĕхрен иртсе аллă çулсем енне çывăхарнă. Çÿçĕ те пĕрчĕ-пĕрчĕ шуралкаланă.

Ефим Самсонов турра ĕненекен çын. Вăл Хĕрлĕ Çар ретне килсен те măйĕнчи йĕс хĕресне пăрахман.

— Самсонов, мĕншĕн măйна ыраттарса çакса çÿретĕн çав чăх ури хĕресне?—тесе асăрхаттараççĕ ăна юлташĕсем.

— Сирĕн мĕн ĕç? Маншăн йывăр мар ăна çакса çÿресси. Мăя та ыраттармасть,—тесе ответлет вăл хирĕç.

Ефим Самсонов хăй каласа панă тăрăх, килĕнче пурăннă вăхăтра çынна пăшалпа персе вĕлерме мар, аллине çĕçĕ тытса, автана пусма та хăранă.

— Юн курсан, эпĕ тÿсейместĕп, чĕре кăкăртан çурса тухасла тапса сикет,—тет вăл.

— Автансене кам пусатчĕ апла?—тесе ыйтсан:—Арăм пусатчĕ. Така пусма кÿршĕ çынна чĕнеттĕм,—тет Ефим Самсонов

Халĕ ĕнтĕ Ефим Самсонов фронтра. Кунта нимĕçсемпе çапăçасси автан пусассинчен кăшт йывăртарах. Çын юнĕ те автан юнĕнчен кăшт нумайрах.

Пирвайхи çапăçуран Ефим Самсонов юнланмасăр тухрĕ. Вăл çапах та пĕр нимĕç салтакне персе вĕлернĕ. Ăна епле вĕлерни çинчен вăл юлташĕсене темиçе хутчен те кала-кала пачĕ. Малтанах итлекелерĕç унăн сăмахне, кайран вара никам та итлеми пулчĕ. „Иккĕмĕш хут наступленине кайсан нумайрах вĕлерме тăрăшас", тесе шухăшларĕ Самсонов хăй тĕллĕн.

Иккĕмĕш хут наступленине кĕрсен, Ефим Самсонов пĕр нимĕç салтакне те персе ĕлкĕреймерĕ, ăна хăйне суранларĕç. Вăл пĕр вăхăта ăнсăр пулса выртрĕ. Нумай-и, сахал-и вăхăт иртсен, тăна кĕчĕ. Куçĕсене уçса пăхрĕ: аллисем чĕп-чĕр юн, çăварне юн кĕвелсе ларнă,

чĕлхи те юн. Хăйĕн юнне курсан, вăл тем пек хăраса ӳкрĕ. Чуть хаяр сассипе кăшкăрса яратчĕ. Анчах унран инçе мар нимĕç мини ухлатса çурăлчĕ. Ефим хăй юнланнине пăхмарĕ, вăл вырăнтан тăрса, пĕр пĕчĕк окопа хĕсĕнкелесе кĕрсе выртрĕ.

„Ах, турă, мĕнле çăлăнас ку хăрушлăхран?"

Халĕ ĕнтĕ вăл хăйĕн юнĕ çине хăрамасăр пăхать. Унăн мĕнле те пулин чĕрĕ юлас килет. Вăл халĕ хăйĕн пĕтĕм иртнĕ пурнăçне—ачаран пуçласа паянхи кунччен—асне илчĕ. Арăмĕ, ачи-пăчисем унăн куçĕ умне тухса тăчĕç.

— Самсонов, сыхлан! Нимĕç танкĕ килет!

Самсонов кам кăшкăрнине уйăраймарĕ. Пуçне çĕклесе пăхрĕ. Йĕри-тавра никам та курăнмасть. Сывлăш анчах уласа тăрать. Унта та кунта мина, снаряд çурăлать. Таврана хура тар тĕтĕмĕ хупласа илнĕ. Тар тĕтĕмĕ шăрши сывлăша хуплать. Пурнăçăн чи хăрушă вăхăчĕ çитрĕ. Кам кăшкăрчĕ ăна „Сыхлан" тесе? Самсонов пĕлмест. Хамăрăннисем те курăнмаççĕ. Нимĕç салтакĕсем те çук. Тен вăл тыткăна тăрса юлнă? Ку ĕнтĕ уншăн вилĕмрен те хăрушă: „Фашистсен аллине лекинчен, хама-хам персе пăрахам. Çăмăлтарах пулĕ. Вĕсен аллине лексен тем тĕрлĕ асаплантарĕç. Ыйтса тĕпчĕç. Эпĕ пĕр сăмах та чăннине каламăп. Куншăн пурĕ-пĕрех персе пăрахĕç, тесе шухăшлать вăл. Турра кĕлтăвать. Пуçĕнчи пилоткине хывмасăрах сăхсăхать. Сасартăк танк кĕрлесе килни илтĕнчĕ. Вăл окоп шăтăкĕнчен çĕкленсе пăхрĕ. Курать: нимĕç танкĕ. Тӳрех ун çинелле шăвать. Акă тата темиçе минутран вăл танк хăйĕн гусениципе Самсонова лӳчĕркесе иртсе кайĕ. Çук. Самсоновăн танк айне пулса вилес килмест. Вăл хăй выртнă вырăна пăрахса, урăх тĕлелле шăвать. Акă, унăн умĕнче П. Т. Р. (танка хирĕç перекен пăшал) выртать. Пăшалпа пĕрле патронсем те пур. Самсонов вăрах шухăшласа тăмасть. П. Т. Р-а ярса тытать те, авăрласа, нимĕç танкĕ çинелле тĕллесе перет. Пĕр патрон, иккĕ. Виççĕмĕш патронпа персен, танк пĕр вы-

рӑнта ҫаврӑнса илет: „А-а-а... кирлӗ вырӑнтан лектертӗм“, савӑнӑҫлӑн каласса илет Самсонов. Унтан каллех танк ҫине перет. Танка вут хыпса илет, ҫулӑмланса ҫунать. Танк ӑшӗнчен нимӗҫ танкисчӗсем 3 ҫын тухаҫҫӗ.

— Стой! Парӑнӑр!—хаяр саспа кӑшкӑрса ярать Самсонов. Ури ҫине сиксе тӑрать. Нимӗҫ танкисчӗсенчен пӗри пӑрахса тарать. Иккӗшӗ парӑнса аллисене ҫӗклеҫҫӗ. Самсонов таракан фрица персе пӑрахать.

— Ман паталла килӗр!—кӑшкӑрать аллисене ҫӗкленӗ танкистсене. Лешсем ӑна пӑхӑнса ун патнелле утаҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра Самсонов патне взводнӑй командир пырса ҫитет:

— Ну, молодец, Самсонов! Эсӗ килӗнте автан пусма хӑйман пулсан, фронтра фашист салтакӗсене персе пӑрахма маҫтӑрланса ҫитнӗ,—тесе мухтать ӑна командир.

— Совет Союзӗшӗн служить тӑватӑп!—тесе ответлет Самсонов. Хӑйӗн алли суранланнипе пичӗ-куҫӗ чӗп-чӗрӗ юн. Халӗ ӗнтӗ вӑл хӑйӗн ҫийӗнчи юнне те курмасть. Юн ҫинчен шухӑшлама та маннӑ.

— Самсонов юлташ, санӑн кӑкӑру ҫинче темӗн ҫитменлӗх пур,—тет командир юптарса.

Самсонов хӑй тӑрӑх пӑхать. Вӑл хырӑмӗпе шуса ҫӳренӗ пирки гимнастёркин тӳмисем татӑлса пӗтнӗ, ҫавӑнпа ҫухи уҫӑлса кайнӑ та, ӳчӗ курӑнать.

— Гимнастёркӑн тӳмисем татӑлса пӗтрӗҫ ҫав. Эпӗ вӗсене халех ҫӗлесе лартатӑп,—тесе тӑрать Самсонов айӑплӑн.

Лейтенант йӑл кулать:

— Эпӗ гимнастёрка тӳмисем ҫинчен мар калатӑп; санӑн кӑкӑру ҫине орден ҫакмалла, тетӗп.

Самсонов чухлать. Хӑй те сисмест, тутисем кулаҫҫӗ.

1943 ҫ.

# ПĂЛАН ХЫÇÇĂН

Лейтенант Павел Щипцов Хĕрлĕ Çара киличчен „Çамрăк большевик" хаçатра ĕçленĕ. Халĕ вăл фронтра. Темиçе хутчен те çапăçура пулнă.

Павел Щипцов рота командирĕн помощникĕ пулса ĕçлет, фашистсемпе çапăçать. Тăшмана пĕтĕм чунĕнчен кураймасть. Çакăн пек командирсемпе чухне нимĕнле хаяр тăшман та хăрушă мар.

Пĕринче, çуллахи вăхăтра, Щипцов юлташ пилĕк боецпа пĕрле разведкăна кайрĕ. Ăна „чĕлхе" туянса килме задани панă. Задача çăмăл мар. Анчах мĕнле йывăр пулсан та ăна пурнăçа кĕртесех пулать.

— Ну, юлташсем, пирĕн ума лартнă задачăна пурте лайăх ăнланатăр-и? — ыйтрĕ Щипцов хăйпе пĕрле разведкăна пыракан боецсем çине пăхса.

— Ăнланатпăр, лейтенант юлташ, — ответлерĕç боецсем.

Вĕсем автоматсемпе хĕçпăшалланнă. Пилĕкĕсем çумĕнче тăватшар граната. Боецсем пĕринчен тепри хастаррăрах. Вĕсем разведкăра пуçласа мар, темиçе хутчен те пулнă.

Вăрмана кĕрсен вĕсем виçшерĕн икĕ ушкăна уйрăлчĕç.

— Астăвăр, юлташсем, мĕнле пулсан та пăшал сасси ан кăларăр, — тесе çирĕплетрĕ лейтенант Щипцов боецсене.

— Есть, лейтенант юлташ!

Вăрман урлă каçсан, вĕсен уя тухмалла. Çакăнта ĕнтĕ фашистсем çирĕпленсе ларнă. Вĕсем кунта иккĕмĕш хĕле кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Кăнтăрла шăпах. Çĕрле пулсан çеç ĕç пуçланать. Пуртă, пăчкă, тимĕр шанкăртатнă сасăсем илтĕнеççĕ. Вĕсем унта хăйсене валли йăвасем — блиндажсем, дзотсем тăваççĕ.

Разведчиксем сыхланса, унталла-кунталла пăхкаласа утаççĕ. Ку вырăнта вăрман çавтери çăра, йывăçĕсем çӳлĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе хĕвел те курăнмасть. Вăрман айĕ вара таса: курăк та сайра, турат-тĕретсем те çукпа пĕрех.

Каçала суланчĕ. Хĕвел анасси те инçе мар. Вăрман сайрала пуçларĕ.

— Чарăнар, юлташсем. Хĕвел анса тĕттĕм пуличчен тăхтар çакăнта. Фашист салтакĕсем йывăç касма килеççĕ ĕнтĕ ку вырăна. Ав, куратăр-и, малта касса йăвантарнă йывăçсем курăнаççĕ? — терĕ лейтенант Щипцов.

Боецсем пурте пуçтарăнчĕç. Никам курмалла мар вырăна тупса, пытанса ларчĕç. Лейтенант Щипцов пĕр боеца хăйпе пĕрле илчĕ те пĕр аллă метр маларах тухса ларчĕ.

— Манран приказ пулмасăр никамăн та вырăнтан хускалма юрамасть, сасă ан кăларăр. Табак туртас пулсан, шинельпе пĕркенсе çеç туртăр. Фашист салтакĕсем нумайăн курăнсан, ан тапăнăр, пĕччен е иккĕн пулсан, чĕрĕлле тытса илме тăрăшăр. Ăнлантăр-и? — терĕ Щипцов.

— Ăнлантăмăр!

Хĕвел çĕрпе пĕлĕт хушшине хĕсĕнсе анать. Çил лăпланчĕ. Вăрман шăп. Йывăç çулçисем те хускалмаççĕ. Анчах вăрманта тĕрлĕ кайăк юрланипе сад пахчинче ларнă пек туйăнать. Эх, илемлĕ те вăрманĕ, вăрманĕнчен ытла кайăк-кĕшĕк сассисем савăнтараççĕ! Фашистсем, çавтери илемлĕ вăрмана касса, савăнăçлă кайăк-кĕшĕксене пистересшĕн.

Сасартăк инçе те мар курăк чăштăртатни илтĕнчĕ. Щипцов каска урлă çĕкленсе пăхрĕ. Курать: хăйĕнчен инçех те мар, ĕне евĕрлĕ выльăх тăрать: „Мĕнле выльăх ку?“ Халиччен вăл кун пек ĕне курман, кунăн мăйракисем çур метр тăршшĕ чаркаланса тăраççĕ, кашни мăйраки виç-тăватă юплĕ.

— Ибрагимов, пăх-ха, мĕнле выльăх ку? Паллатăн-и эсĕ? — тесе хуллен пăшăлтатса ыйтрĕ Щипцов хăйпе пĕрле ларакан боецран.

Боец Ибрагимов Пушкăрт республикинче, Урал тăвĕсем хушшинче ӳснĕ çын. Сунарçă. Тĕнчери нумай тĕрлĕ кайăксене паллать. Çавăнпа та вăл мăйракаллă выльăха курсанах чĕтресе ӳкрĕ:

— Пăлан ку, лейтенант юлташ, пăлан. Персе вĕлерес ăна, — терĕ вăл автоматне тытса пеме тĕллесе.

Пăлан хăйĕн умĕнче çын пуррине сисрĕ пулас, тепĕр еннелле çаврăнса тăчĕ, мăйракисене лăпчăтса ĕнси çине хучĕ, тарма хатĕрленчĕ.

— Чарăн, ан пер! Пăлан тесе пĕтĕм ĕçе пăсас тетĕн-им эсĕ! — чарчĕ ăна Щипцов.

Ибрагимов кăмăлсăр пек пулса, автоматне аялалла кăнтарчĕ. Пăшал сасси кăларма юраманнине хăй те астуса илчĕ пулас.

— Эх, вăхăтсăр килсе çитрĕ ку выльăх! Сахалтан та пилĕк пăт аш пулатчĕ. Çулталăк ытла вĕт ĕнтĕ пăлан какайне çисе курманни, — тесе шеллерĕ Ибрагимов.

Пăлан ик-виçĕ хутчен малалла сикрĕ те татах чарăнса тăчĕ. Вăл пĕр малалла, пĕр хыçалалла йăлт-ялт çаврăнкаласа пăхать. Уншăн малта та, хыçалта та, йĕри-таврах çынсем пур пек туйăнать. Çавăнпа вăл ниçталла тарма аптăраса тăрать.

Сунарçă Ибрагимов пĕтĕм ӳтпĕвĕпе сиксе чĕтрет. Унăн халех пăлана персе ӳкерес килет. Ним тăвайман енне аллинчи автоматне тĕрлĕ май çавăркаласа пăхать.

— Лейтенант юлташ, пеме ирĕк пар. Эпĕ ăна пĕр пульăпа ӳкеретĕп. Тупата ӳкеретĕп, — тесе йăлăнать вăл.

— Чарăн! Каланă сана пеме юрамасть, — тесе чарать ăна Щипцов.

Сасартăк пăшал сасси ухлатса кĕрлерĕ. Пăлан ик-виçĕ хутчен пĕр вырăнта çӳлелле сиксе илчĕ те, çавăнтах çĕре чăсăлса выртрĕ.

— Ы-ых, мĕншĕн петĕн?! Пĕтĕм ĕçе пăсрăн вĕт эсĕ! Куншăн сана...— хыттăн вăрçса тăкрĕ Щипцов Ибрагимова.

Леш нимĕн ăнланаймасăр тăрать:

— Çук, лейтенант юлташ, эпĕ пемерĕм. Ĕненмесен, акă, пăх автомат кĕпçине. Тап-тасах. Ăна леш юлташсем печĕç пулĕ...

— Ну, вĕсене! — ним тума пĕлмесĕр çилленет Щипцов.

Хăйсенчен аллă хăлаçра пăлан вилеймесĕр урисемпе тапкаланса выртать, пуçне çĕкле-çĕкле çапать,

Пăлана персе ўкерниле савăннă Ибрагимов: „Мана пеме ирĕк памасан та, юлташсем персе ўкерчĕç-ха. Пăлан ашне çиетпĕр ĕнтĕ“, тесе шухăшлать.

Унччен те пулмасть, пăлан патне икĕ фашист салтакĕ чупса пыраççĕ.

— А-а... ав, камсем пенĕ пăлана, — тин чухласа илет Щипцов. Халĕ ĕнтĕ вăл фашист салтакĕсене мĕнле майпа тытса илесси çинчен шухăшлать.

— Ибрагимов, хăвăрт юлташсем патне упален. Пурте кунта килччĕр, — хушать Щипцов.

Ибрагимов, пĕр самахсăр, йывăççен хушшипе хырăмĕпе шăвать.

Фашистсем пăшалсене йывăç çумне тăратса хураççĕ те пăлан тирне сўме хатĕрленеççĕ.

Лейтенант Щипцов фашистсем пăлан тирне сўни çине пăхса тăрать. Халĕ ĕнтĕ вăл вĕсене пĕр пĕччен те тытса илĕ, анчах тата кăшт тĕттĕм пуласса кĕтет, мĕншĕн тесен вĕсене тытнă вăхăтра мĕнле пулсан та шăв-шав пулма пултарать. Вăхăт шăвать, боецсем час килеймеççĕ. Фашист салтакĕсем ним васкамасăр пăлан тирне сĕвеççĕ. Нимĕнрен шикленмесĕр тенĕ пек, иккĕшĕ пакăлтатса калаçаççĕ: „Вырăс планне тытрăмăр. Ашне хамăр çийĕпĕр, тирне арăмсем патне кучченеç ярăпăр“, теççĕ пулас. Вăхăт-вăхăт кулса та илеççĕ. Савăнăç вĕсемшĕн. Акă боецсем çитрĕç.

— Эсир тăваттăн хыçалтан çаврăнса пырăр, эпир Ибрагимовпа мала тухатпăр, — терĕ лейтенант Щипцов.

Фашистсем пăлан тирне сўсе пĕтерчĕç. Канма ларчĕç. Папирос чĕртсе туртаççĕ. Çийĕнчи гимнастеркисене юнпа вараланасран хывса пăрахнă. Кĕпи çаннисене чавса таран тавăрнă. Алли тунисем чĕп-чĕр юн. Инçетрен пăхсан, чăн-чăн палачсем пек туйăнаççĕ.

— Стой! Вырăнăртан ан хускалăр! — ытла хытах та мар кăшкăрчĕ лейтенант Шипцов.

Фашистсем мĕнле ларнă, çаплах хытса кайрĕç. Умĕсенче икĕ çын, хыçалта тăватă çын тăнине курчĕç. Çăварĕсенчи папиросĕсем çĕре тухса ӳкрĕç.

— Кам ирĕк панă сире вырăс çĕршывĕнчи пăлана вĕлерме?—терĕ Щипцов фашист салтакĕсем умне пырса тăрса. Хăраса ӳкнĕ салтаксем ăнланмалла мар пăк-пак туса калаççа илчĕç.

— Ну, илĕр хăвăрăн гимнастĕркăрсене. Айтăр пирĕнпе пĕрле, — тесе команда пачĕ Щипцов.

— Пăлан ашне илетпĕр-и? — ыйтрĕ Ибрагимов.

— Илес. Мĕншĕн хăварас ăна? Фашистсем тытрĕç. Эпир ашне çийĕпĕр, — хушрĕ Щипцов.

Тăватă боец пилĕк çăтлă пăлан ашне, тирне йăтрĕç, лейтенант Щипцовпа Ибрагимов фашист салтакĕсене хуса утрĕç.

— Ак, епле телей пулчĕ, ку фашистсем пирĕн алла пăлан хыççăн килсе лекрĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн алăра „чĕлхе" те пур. Апат пĕçерме аш та çителĕклĕ, — тесе утать Ибрагимов.

1942 ç.

## ТУ ВИТĔР...

Капитан Волгин хăйĕн отрячĕпе нимĕç войскисенункине тăрса юлнă. Тепĕр хăравçăрах çын пулсан, тахçанах тыткăна парăннă пулĕччĕ. Анчах капитан Волгин ун пек çын мар, вăл фашистсен аллине чĕррĕн лекме килĕшмен. Парăнма çеç мар, — хирĕç çапăçнă, тăшман ункинчен тухса хăтăлма тăрăшнă. Çапăçа-çапăçа малалла кайма çул хывнă. Юлашкинчен капитан хăйĕн 23 çынлă отрячĕпе икĕ ту хушшине çитсе кĕнĕ. Çакăнта Волгин темиçе кун хушши çапăçса ывăннă юлташĕсене пăртак кантарма шут тытнă:

— Ну, юлташсем, çак тусем хушшинче пире пĕр вăхăта хăрушах мар-ха, канар, çисе апатланар. Унтан каллех малалла кайăпăр, — тенĕ вăл боецĕсене.

Ик-виçĕ кун хушши выçăлла-тутăлла пурăннă крас-

ноармеецсем хĕпĕртенĕ. Вĕсем апат хатĕрлеме пикеннĕ. Апачĕ те ĕнтĕ вĕсен мĕн — кашни çын пуçне пĕрер татăк сухари, 23 çынна — виçĕ банкă консерва çеç юлнă. Çавсене çисе пĕтерсен, урăх нимĕн те пулман. Виçĕ банкă консервăран яшка пĕçернĕ. Унтан апатланнă. Хăшĕсем канма тесе те выртнă.

Хăй, Волгин, темиçе çĕр çывăрман пулсан та вырт-ман-ха. Вăл канакан юлташĕсенчен кăшт аяккарах пăрăннă та, шухăша кайса ларнă.

„Çимелли продуктсем пĕтсе çитрĕç. Яла кĕрсе çимелли илме çук, унта фашистсем. Сахал шутласан та, 70 — 80 километр каймалла". Çаксене шухăшласа вăл картă çине пăхнă. Анчах çĕнĕрен нимĕн шухăшласа тупма та пултарайман.

Сасартăк каллех умра та, хыçалта та фашистсем курăннă. Вĕсем Волгин отрядне çак икĕ ту хушшинче çавăрса илсе пĕтерме шутланă.

Капитан Волгин çывăракан красноармеецсеневаскасах вăратнă:

— Юлташсем, хăвăртрах тăрăр! Пирĕн таврара каллех фашистсем! — кăшкăрнă вăл.

Красноармеецсем сике-сике тăрса, хĕçпăшалĕсене ярса тытнă, фашистсемпе çапăçма хатĕрленнĕ.

— Питĕ лайăх тĕллесе çеç перĕр. Патронсене сая ан ярăр, мĕншĕн тесен патронсем сахал. Кашни пуля фашиста пĕтертĕр, — тесе приказ панă Волгин.

Фашистсем икĕ ту хушшине тупăсемпе винтовкăсенчен вĕри тăхлан çăмăрĕ çутарнă.

Йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ Хĕрлĕ Çар отрячĕ ниçталла та хусканма пултарайман. Унăн çулне фашистсем пур енчен те пӳлсе хунă. Мĕн тăвас? Пурнăçăн юлашки минучĕсем çитнĕ пек туйăннă. Хăшпĕр красноармеецсем пĕтĕмпех шанчăкĕсене çухатнă:

— Çапăçса çитрĕ пулĕ. Çак икĕ ту хушшинчех ĕнтĕ пирĕн вилĕм пулать. Фашистсен ункине ниçтан та татса тухма çук, — тесе пăшăрханнă.

Анчах та капитан Волгин ĕмĕтне çухатман. Вăл юлашки çын юлмиччenех фашистсемпе çапăçма шутланă. Вилĕмĕ çинчен шухăшлама маннă. Снарядсем, пульăсем çăмăр пек çунă хушăрах коммунистсене пĕр çĕре пуçтарнă.

— Ну, коммунист юлташсем, эсир мĕн шутлатăр? Вилме-и, е юлашки юн тумламĕччен кĕрешме? Отрядри хăшпĕр красноармеецсем ĕмĕчĕсене татнă,—тенĕ вăл парти членĕсем çине сăнаса пăхса.

Тăватă коммунист пурте пĕр пекех ответленĕ:

— Капитан юлташ, эсĕ пирĕн командир. Эсĕ ху мĕнле шутлатăн—эпир те çаплах. Санран юлмастпăр. Вилсен те—пĕрле, чĕрĕ юлсан та—пĕрле. Анчах фашистсен аллине чĕррĕн парăнмастпăр...

Капитан Волгинпа отрядри тăватă коммунистăн шухăшĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлми çирĕп пулнă.—Çапăçупа çеç вилĕме çĕнтерме пултаратпăр эпир, çапăçупа çеç çак тусем хушшинчен çăлăнса тухма та пултаратпăр,—тенĕ вĕсем.

Коммунистсем çапла калаçнине партире тăман красноармеецсем те итлесе тăнă. Пĕрин хыççăн тепри капитан Волгин патне пыма пуçланă:

— Капитан юлташ, эпĕ те сирĕнпе пĕрлех. Мана та коммунистсен партине илĕр,—тенĕ вĕсем.

Çапла вĕсем, 23 çын, вилĕмле хăрушлăх умĕнче пĕрлешсе пурте коммунистсен парти ĕретне кĕнĕ.

— Халĕ ĕнтĕ, юлташсем, пирĕн çак умри тусенчен пĕрин витĕр тухас пулать, унсăрăн эпир хăтăлма пултараймастпăр. Куратăр-и, фашистсем пире выçă аптăратса чĕррĕн тытса илме шутлаççĕ,—тенĕ Волгин.

— Мĕнле майпа ту витĕр тухăпăр-ха эпир?—ыйтнă боецсем.

— Чавса,—кĕскен ответленĕ Волгин.

— Чавса?!.. Çимелли апат та çук-çке-ха пирĕн. Çимесĕр епле ĕçлĕпĕр?—тĕлĕннĕ красноармеецсем.

— Вăй пур таран ĕçлĕпĕр. Малалла унта куç курĕ. Халлĕхе эпир выçă мар-ха,—тесе паттăрлатнă капитан.

Вĕсен хăйсемпе пĕрле виçĕ тимĕр кĕреçе, пĕр киркамс ыга пулнă. Çаксем вĕсене нумай пулăшнă.

Фашистсем ту хушшине тăтăшах персе снарядсем, пульăсем тăкнă. Анчах вĕсем коммунистсене сиен кӳреймен, мĕншĕн тесен вĕсем çĕре чавса текех ту айнелле кĕнĕ. Çынсем ывăнма пĕлмесĕр чакаланнă: пĕрисем ĕçленĕ, теприсем тăшман пырасран хуралта сыхласа тăнă. Фашистсем персен-персен, пĕр вăхăта лăпланнă:

— Рус! Ирĕклĕн парăн. Унсăрăн пурĕ-пĕрех пĕтеретпĕр,—кăшкăрнă вĕсем.

Ту хушшинчен сасă илтĕнмен. Унта никам çук пекех туйăннă. Чăнах та ĕнтĕ никам та курăнман. Пурте ту айне тарăнăн чавса кĕрсе кайнă. Шахта стволĕ пек шăтăк умĕнче икĕ çын çеç хурал тăнă. Вĕсем те курăнман, çĕр шăтăкĕ анинче, хӳтлĕхре тăнă. Çĕр шăтăкне тĕрлĕрен çатракапа хупласа, çын асăрхамалла мар тунă.

Ту хушшинчен сасăсем илтĕнменнипе фашистсем—вырăссене пĕтертĕмĕр, тесе шутланă. Тĕплĕн пĕлесшĕн пулса икĕ салтакне разведкăна янă. Вĕсем шăппăн йăпшăнса пырса йĕри-тавра пăхкаланă. Анчах ниçта пĕр çын виллине те курман. Юн таврашĕ те курăнман. Нимĕç разведчикĕсем ним пĕлмесĕрех каялла таврăннă.

— Ту хушшинче пĕр чĕрĕ вырăс та, виллисем те çук, çĕр çинче юнĕсем те курăнмаççĕ,—тесе пĕлтернĕ вĕсем хăйсен начальствине.

Фашистсем аптăраса ӳкнĕ. Тĕлĕннĕ. Ăçта вырăссем? Ту хушшинчен тухса кайма çук. Тухма пултарас вырăнсене пурне те пӳлсе илнĕ. Ку мĕне пĕлтерет?! Тен вĕсем самолётпа вĕçсе кайнă?! Апла тесен те ĕненме çук. Ту хушшине самолёт аннине те, вĕçсе кайнине те курман. Нумай снарядсем, минăсем ӳкнипе ту хушшинчи çĕр пичĕ темле пысăк сысна чаваласа тухнă пекех курăннă. Çавăнпа коммунистсем ту айне чавса кĕрсе кайнă шăтăк ани те паллă пулман. Пысăк снаряд ӳксе тарăн шăтăк тунă евĕр çеç курăннă вăл çатракасем хушшинче. Фашистсем çавна та чухлайман.

Юлашкинчен фашист салтакĕсем тĕрлĕ енчен ту хушшине аннă. Вĕсем вырăс салтакĕсене пĕрине те пулин е чĕрĕлле, е виллине курма шутланă. Анчах никама та курман. Аптăранипе пурте пĕр вырăна пуçтарăнса тăнă та темĕн канашланă. Çак вăхăтрах, фашистсем кĕтмен çĕртен, икĕ пулемёт харăс:—тра-та-та-та!—калаçа пуçланă.

Кĕпĕрленсе тăракан фашист салтакĕсем çулса тăкнă пек çĕре йăванна. Кăшкăрашу пуçланнă. Чĕрĕ юлнисем ăçталла май килнĕ—унталла тарнă. Ту хушшине 50—60 фашист салтакĕн вилли выртса юлнă. Вĕсен çумĕнче хĕçпăшал та, çимелли апатсем те пулнă.

Капитан Волгин фашистсен хĕçпăшалĕсене тата çимелли продукчĕсене пуçтарса илме хушнă:

— Акă, юлташсем, куратăр-и: пире çимеллисене нимĕçсем хăйсемех кӳрсе пачĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн патрон та çителĕклĕ,—тесе савăнтарнă вăл хăйĕн боецĕсене.

Çисе тăраннă хыççăн, коммунистсем пĕр иккĕленмесĕр ĕçленĕ. Ту айĕнчи шăтăк çаплипех малалла чавăннă, çынсем ту витĕр часрах шăтарса тухма васканă. Пĕринчен пĕри ăмăртса ĕçленĕ. Ăшша пиçнипе пуçĕсенчен пăс палканă, питçăмартисем тăрăх тар юхнă. Вĕсене ватă коммунист Илюшин, Çĕпĕрти пĕр шахтăра забойщик пулса ĕçленĕскер, шăтăка чавнă çĕрте тимлĕн ертсе пынă.

— Кунти тăпрана чавасси мĕн вăл? Эпĕ ĕлĕк, кайлопа чавса, катăлман çĕркăмрăкне пĕр пĕччен кăна сменăра икшер метр тарăнăшĕ чаваттăм... Эпир кунта 23 çын. Кашни çын пуçне икшер метр чавсан—мĕн чухлĕ пулать вăл? Шутлăр-ха эсир,—тенĕ вăл хăйĕн юлташĕсене.

— Ăна çеç шутлама пĕлетпĕр-çке ĕнтĕ. Чылай çĕре шăтаратпăр...

— 46 метр? Пирĕн ку ту витĕр тухма 325 метр тăршшĕ чавмалла. Миçе кун хушшинче чавса тухма пултаратпăр? Ăна пĕлетĕр-и?..

— Ха-ха-ха! Вăт математик тупăннă...Пурне те шутласа пар ăна,—тенĕ юлташĕсем хыттăнах кулса ярса.

Чимĕр-ха, ан кулăр. Эпĕ миçе кунра чавса тухасса та лайăх пĕлетĕп. Эпĕ сиртен ыйтатăп, эсир пĕлетĕр-и?— çиленерех парса кăшкăрса ыйтнă Илюшин.

— Миçе кунра? Çичĕ кунран...—тесе ответленĕ пĕри.

— Çук, çичĕ кун сахал...

— Санăн шутупа миçе кун кирлĕ апла?

— Манăн шутпа-и? Вунă кун кирлĕ пулать.

Мĕншĕн тесен, ту айне шалалла кĕнĕçемĕн ĕç йывăрлансах пырать. Тăпрана чавасси вăл йывăр мар, чавнă тăприне хыçалалла кăларасси инçеленет. Пирĕн вĕт кунта тăпрана тиесе турттарма, шахтăри пек вагонеткăсем çук, носилкăпа йăтатпăр. Çакă пирĕн ĕçе малалла чăсать,— тесе ăнлантарнă ватă шахтĕр Илюшин.

Юлташĕсем Илюшин сăмахне ĕненнĕ:

— Илюшин юлташ, эсĕ инженер пекех пĕлетĕн.

— Инженер мĕн мана? Эпĕ хамшăн хам инженер. Вунпилĕк çул хушши шахтăра ĕçленĕ. Чухлатăп,—тесе кăштмухтаннă Илюшин. Вăл ту айнелле миçе метр чавса кĕнине метрпа виçсе мар, куçĕсемпе пăхсах пĕлнĕ.

Капитан Волгин Илюшин çине хăй çине шаннă пекех шаннă, ăна хисепленĕ. Ашшĕ выранне шутланă:

— Илюшин тете, паян миçе метр чакаларăмăр? Тата миçе метр чавмалли юлчĕ? Миçе кунран шăтарса тухатпăр,—тесе ыйтнă.

— Ан кулян, капитан юлташ. Вăхăт çитсен тухăпăр, халĕ ĕнтĕ пире фашистсем илеес çук. Эпир вĕсенчен инçетре—ту айĕнче,—тесе лăплантарнă ватă шахтĕр.

Çынсем пурте харăс, тăрăшса ĕçленипе кунсем, çĕрсем иртнине те туйман. Вĕсен пĕтĕм ĕмĕчĕсем: ту витĕр хăвăртрах тухса каясси пулнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем фашистсен аллинчен хăтăласса пĕр иккĕленмесĕрех ĕненнĕ. Вĕсемпе пĕрле вилĕмрен хăрама пĕлмен командир, коммунист—капитан Волгин пулнă. Унăн шанчăкĕ ватă шахтĕр—коммунист Илюшин, парторг,—вĕсемпе пĕрле, юнашар тăрса ту айĕнчи çĕре чавнă.

— Йывăрлăхран хăрас пулмасть,—йывăрлăха хирĕç

кĕреш! Вăл санран хăй хăраса тартăр,—тесе хавхалантарнă Илюшин çамрăк коммунистсене.

Ту айĕнче 23 çын—вырăс паттăрĕсем—тăпрапа, чулсемпе кĕрешнĕ. Ту тăрринче темиçе çĕр фашист салтакĕсемпе офицерĕсем çав çирĕм виçĕ паттăра пĕтерме сыхласа тăнă. Анчах пĕрне те курма пултарайман. Ту хушшине тепĕр хут анса вырăссене шырама хăранă. Унта ансанах вĕсене курăнман вырăссен пулемĕчĕ çулса тăкнă. Тепĕр енчен тата фашистсем вырăс паттăрĕсене выçă вилсе пĕтĕç тесе кĕтнĕ.

— Сисетĕр-и, юлташсем, фашистсем пирĕн пуç тăрринче утса çӳреççĕ. Эпир вĕсен урисем айĕнчен тухса таратпăр. Нимĕн те тăвайманççĕ ак,—тесе савăнтарнă Илюшин хăйĕн юлташĕсене.

Кунĕн-çĕрĕн çывăрмасăр, выçăллă-тутăллă ĕçлесе ывăннă çынсем харăс ахăлтатса кулнă:

— Чăнах та вĕт! Фашистсем пирĕн пуç çинче утса çӳреççĕ, çапах та пире курмаççĕ. Эпир миçе çын иккенне те пĕлмеççĕ,—тенĕ вĕсем.

Пирĕн паттăрсем сакăр кун ĕçленĕ. Нимĕçсенчен тытса илнĕ ĕçме-çимеллисем те пĕтсе çитнĕ. Ту айнелле мĕн чухлĕ шалалла кĕнĕ, çавăн чухлĕ ĕç йывăрланса пынă. Шăтăк тĕпĕнче сывлăш та йывăрланнă. Çынсем тăрăх шăпăртатса тар юхнă. Хăшпĕр сывлăхсăртараххисем, ĕçленĕ çĕртех чăсăлса ӳксе, ăнран кайса выртнă. Вĕсене шăтăкран сĕтĕрсе тухса тăна кĕртнĕ.

— Юлташсем, хăвăра-хăвăр çирĕплетĕр. Нумай юлмарĕ ĕнтĕ. Ыран-виçменех шăтарса тухатпăр,—тесе паттăрлатнă Илюшин ытти юлташĕсене.

Çитменнине тата юлашкинчен чул çине çитсе лекнĕ. Ку пушшех те ăнтан янă. Анчах паттăрсем чула та парăнман,—чавнă, чавнă.

Вуннăмĕш кун çитнĕ. Коммунистсем пырĕсене пĕр тĕпренчĕк çăкăр антарманни виçĕ тавлăк тулнă. Хырăмĕсем выçса, çăвар ăшĕсем типсе ларнă. Пурте тăтăшах шыв ĕçсе çеç ăшчикĕсене лăплантарнă. Вунă çынĕ хал

пётсе çитнипе шăтăкра йăванса выртнă. Вĕсем ĕçлеме мар, урисем çине те тăма пултарайман. Виççĕшĕ вилсех те выртнă.

— Илюшин юлташ, пĕтĕм шанчăк санăн çинче. Паян — вуннăмĕш кун акă. Ту витĕр шăтарса тухаймасан, çынсем пурте аптăраса ӳкĕç. Вара хамăр та пĕтĕпĕр,— тенĕ капитан Волгин.

— Çак шăтăкрах вилсен те, эпир тăва шăтарса тухмах тивĕçлĕ паян,— тесе сăмах панă Илюшин.

Юлашкинчен шăтăк тĕпĕнче Илюшинпа Волгин капитан çеç ĕçленĕ. Чавнă тăпрана инçете тултман, хыçалалла çеç ывăтнă. Ыттисем пурте халтан кайса выртнă:

— Ох, шыв ĕçесчĕ... Шыв! — тесе халсăр сасăсемпе йытнă.

Ватă Илюшин котёлоксемпе шыв илсе кĕрсе ĕçтернĕ. Çынсем пĕр вăхăта лăпланнă. Унтан каллех шыв ыйтса йăлăннă.

Юлашки вăйĕсене пуçтарса ĕçленипе Волгин та аптăраса çитнĕ, куçĕсем хуралнă, пуçĕ çавăраннă, çăвар ăшĕ типнĕ, хăлхисем шавланă, алли-урисем чĕтренĕ.

Ватă шахтёрăн — Илюшинăн та вăйĕ пĕте пуçланă. Анчах вăл çапах та парăнман-ха:

— Капитан, эсĕ кан. Эпĕ хам пĕчченех шăтарса тухăп. Нумай юлмарĕ ĕнтĕ. Часах çутă курăпăр,— тесе Волгина савăнтарма тăрăшнă вăл.

Çынсем вилĕм кĕтсе ахлатнипе ту айĕнчи шăтăк янтăранă.

— Капла асап куриччен, вилсе выртни ырăрах пулĕ,— тенĕ хăшĕ-пĕри.

Çакна илтнипе Илюшин пĕтĕм вăйне пуçтарса ĕçленĕ. Вăл шанчăкне çухатман. Малалла ĕçленĕ. Çĕре чавнă тăприне хыçалалла ывăтнă.

Юлашкинчен тинех мĕн кĕтни çитнĕ: Илюшин умĕнче çутă курăннă. Вăл хăй те сисмен:

— Юлташсем, куратăр-и,— çутă! Шăтарса тухрăмăр,— тесе кăшкăрса янă.

— Пурте ҫавтери ҫаваннă.

Штольнăри вĕри сывлăш тулалла тухма васканă, унăн вырăнне сивĕ, таса сывлăш шăтăкалла кĕрсе тулнă. Аптăраса ҫитнĕ ҫынсем уҫҫăн сывланă. Вилес патне ҫитнисем те ура ҫине тăрса шăтăка кĕнĕ ҫутă патнелле пынă. Вĕсем пурте ҫăварĕсене карса ҫутă ҫине пăхнă, таса сывлăша тăранмасла ҫăтнă. Саваннипе хăшĕ йĕнĕ, хăшĕсем кулнă. Илюшина тавтунă.

Вăхăт ирхине пулнă. Хĕвел хĕрелсе пăхнă. Ҫынсем пурте шăтăк умне пуҫтараннă. Вĕсем тулалла тухма васканă. Анчах та тухма юраман.

— Каҫ пуласса кĕтес пулать. Унсăрăн фашистсем курĕҫҫĕ. Вара пĕтетпĕр. Хирĕҫ тăрса ҫапăҫма пирĕн вăйсем ҫук,—тенĕ капитан Волгин.

Илюшин пĕччен ҫеҫ шăтăкран тухса пĕр ҫĕклем курăк ҫăлса кĕнĕ те ăна ҫынсем умне пăрахнă:

— Нумая тӳснине, каҫ пуличчен ҫеҫ чăтма пултарăпăр...

Ҫынсем чĕрĕ курăка ывăҫла-ывăҫла илсе ҫăвар туллин хыпса чăмланă. Курăк ҫисен чĕрисем лăпланнă. Тăраннă пек туйăннă. Вăйĕсем кĕнĕ.

— Ҫийĕр, ҫийĕр, юлташсем. Курăк вăл ҫăкăр пекех хырăма тăрантать, сахал пулсан та, унта витаминсем пур. Ҫынна витамин тени питĕ кирлĕ,—тесе сĕннĕ Илюшин.

Ҫавтери тертлĕн, ҫын каласа ĕненес ҫук йывăрлăхпа кĕрешсе, ту витĕр шăтарса тухнă ҫынсем хăйсене хăйсем вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă пекех туйнă. Вĕсем ҫĕнĕрен ҫуралса ӳснĕ ҫынсем евĕр пулнă.

— Ну халĕ нимĕн те мар пирĕншĕн. Ҫăмăллăнах иртсе кайрĕ. Граждан вăрҫи вăхăтĕнче татах та йывăртараххисем пулнă. Ҫапах эпир чăтса иртнерĕ,—тенĕ Илюшин.

Ҫынсем ĕненнĕ. Умра тата мĕнле йывăрлăхсем пулсан та чăтма хатĕр пулнă.

Хĕвел анса тĕттĕм пулсан, ту витĕр шăтарса тухнă боецсем, вунсакăр ҫын, хĕҫпăшалсемпех йăпшăнса тухса

малалла кайнă. Ту шăтăкĕнче юлнă вилнĕ юлташĕсене вĕсем тирпейлĕн пытарса хăварнă.

Вырăс салтакĕсем выçăпа пĕтессе кĕтсе тăракан фашистсем ту тăрринче ним сисмесĕрех шăхăрса юлнă. Ункăран хăтăлса тухнă пĕчĕк отряд, асăрханса пырса, тата темиçе кунран фронтри Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çумне пырса хутшăннă.

*Июль—1943 ç.*

# КУЗЬМА КУКАЕВ.

Кукушка ялĕ Ока юханшывĕн икĕ еннипе ларса тухнă. Ялăн шăп вăтаçĕрĕнче çӳлĕ мар сăрт. Сăрт çийĕнче кăвак чултан тунă чиркӳ,—вăл инçетренех курăнса ларать. Унăн тăрринчи шурă хĕрессем хĕвелпе пушшех шуррăн курăнса кĕмĕл тĕслĕн йалтăртатаççĕ. Йĕри-тавра тытса çавăрнă тимĕр карти, тутăхнă пирки, юнпа сăрланă пек, хăмăр-хĕрлĕн курăнать. Ялти чи ватă çынсем каланă тăрăх, вăл чиркĕве лартни икĕ çĕр çул та ытла. Хăш çулта тунине никам та тĕплĕн астăвакан çук. Чиркӳ карти ăшĕнче ларакан ытам çитми ватă юмансем те ку чиркӳ питĕ авалхи çурт иккенне пĕлтереççĕ. Вăл юмансенчен нумайăшĕ ватăлнипе хăрса типсе ларнă ĕнтĕ.

Çав икĕ çĕр çул хушшинче ку чиркӳре миçе пин çын венчете кĕрсе арлă-арăмлă пулман-ши? Миçе пин ачапăчапа тĕне кĕртсе ят хуман-ши?

Чиркĕвĕ айĕнче чултан кӳме пек çавăрса тунă подвал пур. Подвал алăкĕ пӳрне хулăнăш тимĕртен. Подвалта кантăк тавраш çук. Тимĕр алăкăн вăтаçĕрĕнче кăна чăмăр кĕмелле çавракa шăтăк пур. Çав шăтăк ĕнтĕ кантăк вырăнне, мĕншĕн тесен вăл шăтăк витĕр подвал ăшне кун çути ӳкет. Шăтăкне хупласан подвал ăшĕ сĕм тĕттĕмех пулать. Ĕлĕкхи вăхăтра çак подвалта ватă стариксемпе карчăксем „çылăхĕсене каçарттарасшăн“ турра кĕлтуса, шывпа çăкăр çисе цурăннă. Вилсен вара вĕсене, масар çине мар, çав чиркӳ карти ăшне, ватă юмансем хушшине шăтăк алтса пытарнă.

Эпĕ халĕ вăл чиркӳре миçе пин çын венчет туса мăшăрланни çинчен мар, миçе пин ача-пăчана тĕне кĕртсе ят хуни çинчен те мар, çавăн пекех унта миçе ватă старикпе карчăксем „çылăхĕсене каçарттарса“ нуранни çинчен те мар çырасшăн. Ку вăхăтра вĕсем пире интереслентермеççĕ.

Кунта эпĕ çав чиркӳ айĕнчи подвалта пĕр партизан отрячĕн штабĕ мĕнле вырнаçса тăни çинчен çеç кĕскен каласа парасшăн. Партизан отрячĕн командирĕ Кузьма Кукаев та, 27 çул ĕлĕк, авланнă вăхăтра çав чиркӳре венчетленсе арăмне пирвайхи хут пуп умĕнче чуптунă. Пирвайхи ывăлĕ çуралсан та ăна çакăнта тĕне кĕртсе ят хунă. Кайрантарах çуралнă икĕ ывăлĕпе пĕр хĕрне вара тĕне кĕртмен вăл, мĕншĕн тесен революци пулса иртнĕ. Ачисен ячĕсене хăй хурса ялсоветне кайса çыртарнă. Халĕ ĕнтĕ Кузьма Кукаевăн ачисем ӳссе çитĕнсе çын пулнă. Ывăлĕсем виççĕшĕ те авланнă, хĕрĕ качча тухнă. Ачисем те ача-пăчаллă пулнă.

Кузьма Кукаев отрячĕ ытла пысăк мар,—унта 160 арçын, 78 хĕрарăм шутланать. Çулĕсенчен илсен, отрядра 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 70 çула çитнĕ стариксем те пур. Партизанĕсем чылайĕшĕ çарта пулман, çар ĕçне те вĕренмен çынсем пулнă. Анчах вĕсене çарта пулманни пĕртте кансĕрлемен. Сакăр уйăх хушши партизан отрядĕнче пулнипе вĕсем çар ĕçне—çар шкулĕсенчен вĕренсе тухнă курсантсем пекех пĕлеççĕ.

Улттăмĕш уйăх ĕнтĕ Кузьма Кукаев отрячĕ фашистсене хуса кăларнă та, яла хăй аллинче тытса тăрать. Ку тапхăрта фашистсем темиçе хутчен те яла пырса кĕрессшĕн пулса наступленисем туса пăхрĕç. Çук, нимĕн те тăваймарĕç,—вилнĕ салтакĕсене ял таврашне тăка-тăка хăварса, чĕрĕ юлнисем яланах каялла чакрĕç. Антăранă енне фашистсем ял çине тупăсенчен те, миномётсенчен те переççĕ. Сывлăшран самолётсемпе тапăнса бомбăсем ывăтрĕç. Çук, Кукаев отрячĕ çав-çавах хăй вырăнĕнче çирĕппĕн тăчĕ. Вăл шанчăклă вырăнта. Унăн штабĕ чиркӳ

айӗнчи подвалта. Вăл подвала ҫӗмӗрме фашистсен ниепле те вăйӗ ҫитмест. Подвал ҫийӗнчи кивӗ чиркӗве ҫӗмӗрсе антарсан та, подвал тӗрӗс юлӗ. Ун ҫине Кузьма Кукаев хытă шанать. Чиркӳне те часах ҫӗмӗрсе антараяс ҫук. Вăл кирпӗчрен мар, ҫапсан вут тухакан чултан тунăскер. Сахал мар ӗнтӗ ку чиркӳ стенине снарядсем, минăсем ҫите-ҫите лекнӗ, асăрхаса пăхсан, чиркӳ стени шатра питлӗ ҫын пек путăклă-шăтăклăн курăнать. Ҫав путăк-шăтăксем вӗсем пурте снаряд, мина тивнӗ вырăнсем.

Кузьма Кукаев чиркӳ айӗнчи подвалта ҫеҫ пытанса пурăнмасть. Вăл час-часах хăйӗн отрячӗпе таврăналла та тухса ҫӳресе фашистсем ҫине вӗсем кӗтмен чухне тапăнать: вӗсен штабӗсене ватать, чугунҫул станцисене ҫӗмӗрет, вăрҫă хатӗрӗсем усракан складсене ҫунтарса ярать.

Ҫакна курса фашистсем шалт аптăраса ҫитеҫҫӗ. Ăҫта пынă унта партизансем. Пур ҫӗрте те: „Кузьма Кукаев отрячӗ ҫӳрет“ тенӗ хыпар илтеҫҫӗ. Ҫавăн пирки Кузьма Кукаевăн отрячӗ ҫав тери пысăк пулӗ тесе шутлаҫҫӗ тата унăн штабӗ хăш ялта, хăш вырăнта тăнине пӗлес-шӗн ҫунаҫҫӗ. Тăшман шпионсем те ярса пăхнă пулас. Анчах вӗсем те лайăх пӗлеймен, мӗншӗн тесен Кукаев хăйӗн отрядне хăй тӗплӗн пӗлекен шанчăклă ҫынсене ҫеҫ йышăнать. Пӗлмен, курман ҫынсем пырса лексен вăл: „Манăн отрядра ҫын ҫителӗклӗ. Ытлашки кирлӗ мар. Ăҫтан килтӗн—ҫавăнтах кай. Урăх отряд шыраса тух“, тесе ҫеҫ ăсатать.

Чиркӳ айӗнчи штаба Кузьман чи шанчăклă партизанӗ-сем ҫеҫ пӗлеҫҫӗ. Унта ытлашки ҫын кӗрсе ҫӳреймест.

Кукаев отрядӗнче пуринчен ытла хăйсен ялӗнчи ҫын-сем ҫеҫ. Вăл хăй пӗтӗм ҫемйипех: виҫӗ ывăлӗ, виҫӗ ки-нӗ,—хӗрӗпе кӗрӳшӗ те отрядра. Тата 53 ҫула ҫитнӗ карчăкӗ те хăйпе пӗрлех штабра. Карчăкӗ телефонистка пулса ӗҫлет унăн.

— Кузьма Максимович, чиркӳ айӗнчи подвалра мӗн пур унта пирӗн?—тесе ыйтаҫҫӗ хăшпӗр партизансем.

— Хм... мĕн пур? Унта манăн карчăк „çылăхне каçарасшăн“ турра кĕлтуса ларать. Çавăнпа та унта кĕрсе çӳреме юрамасть,—тесе юптарать Кузьма.

Партизансем ĕненеççĕ, мĕншĕн тесен Кузьма Кукаев нихăçан та пĕр сăмах суйса каламан. Çакна та вăл чăн калать тесе шутлаççĕ.

— Хăв турра ĕненместĕн. Карчăку çылăхне каçарттарать! Мĕнле-ха эсĕ ăна чăтатăн?—тесе тĕлĕнеççĕ лешсем.

— Пирĕн Сталинла Конституцире: кам турра ĕненет, вĕсене чармалла мар, тенĕ. Вăл пирĕншĕн закон-и? Çапла пулсан, эпĕ те хамăн карчăка турра ĕненме чарма пултараймастăп. Ан тив, ватăлмалăх кунĕнче кĕлтуса юлтăр, тесе ответлет Кузьма Кукаев хăйĕн партизанĕсене.

Лешсем вара ним калама та аптăраççĕ: чăн калать пулĕ, тесе ĕненеççĕ.

Чылай вăхăт иртсен, нимĕçсен командованийĕ Кукаев штабĕ ăçта выранаçнине мĕнле те пулин пĕлнĕ пулас, çавăнпа вăл тăракан яла çавăрса илсе ăна аркатса тăкма шут тунă. Май уйăхĕн пуçламĕш кунĕсенче, пĕр каçхине çурçĕр тĕлĕнче, нимĕçсен карательный отрячĕ пĕр пин ытларах салтакпа яла пур енчен те ункă пек çавăрса илет. Ниçтан та тухса кайма выран çук. Ял çине çăмăр пек пуля тăкăнма пуçлать.

Хăшпĕр хăравçăрах партизансем, тăшман кĕтмен çĕртен наступлени пуçланипе, хăйсене хăйсем шанмасăр чĕтресе ӳкеççĕ:

— Кузьма Максимович, хирĕç тăма пирĕн вăй сахал. Халĕ, вăхăт пур чухне, атьăр яла пăрахса каяр. Унсăрăн вĕсем пире аркатса такĕç,—тесе чĕнеççĕ.

Кукаев хăравçăсем çине шурă куçĕсемпе çавăрăнса пăхать. Тути хĕррисене хыттăн çыртса ыраттарать.

— Сирĕн шухăшпа ултă уйăх кĕрешсе тытса тăнă яла пĕр каçрах çухатмалла иккен? Çук, манăн отряд чакаканни мар. Вăл малалла çеç кайма пултарать. Сталин юлташăн 195-мĕш номерлĕ приказĕ—манăн отрядшăн та закон. Эпĕ çав приказа пурнăçлама тивĕçлĕ. Ăнлантăр-и?

Кам фашистсене çĕнгерессе шанмасть, вăл çын манăн отрядра ан пултăр! Илтрĕр-и?—хаяррăн кăшкăрса каларĕ Кузьма Кукаев, унтан вăл хăй умĕнчи пуçтарăнса тăнă партизансем çине шăтарас пек пăхса çаврăнчĕ.

— Илтрĕмĕр. Кам пирĕнтен хамăр вăй çине шанмасть,—вăл пирĕн хушăран уйăрăлать. Ăна вилĕм! —темиçе сасă харăссăн калани илтĕнчĕ. Пĕр вăхăта пурте шăп пулса тăчĕç, пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăха-пăха сăнарĕç.

— Кам фашистсенчен хăрать? Тухăр малалла! — пыр тĕпĕпе кăшкăрса ыйтрĕ Кузьма Кукаев.

Çук, пĕр партизан та тухакан пулмарĕ.

— Команда пулмасăр никам та персе пăшал сасси ан кăларăр. Кашни пуля пуçне—пĕр фашист салтакĕ пĕттĕр. Ăнлантăр-и? Пурте харпăр-хăй вырăнне марш!—кăшкăрса команда пачĕ Кузьма Кукаев.

Партизансем куçа хупса уçнă пек хăвăрт, каçхи тĕттĕм сывлăшра курăнми пулчĕç. Çĕр çийĕнче ура сассисем çеç илтĕнсе юлчĕç.

... Чиркÿ çумне виçĕ снаряд харăс уласа пырса ÿксе çурăлчĕç. Тĕттĕм çĕр çиçĕм çиçнĕ пек çутăлса кайрĕ те, çавăнтах каллех хура чатăрпа витĕнчĕ. Снаряд осколкисем таврăналла ÿхĕрсе саланчĕç, хăшĕсем чиркÿ стени çумне те çапăнса çĕре тăкăнчĕç.

Хирĕç пăшал сассисем пулман пирки, фашистсем партизансем хăраса ялтан тухса тарчĕç пулмалла тесе шутларĕç пулас. Пеме лăпланчĕç. Ялалла хăюллăнах кĕре пуçларĕç. Çĕр тĕттĕм пулсан та, çын мĕлкисем мĕкĕлтетни пăртак курăнать-ха. Пурте вĕсем чиркÿ патнелле туртăнаççĕ.

Чиркÿ ăшне тата тăррине вырнаçнă партизансем, никам çук пек шăппăн пăхса, итлесе фашист салтакĕсем çывăхарасса кĕтеççĕ. Вĕсен аллисенче винтовкăсем, автоматсем хатĕр,—умĕсенче гранатăсем выртаççĕ. Пеме команда пулсанах çапăçу пуçлама хатĕр.

Сасартăк фашистсем енчен команда сасси илтĕнчĕ. Чир-

кӳ патнелле пыракан мӗлкесем ҫӗр ҫумне чӑсӑла-чӑсӑла выртрӗҫ. Ку мӗскере-ши пӗлтерет?!

Пӗр пилӗк минут вӑхӑт иртсен, чиркӳ подвалӗн алӑкӗ умӗнче икӗ фашист салтакӗ курӑнчӗ. Вӗсем чӗрне вӗҫҫӗн пусса пырса подвал алӑкне уҫрӗҫ.

Кам пур?—нимӗҫле кӑшкӑрса ыйтрӗҫ вӗсем.

Подвал ӑшӗнчен сасӑ паракан пулмарӗ. Салтаксем подвал ӑшне кӗчӗҫ. Фонарьпе ҫутатса пӑхрӗҫ. Кураҫҫӗ: вӗсен умӗнче пӗр ватӑ хӗрарӑм ҫеҫ, кӗтесселле пӑхса тӑнӑ та, пӗр чарӑнмасӑр ӳке-ӳке пуҫҫапса сӑхсӑхать.

Фашист салтакӗсем хӗрарӑм кӗлтуни ҫине кӑшт пӑхса тӑчӗҫ. Унтан пӗри:

— Матка, мӗн туса пурӑнатӑн эсӗ кунта?—кӑшкӑрса ыйтрӗ.

Хӗрарӑм фашист салтакӗсем енне ҫаврӑнса тӑчӗ те:

— Курмастӑр-им, турра кӗлтӑватӑп... Тухса кайӑр! Кӗлтума ан кансӗрлӗр мана,—терӗ ҫирӗп сасӑпа.

— А-а... турра кӗлтӑватӑн эсӗ? Партизансем ӑҫта?—сӑнавлӑн ыйтрӗ фашист салтакӗ.

— Партизансем? Пӗлместӗп. Курман!—ҫирӗппӗн ответлерӗ хӗрарӑм.

Ҫак вӑхӑтрах подвал алӑкӗ умӗнче Кузьма Кукаев курӑнчӗ:

— Партизансем кунта вӗсем... Аллӑрсене ҫӗклӗр!—терӗ те вӑл, ҫавӑнтах фашист салтакӗсем умне пырса тӑчӗ. Унӑн икӗ аллинче икӗ наган, вӗсемпе, лешсен кӑкӑрӗсене тӗллерӗ.

Подвал алӑкӗ умӗнче тата виҫӗ партизан курӑнчӗ.

Фашист салтакӗсен аллисенчи автоматсем подвал урайне лаплатса ӳкрӗҫ.

Алла лекнӗ фашистсемпе вӑрах калаҫса тӑма вӑхӑт ҫук. Вӑхӑтӑн кашни секунчӗ хаклӑ.

Салтаксем иккӗшӗ те вырӑсла калаҫкалама чухлаҫҫӗ. Кукаев та кӑшт-кашт нимӗҫле ӑнланать. Ҫавӑнпа вӑл ыйтӳрех:

— Эсир разведчиксем?—ыйтрӗ.

Фашист салтакӗсем, хăраса ӳкнӗскерсем, харăс ответлерӗç:

— Разведчиксем.

— Аван. Халӗ ӗнтӗ эсир манăн алăра. Эпӗ сире мӗн хушатăп—çавна итлӗр. Эпӗ хушнине итлеместӗр пулсан, сире çакăнтах вилӗм! Ăнланатăр-и эсир?

— Ăнланатпăр, — харăс ответлерӗç салтаксем. Вӗсем халӗ капкăна çакланнă кашкăрсем пекех чӗтӗреççӗ. Вилӗм хăрушă. Вӗсем Кузьма Кукаев мӗн хушать—çавна тума пурне те хатӗр.

— Утăр ман умран!—хушрӗ Кукаев фашистсене.

Лешсем подвал алăкӗнчен утса тухрӗç.

— Кăшкăрăр: чиркӳре никам та çук. Килӗр кунталла тесе!—хушрӗ вӗсене Кузьма Кукаев.

Салтаксем харăс кăшкăрчӗç.

Унтан Кукаев фашистсене калле, подвала кӗме хушрӗ.

— Варвара Тарасовна, акă сана икӗ фашист салтакӗ. Çапăçу пӗтиччен вӗсене сыхла. Асту, вырăнӗсенчен хускалсанах пер те пăрах! —терӗ Кукаев хăйӗн карчăкне.

Фашист салтакӗсем тин ăнланса илчӗç: турра кӗлтăвакан хӗрарăм хăй те чее партизанка пулнă иккен!

Варвара Тарасовна аллине автомат тытрӗ те, фашист салтакӗсен умне пырса тăчӗ:

Кузьма Кукаевпа ытти партизансем подвалтан тухса кайрӗç.

Хăйсен разведчикӗсем чӗнсе калан̆ă сассене илтсен, çӗрте выртакан фашист салтакӗсем хăвăрт тăрса пӗр шиксӗрех чиркӳ патне кӗпӗрленсе пыма пуçларӗç. Акă, аллă метра çитрӗç. Сасартăк, Кузьма Кукаев сасси:

— Отряд, пли! — янтăраса кайрӗ. Винтовка, автомат, пулемёт сассисем пӗрле хутшăнса шатăртаттарма тытăнчӗç.

Фашистсем, курăнми алă пысăк çавапа çулнă пек, çӗре тăкăна пуçларӗç. Кăшкăрашу, çухăрашу пуçланчӗ.

Çапăçу вăраха пымарĕ, çур сехетрен пĕтрĕ. Чĕрĕ юлнă нимĕççем хĕçпăшалĕсене пăрахсах каялла тарчĕç.

Çĕр иртсе кайрĕ. Шурăмпуçĕ шуралса килчĕ. Çутăлать.

— Халĕ ĕнтĕ пирĕн ку ялта пурăнма юрамасть. Фашистсем пирĕн штаб тĕлне пĕлеççĕ. Урăх вырăна куçатпăр,—терĕ Кузьма Кукаев.

Çав ирхинех отряд урăх вырăна куçрĕ.

Май—1943 ç.

## ПОЛИТРУК.

Политрук Самсонов кăçалхи çуркунне пирвайхи хут куккук авăтнине илтсен тăна кĕчĕ:

„Чăн-ши ку е тĕлĕк-ши? Тен эпĕ вилнĕ пуль, е чĕрех-ши?

Вăл халĕ хăш çул, хăш уйăх, мĕнле кун паян—нимĕн те пĕлмест. Унăн шухăшĕсем пĕтĕмпех пăтранса кайнă. Куçне уçса пăхрĕ. Хăй умĕнче пĕр çамрăк хĕрарăм тата тепĕр шурă сухаллă ватă старик ларнине курчĕ. Аллирисене хускатрĕ. Сылтăм ури туни çĕçĕпе чикнĕ пек сурса ыратать. Еçесси килнипе çăвар ăшĕ типсе кайнă, чĕлхи хытса ларнă, пырĕ тĕпĕнчен ват пек йӳçĕ сурчăк хăпарать.

„Мĕн пулнă мана? Ăçта эпĕ? Ку хĕрарăмпа старик камсем-ши? Мĕншĕн вĕсем ман патра?“

Хĕрарăмпа старик хире-хирĕç ларнă та, шăпах. Вĕсем ырă та, усал та чĕнмеççĕ. Çуркуннехи ăшă çил вĕрнипе тин çулçă сарса лăпсăртатнă йывăççем майĕпен суллаëççĕ. Пĕр кăтра туратлă хурăн тăрринче чăпар куккук ывăнма пĕлмесĕр авăтать. Унăн сасси пĕтĕм таврана илем парать. Ав, çакăнтах çăхансем те карăнклатса вĕçеççĕ. Анчах вĕсен сассине илтес килмест, вĕсем çынна сывлăх мар, вилĕм сунса кăшкăрнă пек туйăнать.

„Ăçтан, мĕнле майпа çитсе ӳкнĕ эпĕ ку вăрман варрине?—тесе шухăшлать политрук Самсонов. Эрех ĕçсе

ӳсӗрӗлсе ӑнтан кайман-ши вӑл? Ҫук, вӑл хӑй ӗмӗрӗнче нихӑҫан та ӳсӗрӗличчен ӗҫсе курман. Эрех ӗҫекенсене те юратмасть вӑл.

Кӑтра хурӑн тӑрринчи куккук тата темиҫе хутчен ярӑнса авӑтрӗ те урӑх еннелле вӗҫсе кайрӗ.

Политрук Самсонов пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ:

— Калӑр-ха тархасшӑн, ӑҫта эпӗ? Эсир хӑвӑр камсем пулатӑр? Мӗн пулнӑ мана? — тесе тилмӗрсе ыйтрӗ вӑл хӗрарӑмпа старикрен.

Хӗрарӑм Самсонов патнерех куҫса ларчӗ:

— Эсӗ, юлташ, вӑрманта. Эпир колхозниксем пулатпӑр. Ку—манӑн атте. Астумастӑн-им, пирӗн ялта хӗрӳ ҫапӑҫу пулчӗ? Ҫав ҫапӑҫура сана суранланӑ. Юну нумай юхнипе эсӗ тӑнна ҫухатнӑ. Фашистсем хытӑ хӗснипе пирӗннисем ялтан чакрӗҫ. Эпир те аттепе, нимӗҫсен аллине лекес мар тесе, ялтан тухрӑмӑр. Пӑхатпӑр, эсӗ ҫул айккинче юн юхтарса выртатӑн. Эпир вара аттепе, сана шеллесе, вӑрмана ҫитиччен йӑтса килтӗмӗр. Суранна тирпейлесе ҫыхрӑмӑр, — терӗ хӗрарӑм.

Политрук Самсонов тата чылай вӑхӑт мӗн пулнине шухӑшласа выртрӗ. Суранланнӑ ури ҫине пӑхрӗ; ӑна хӗрлӗ тутӑрпа чӑркаса ҫыхнӑ.

— Халӗ ӗнтӗ кӑшт ҫеҫ чухлатӑп. Апла халӗ ялта нимӗҫсем? — терӗ вӑл хӗрарӑм куҫӗнчен пӑхса.

— Пирӗннисем инҫе мар чакрӗҫ. Ял тулашне ҫеҫ тухрӗҫ. Халӗ ялта пушӑ. Никам та ҫук, нимӗҫсем пырса кӗме хӑраҫҫӗ пулас, — тесе ӑнлантарчӗ хӗрарӑм.

Политрук хӑй тавра пӑхрӗ.

— Манӑн автомат ӑҫта-ши?

— Санӑн автомату акӑ. Эпӗ ӑна сана кирлӗ мар пулсан та, хама кирлӗ пулӗ, тесе илсе килтӗм. Халӗ ӗнтӗ эсӗ сурану тӳрленмесӗр вӑрҫа юрӑхлӑ ҫын мар. Эпӗ ватӑ пулсан та, сывӑ, тӗрӗс-тӗкел-ха. Ӑнсӑртран кунта нимӗҫсем килес пулсан, партизан отрядне те кайма пултаратӑп. Унта пӑшал кирлӗ, — терӗ старик.

— Патронсене те пуҫтартӑн-и?

— Пĕр патрон та хăвармарăм, пĕтĕмпех пуçтартăм.
— Миçе çулта эсĕ, мучи?
— Çул сахалах мар, утмăла çитрĕм. Çапах та сывлăх çирĕп-ха. Сана çакăнта хам йăтса çитертĕм вĕт.

Политрук пĕр вăхăт шухăша кайса выртрĕ. Суранлă ури ыратать пулсан та, вăл вилĕмрен тата нимĕçсен аллине тыткăна лекесрен хăтарнăшăн çав тери савăнать. Хăй умĕнчи хĕрарăмпа старик уншăн хаклăран та хаклă çынсем пек туйăнаççĕ.

— Чăн, мучи, эпĕ ĕнтĕ тек нихăçан та вăрçа юрăхлă çын пулаймăп. Çавăнпа мана пăшал кирлĕ мар пулĕ. Автомата сана пиллесе паратăп. Тавтапуç сире, мана çăлнăшăн. Халĕ ĕнтĕ эсир мана хамăрăннисем патне леçсе хăварăр. Унтан мана госпитале ăсатĕç,—терĕ политрук.

— Тăхта, халĕ сана хамăрăннисем патне леçме май çук, вăрмантан тухсан уй урлă каçмалла. Унта, нимĕçсем курсан, персе пăрахма пултараççĕ. Тĕттĕм пулсан йăтса леçĕпĕр,—тесе пĕтерчĕ старик.

— Юрĕ эппин,—килĕшрĕ политрук.

— Юлташ, санăн ĕçессӳ килет пулĕ. Эпĕ халех шыв ăсса килем,—терĕ хĕрарăм.

— Калама та çук. Анчах мĕнпе шыв ăсса килĕн-ши?—терĕ политрук. Шыв çинчен асăнсан, унăн типĕ çăварĕ пушшех типсе кайнă пек туйăнчĕ.

— Ан кулян, шыв ăсса килме савăт тупатпăр,—терĕ хĕрарăм.

Çавăнтах вăл ури çине тăчĕ те старик пуçĕнчи картуса хывса илчĕ.

— Аттен картусĕ çирĕп. Пĕр тумлам та шыв юхмасть. Вăл йывăçсем хушшипе варалла анса кайрĕ.

— Чĕрĕ çын вăл—хырăм тăрантма мел тупать,—тесе юлчĕ старик.

— Чăн калатăн, мучи... Санăн хĕрӳ пултараканскер пулас. Миçе çула çитнĕ-ха вăл?

Старик юн нумай юхнипе сăнĕ шуралнă политрук çине пăхса илчĕ:

— Хамшăн аван пек. Çынсемшĕн—пĕлместĕп... Çирĕм çул тултарать ĕнтĕ. Амăшĕнчен виçĕ çулта кăна юлнăччĕ. Хамах пăхса ӳстертĕм.

— Манран икĕ çул çеç кĕçĕн апла. Манăн та анне çеç килте, эпĕ те тăлăх ӳсне,—терĕ политрук.

Старик çамрăк политрук çине ăшă куçĕсемпе тепĕр хут пăхса илчĕ:

— Вăрçă чарăнсан, хăвна пулăшнине манмасан, тен, татах пĕрне-пĕри курăпăр-ха...

— Эсир мана пулăшнине эпĕ, мучи, виличчен те манассăм çук. Ура юсансанах, чи малтан сирĕн пата хăнана килĕп. Вăрçă çеç часрах чарăнтăрччĕ...

Çак вăхăтра, инçе те мар, çын калаçнă сасă илтĕнчĕ. Старик ура çине сиксе тăчĕ.

— Ах, Раисăна фашистсем тытмарĕç-ши?

Политрук та тăрасшăн пулчĕ, анчах хуçăлнă ури çине пусайман пирки, тайăлса кайрĕ те, каллех çĕре ӳкрĕ:

— Ман пирки хĕр нимĕçсен аллине лекмерĕ-ши? Мĕншĕн ĕçес килнине пĕлтертĕм! Йывăр пулсан та, каç пуличчен чăтмаллаччĕ,—хăйне хăй ятларĕ политрук.

— Нимĕçсем!.. Кунталла килеççĕ. Акă, хайхи санăн автомату халех кирлĕ пулчĕ,—терĕ старик, политрукăн автоматне ярса тытса.

— Пеме пĕлетĕн-и?—хуллен ыйтрĕ политрук.

— Пĕлетĕп. Юлташ, эсĕ менле те пулин ав çавăнталла шу,—тесе пуçне тайса кăтартрĕ старик.

Политрук пĕр йăваннă чăрăш каски хыçнелле упаленчĕ.

— Юлташ, ме хăвăртрах шыв, ĕç. Фашист салтакĕсем, çирĕм çын ытла, кунталла килеççĕ,—терĕ Раиса, политрука картус тулли шыв парса.

Политрук шыва пĕр канмасăр ĕçсе ячĕ; çăмăл пек туйăнчĕ ăна.

Фашист салтакĕсем çывăхах çитрĕç. Старике курчĕç.

— Русс! Партизан!—кăшкăрса ячĕç.

Старик автоматран пеме пуçларĕ.

Нимĕҫсем выртрĕҫ.

— Раиса, мел пулсан, пирĕннисене пĕлтересчĕ. Фашистсем хыҫала тухса ҫавăрса илесшĕн пулас,—тесе пăшăлтатать политрук.

Фашистсем старик ҫинелле пере пуҫларĕҫ. Вăл хирĕҫ тавăрать.

— Юлташ, атя эпир ку вырăнтан каяр. Атте вĕсемпе пĕччен те ҫапăҫĕ. Пуринчен ытла—манăн сана сыхлас килет,—тет Раиса.

— Ҫук, аҫуна пăрахса кайма юрамасть. Ăнсăртран ăна... амантсан, автоматпа эпĕ хам ĕҫлеме тивĕҫ. Утаймасан та, манăн алăсем сывă,—тет политрук.

Старик пĕчченех ҫирĕм фашиста хирĕҫ ҫапăҫать. Вĕсенчен хăшĕсем юн юхтарса выртаҫҫĕ ĕнтĕ.

— Эх, тепĕр автомат пулсан...—тарăхать политрук.

— Виҫҫĕмĕре—виҫҫĕ пулсан тата та аванччĕ те. Ҫук вĕт. Аҫтан тупас?—тет Раиса.

Вĕсем политрукпа иккĕшĕ ҫӳллĕ каска хыҫĕнчен пăхса лараҫҫĕ. Пуҫĕсем урлă пульăсем нăйласа иртеҫҫĕ.

Старик персен-персен, хăй ҫине фашистсем кĕнине чăтса тăраймарĕ, каска хыҫне упаленсе пырса выртрĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем виҫҫĕшĕ те пĕрле:

— Патрон сахалланать. Сана, юлташ, мĕнле хăтарасши?—тесе пăшăлтатать старик, политрук ҫине пăхса.

— Мучи, эсир кайăр. Пар-ха автомата хама. Эпĕ вĕсемпе хам,—терĕ политрук.

Вăл халĕ ури ыратнине те манса кайрĕ. Ура ҫинче утса килекен фашист салтакĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн персе ӳкерме пикенчĕ.

— Ҫук, эпир сана пăрахса каймастпăр. Вилсен те пĕрле вилетпĕр,—тет старик.

Политрук пĕр пуля сая ямасăр перет. Юлашки пилĕкултă фашисчĕ каялла тарма пуҫларĕҫ.

Старик, фашистсем тарма пуҫланине курсан, чăтса лараймарĕ, каска хыҫĕнчен сиксе тăчĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Ур-ра!

Фашистсем шурă сухаллă старике курсан, партизансем тесе пушшех хăрарĕç пулас, тата хытăрах тарма пикенчĕç.

— Патрон та пĕтсе çитрĕ. Фашистсем те юлмарĕç,— терĕ политрук, аллинчи автоматне каска çине хурса.

— Халĕ ĕнтĕ хамăрăннисем патне кайма пултаратпăр,— терĕ Раиса.

Вĕсем ашшĕпе иккĕшĕ политрука икĕ хулĕнчен çавăтса, йывăççен хушшинелле кĕрсе кайрĕç.

Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ, тӳпере çурла пек çĕнĕ уйăх курăнчĕ.

1942 ç.

# ВĂРМАНТА

Эпир Кураков красноармеецпа иккĕн разведкăран таврăнатпăр. Чылай çĕрте пултăмăр, мĕн кирлине турăмăр. „Вырăна çитсен канăпăр ĕнтĕ, тăраничченçийĕпĕр, ыйăх туличчен çывăрăпăр“, тесе утатпăр.

Эпир тухса кайнăранпа шăп кăна икĕ талăк çитрĕ. Çак хушăра эпир пурĕ пĕрре çинĕ, çывăрман, ялан утса, упаленсе, хырăмпа шуса çӳренĕ. Ирĕк пулсан, çакăнтах йăванса каясчĕ те, пĕр пĕлмесĕр çывăрасчĕ. Çук, пирĕн çитес çĕре вăхăтра çитес пулать, командир приказне тĕплĕн пурнăçлас пулать.

Пирĕн утмалли тата чылай-ха. Вăрман урлă каçмалла. Унтан штаб вырнаçнă яла çитмелле. Çитсен, командира хамăр мĕн курнине, илтнине тĕплĕн каласа памалла. Вара тин пирĕн çиес, çывăрас, канас вăхăт çитет.

Урасем ыvăннă, хырăм выçнă, çывăрас килет пулсан та, эпир васкаса утатпăр. Тапак туртса ярасчĕ, çук, вăл та пĕтнĕ пирĕн. Ак вăрмана çитсе кĕтĕмĕр. Çулпа кайсан— пилĕк километр кукăр пулать, тӳрĕ кайсан—çавăн чухлĕ çывăхрах.

— Мĕн тăватпăр, çулпа çаврăнса каятпăр-и?—терĕм эпĕ, вăрман хĕррине çитсен.

— Мĕншĕн çулпа кайса çавăнса çӳрес. Атя тӳррĕн. Компас пур вĕт пирĕн. Аташса каймăпăр. Пилĕк километра сахалтан та пĕр сехет утас пулать,—тет Кураков.

— Йывăçсем хушшипе, çатăркасем урлă утасси йывăртарах та ĕнтĕ... Ун вырăнне пилĕк çухрăм çывăх,—тесе килĕшрĕм эпĕ.

Вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Кураков компасне аллинче тытса пырать. Вăл малта. Эпĕ ун хыççăн пыратăп. Йĕритавра кайăксем юрлаççĕ. Тӳлек çил вĕрнипе вăрман хуллен кашлать. Васкаса утатпăр пулсан та, малалла хăвăрт каяймастпăр, мĕншĕн тесен ура вăйĕсем пĕтсе çитнĕ.

Кураков сасартăк утма чарăнчĕ:

— Куратăн-и?—тесе таçта малалла тĕллесе кăтартать.

— Мĕскер?

— Мулкач выртать.

— Пăхатăп: чăнах та çапă айĕнче мулкач выртса парать.

— Тытар. Вырăна çитсен пĕçерсе çийĕпĕр,—тетĕп эпĕ.

Кураков автоматне хулпуççийĕ çине тытрĕ те печĕ.

Çапă айĕнче выртакан мулкач çӳлелле сикрĕ те каллех çĕре чăсăлса ӳкрĕ. Çак вăхăтра пирĕн умра такам:

— Ой!—тесе çинçе сасăпа кăшкăрса ячĕ.

Эпир тĕлĕнсех кайрăмăр.

— Ара, мулкач çын сассипе калаçма пуçларĕ тем? Мулкач мар пулĕ вăл, шуйттан пулĕ,—тесе тăрать Кураков.

Эпĕ те аптраса тăратăп.

Мулкач юн юхтарса выртать, урисемпе тапкаланать. Хăлхисене лашт янă хăй.

Эпир çаплах мулкач патне пыма хăраса тăратпăр. Пĕрпĕринпе сăмах чĕнсе калаçмастпăр. Кураков ман куçран пăхать, эпĕ ун куçĕнчен пăхатăп. Вăл, темĕскертен тĕлĕннĕ пек, куçĕсене мăч-мăч хупать. Хамăн та çавах пулĕ, мĕншĕн тесен чĕре siksе тухасла тапать. Тĕлĕнмелле, фашистсенчен хăраманнине, мулкачран хăраса ӳкрĕмĕр. Çитменнине тата—персе вĕлернĕ мулкачран. Кам та пулин пăхса тăрас пулсан, ахăлтатса кулмалла.

Çак вăхăтра пирĕн умра пĕр хĕрарăм мĕлки курăнчĕ.

Тин чухласа илтӗмӗр: ак кам сасӑ панӑ иккен! Хӗрарӑм. Мӗнле хӗрарӑм вӑл, фронтӑн малти линийӗнче ҫӳрекенскер? Шпион мар ши?

— Кам эсӗ? Мӗн шыраса ҫӳретӗн пӗччеиҫи вӑрман варринче?—кӑшкӑрса чӗнчӗ Кураков, автоматне хытӑ тытса.

— Эпӗ... Эпӗ...—терӗ хӗрарӑм хӑранӑ сасӑпа.

Хӗрарӑма курсан, эпир мулкач ҫинчен мансах кайнӑ.

— Ан хӑра, кил кунта. Эпир красноармеецсем!—тесе чӗнетпӗр хӗрарӑма хамӑр пата.

— Хӑрамасӑр, хӑвӑр пӑшалпа петӗр те,—тесе тӑрать хӗрарӑм. Пирӗн пата пыма шикленет хӑй, те татах перӗҫ тесе шутлать.

— Ҫук, эпир сана пемен, мулкача петӗмӗр. Ӗненместӗн пулсан, акӑ мулкачӗ,—тетӗп эпӗ, вилнӗ мулкача кӑтартса.

— Эпӗ ывӑннипе йывӑҫ тункати ҫумне таянса лартӑм, хам та сисмен, тӗлӗрсех кайнӑ. Ҫывӑхра пӑшал сасси кӗрслетнипе вӑранса кайрӑм. Хӑранипе хам та сисмерӗм, кӑшкӑрса ятӑм,—терӗ хӗрарӑм, хӑй ҫаплах шиклене-шиклене пирӗн пата утса пычӗ. Унӑн ҫийӗнчи кӗпи ҫуркаланса пӗтнӗ, ҫара уран, ҫара пуҫӑн. Ҫӳҫӗ мелке пек лапӑстатса тӑрать; вӑрах вӑхӑт выҫӑ пурӑннипе питҫӑмартийӗсем пӗрӗнсе кӗнӗ, куҫӗсем путса аннӑ, сӑнӗ сапсарӑ.

— Кам эсӗ? Ӑҫтисем? Мӗн шыраса ҫӳретӗн кунта?—ыйтатпӑр.

Хӗрарӑм пиртен вӑтанать пулас, хӑй тӑрӑх пӑхкалать, мӗншӗн тесен кӗпи ҫурӑкӗсенчен ӳчӗ курӑнать.

— Эпӗ Тула облаҫӗнчен, Липатиха ятлӑ ял ҫынни. Мана нимӗҫ фашисчӗсем хӑйсем патне ӗҫлеттерме тытса кайрӗҫ. Икӗ уйӑх хушши Германире пӗр ҫӗрулпучӗ патӗнче ӗҫлесе пурӑнтӑм. Малалла чӑтса пурӑнаймарӑм улпут мӑшкӑлне, тухса тартӑм. Иккӗмӗш уйӑх ӗнтӗ эпӗ унтан тарни. Ҫӑкӑр татӑкӗ ҫисе курман. Ҫак вӑрмана ҫитсе кӗтӗм те аташса кайрӑм. Ниҫтан тухма пӗлместӗп. Вилетӗп пулӗ тесе шутланӑччӗ. Юрать, эсир ҫитсе лекрӗр,—терӗ хӗрарӑм хурлӑхлӑ сассипе.

— Мĕн ятлă эсĕ?
— Таня.
— Хушамату?
— Самокурова.
— Упăшку ăçта?
— Вăл Хĕрлĕ Çарта. Пĕлместĕп, те чĕрĕ ĕнтĕ, те вилĕ.
— Самокуров? Самокуров хушаматлă красноармеец пур вĕт пирĕн ротăра?—тетĕп эпĕ.
— Пур. Тен Таня упăшкиех пуль,—тет Кураков.
Вăрманта вăрах тытăнса тăма вăхăт çук пирĕн. Часрах вырăна çитмелле.
— Ну, Таня, айта пирĕнпе. Хăвна вăрманта тупрăмăр, тен эпир сана упăшкуна та тупса парăпăр.
— Тăхтăр-ха, сирĕн ротăра Самокуров хушаматлă çын пур теместĕр-и эсир? Чăнах-и?—савăнăçлăн кăшкăрса сиксе ӳкрĕ Таня.—Мĕн ятлă вăл?
— Ятне пĕлместпĕр çав. Хушамачĕ çаплах.
Эпир персе вĕлернĕ мулкача йăтрăмăр, Таньăна ертрĕмĕр те, вăрман тăрăх утрăмăр. Васкатпăр. Таня, иккĕмĕш эрне çăкăр çисе курман пулсан та, пирĕнтен юлмасть. Пырсан-пырсан çеç вăл:
— Час çитетпĕр-и-ха?—тесе ыйтать.
— Инçе юлмарĕ ĕнтĕ, час,—тесе лăплантаратпăр Таньăна.
Кураков çаплах компас çине пăхса утать.
Таньăпа калаçкаласа пынипе вăхăт иртни те сисĕнмерĕ, çул та кĕске пулчĕ. Каç пулнă тĕле штаба çитрĕмĕр. Пире курсан, красноармеецсем чупсах çитрĕç.
— Самокуров юлташ, кил-ха кунта! Паллатăн-и çак хĕрарăма!—тесе чĕнтĕм эпĕ.
Самокуров хăйĕн арăмне тăруках паллаймарĕ. Таня курсанах палларĕ:
— Павел! Паша!—тесе упăшкипе ыталаса илчĕ.
— Юлташсем! Эпĕ урăх ниçта та каймастăп. Хам ирĕкпе Хĕрлĕ Çар ретне çырăнатăп,—терĕ Таня пăртакран.

Таньăна красноармеец тумтирĕ пачĕç. Вăл пĕр эрне каннă хыççăн пирĕнпе пĕрле разведкăна çӳреме тытăнчĕ. Хĕрарăм пулсан та, арçынсенчен пĕртте юлмасть. Питĕ те пултаруллă хĕрарăм вăл, ахаль пулсан вăл фашистсен аллинчен те тарса хăтăлайман пулĕччĕ.

1942 ç.

# ВĔРЕТНĔ ШЫВ

Кулешово ялĕ Ака шывĕ хĕрринче ларать. Вăл фашистсен аллине лекнĕренпе виçĕ уйăх ытла иртнĕ ĕнтĕ. Çак хушăра яла фашист салтакĕсем пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ.

Çак уйăхра Кулешово ялĕ патĕнче хĕрӳ çапăçу пулса иртрĕ. Фашистсем темиçе тавлăк ялтан тухасшăн мар пулса хирĕç тăчĕç. Çук, чăтса тăраймарĕç, вĕсен яла пăрахса тухмаллах пулчĕ. Халĕ ĕнтĕ ял каллех Хĕрлĕ Çар аллине куçрĕ. Чĕрĕ юлнă колхозниксем пире çав тери савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Вĕсем хăйсене ирĕке кăларнăшăн Совет влаçне, Хĕрлĕ Çара, Сталин юлташа тавтăваççĕ. Хăйсене фашистсем çаратни çинчен пĕр-пĕринчен ăмăртмалла пире каласа параççĕ. Пурне те çырас пулсан, çӳç-пуç вирелле тăрать.

Акă пирĕн умра вăтам çулхи хĕрарăм—Соломонида Яковлевна. Унăн упăшки колхоз председателĕ пулнă. Вăрçă пуçлансан ăна Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. Соломонида Яковлевна икĕ ачипе тата 70 çула çитнĕ хуняшшĕпе тăрса юлать. Хуняшшĕ ĕçлеймест, вăл чирлĕ, ялан кăмака çинче ахлатса выртать. Вилĕм кĕтет. Анчах вилĕмĕ те унран таçта тарса пытаннă.

Соломонида Яковлевнăн ултă кĕтеслĕ çĕнĕ пӳрт. Ку пӳртне вĕсем иртнĕ çул çеç туса ĕлкĕрнĕ. Ăшĕ таса, ултă кантăклă, çутă, урайне сăрланă. Çавăнпа та кунта фашист офицерĕ пурăнма чарăннă. Офицер кăшт-кашт вырăсла та калаçнă. Пырса кĕрсе вырнаççанах вăл:

— Инке, ан хăра манран. Эпĕ офицер. Сана усал

тăвас çук. Ку ял ĕнтĕ манăн пулать. Ăна мана фюрер пиллесе пачĕ,—тесе пĕлтерет.

Соломонида Яковлевна офицера хирĕç кĕскен:

— Мĕн тăвас. Пурăн ĕнтĕ. Эсĕ хуçа,—тесе çеç ответлет.

Кăмака çинче чирлĕ старик ахлатса выртать.

— Кам ку?—ыйтать офицер.

— Манăн упăшкан ашшĕ.

— Мĕншĕн ахлатать вăл?

— Чирлĕ.

— Чирлĕ?! Апла пулсан ăна пӳртрен кăларса пăрахас. Вăл мана çывăрма кансĕрлет,—тет офицер.

Соломонида Яковлевна тĕлĕнсе каять:

— Ара, эсĕ мана усал тумăп, терĕн вĕт. Чирлĕ çынна ăçта кăларса пăрахас? Вăл йыт çури мар вĕт, ватă çын.

— Нумай ан калаç! Каланă сана пĕрре: вăл мана кансĕрлет, тесе. Çавăнпа вăл старике ман куç умĕнчен тасатас пулать. Унсăрăн эпĕ ăна халех...—кăшкăрать офицер.

Соломонида Яковлевна ним те тума пултараймасть. Старике урăх вырăна куçарса вырттарать.

Офицер пурăнма куçсан çутă çĕнĕ пӳрт темшĕн кивелнĕ пек туйăнма пуçлать. Тĕрме евĕр тĕттĕмĕн курăнать.

Офицер хăйне-хăй чăн-чăн хуçа пекех тыткалать. Хуçа арăмне тарçă вырăнне хурать. Хăйне валли тутлă апат хатĕрлеме хушать. Шыв вĕретсе çурăмне çутарать. Нимĕн намăса та пĕлмест, хĕрарăм умĕнчех çарамасланать. Мăшкăл! Соломонида Яковлевна ют арçынна мар, хăйĕн упăшки çарамасланнине те курман. Тӳсме çук хурлăх. Ирĕклĕ хĕрарăм фашист офицерĕн чури пулса тăчĕ.

Вăхăт çавтери майĕпен иртет. Кунсем çулталăк тăршшĕ туйăнаççĕ. Соломонида Яковлевна çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймасть, фашист офицерĕнчен хăтăласси çинчен шухăшласа выртать. Хĕрлĕ Çар каялла çаврăнса килессе кĕтет.

Фашист офицерĕ патне тата ытти офицерсем те пыраççĕ. Вĕсем пуçтарăнса лараççĕ те картла выляççĕ.

Соломонида Яковлевнăна апат хатĕрлеме хушаççĕ. Вун чăхă, пилĕк хур, вуникĕ кăвакал пурччĕ, вĕсене пурне те офицерсем пусса çисе пĕтерчĕç. Урăх нимĕн те юлмарĕ ĕнтĕ.

Офицер кашни кунах чăх ашĕ е хур ашĕ пĕçерме хушать.

— Урăх чăхă та, хур та, кăвакал та çук ĕнтĕ манăн,— тет хĕрарăм.

— Эпĕ санран пурриге çуккине ыйтмастăп. Мана пĕçерсе панă пултăр, унсăрăн хăвнах йывăр пулĕ. Санăн пулмасан—кӳршĕсен пур, вĕсенчен ил,—тесе хушать офицер.

— Кӳршĕсен те çук ĕнтĕ, вĕсенне те хăвăрăн салтакăрсемех çисе пĕтернĕ.

— Манпа нумай калаçса ан тăр эсĕ!—кăшкăрса тăкать офицер.

Хĕрарăмăн нимĕн те тума çук. Вăл пăхăнать. Кашни кун, кашни сехетрех ăшра курайманлăх ӳсет.

Пĕр каçхине офицер çывăрма выртас умĕн:

— Мадам, ирхинене вĕри шыв хатĕрле. Манăн çăвăнас пулать,—тесе хушать.

— Юрĕ, хатĕр пулĕ,—килĕшет хĕрарăм.

Вăл каçах çăлтан шыв кӳрсе хурать. Çĕрĕпе шухăшлать. Хăйшĕн вăл пит хуйхăрмасть, ачисене тăлăха хăварасран çавтери хурланать. Тата вată, чирлĕ хуняшшĕ пур. Ăна кам пăхĕ?

Соломонида Яковлевна ирех тăрать те кăмакине типĕ вутăпа хутса ярать. Витре кĕрекен чугунпа шыв лартать. Хăй пĕрех харăлтатса çывăракан фашист офицерĕ çине çаврăна-çаврăна пăхать.

Акă чугун вĕреме пуçлать. Ытла сиксе вĕренипе хĕрринчен шыв тумламĕсем сирпĕнсе ялкăшса çунакан кăмакари вутта лăплантараççĕ.

Соломонида Яковлевна урăх тăхтаса тăмасть. Вăл витре шывлă вĕрекен чугуна тытать те, тӳрех çывăракан фашист офицерĕн пуçĕ çине сапать. Вĕри шыв çĕлен пек чашкăрса офицер ӳчĕ тăрăх юхать.

Офицер урайне чӑсӑлса ӳкет, вӑл ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр аллисемпе ҫапкаланать, урисемпе тапкаланать, хӗрарӑм пӗрех ун ҫине вӗри шыва тӑкать:

— Акӑ, ҫӑвӑн, тасал,—тесе пӑшӑлтатать вӑл.

Унтан хӗрарӑм офицера тӗпсакайне сӗтӗрсе антарса пӑрахать. Хӑй каллех чугунне шыв тултарса кӑмакана лартать. Чылай вӑхӑт иртсен тӗпсакайне анса пӑхать... Офицер лӑпланнӑ. Вӑл сывламасть те, вилнӗ.

— Акӑ, эсӗ, манран тата хӗрарӑмран мӑшкӑларӑн, эпӗ сана вӗренӗ шывпа ӑшаларӑм,—тесе шухӑшлать.

Ҫутӑлать, офицер ҫук. Ытти офицерсем пыраҫҫӗ.

— Ӑҫта?—ыйтаҫҫӗ.

— Вӑл каҫах тухса кайрӗ те, таврӑнман-ха,—ответлет хӗрарӑм.

Кӗтеҫҫӗ, офицер ҫук. Шыраҫҫӗ, —тупаймаҫҫӗ. Хӗрарӑмран тӗпчеҫҫӗ. Вӑл ҫирӗп ответлет:

— Эпӗ офицерӗн хуралҫи мар-ҫке. Ав, ыйтӑр алӑк умӗнче тӑракан часовойран.

Часовойран ыйтаҫҫӗ:

— Каҫхине тухса кайрӗ те, таврӑннине курмарӑм,— тесе ответлет часовой. Кам пӗлет ӑна, тен вӑл пӗлет те-и, анчах хӑйне айӑпласран шикленсе каламасть-тӑр.

Вӑхӑт нумай та иртмест, ял ҫине Хӗрлӗ Ҫар наступлени туса, фашистсене хуса кӑларать. Халӗ ӗнтӗ Солононида Яковлевна хӑйӗн ӗҫӗ ҫинчен Хӗрлӗ Ҫар боецӗсене каласа парать.

1943 ҫ.

## КӖТМЕН ЮРАТУ

Вӑрмантан тухакан аслӑ ҫул ҫинче, йывӑҫ вуллисем хушшипе, пӗр хӗрарӑм мӗлки курӑнчӗ. Ун ҫийӗнче монашка тумтирӗ пек вӑрӑм хура кӗпе, пуҫне хура картус тӑхӑннӑ; картусӗн ҫамки ҫумӗнче чугун ҫулӗ ҫинче ӗҫлекен рабочи иккенне пӗлтерекен значӗк пур. Хӗрарӑмӑн сӑнӗ ҫамрӑк, нумай пулсан 18—19 ҫулсенче пулӗ; алли-

сем арçынăнни пек патвар; кĕскерех туналлă урисемпе арçынла вăрăм-вăрăм ярса пусса утать; сăмси кăшт курпунтарах та илемлĕ, куçĕсем хăмăр, таса чăмăр кăкăрĕсем малалла мăкăрăлса тăраççĕ. Вăл сылтăм аллипе пысăк мар чемодан йăтса пырать. Вăл хĕрарăм е кондуктор е стрелочник пулас.

Вăрмантан тухсан инçех те мар пĕр ял курăнать. Ял тесе каламалли çук ĕнтĕ ăна, мĕншĕн тесен фашистсем çунтарса пĕтернĕ. Пурĕ 3—4 пӳрт çеç çунмасăр тăрса юлнă, вĕсем те халь-халь ишĕлсе анасла тайкаланса лараççĕ, кантăкĕсене те çапса ватса пĕтернĕ. Тăррисем ишĕлсе аннă.

Хĕрарăм яла çитсе кĕчĕ те тӳрех çунмасăр тăрса юлнă пĕр пӳрт патне утса пычĕ:

— Хуçи пур-и?—тесе çĕмрĕк кантăк витĕр ыйтрĕ.

— Хуçи эпĕ пулатăп. Мĕн кирлĕ сире?—тесе, хуçа хĕрĕ кантăк витĕр пуçне кăларса ыйтрĕ.

— Нимĕн те кирлĕ мар. Çăкăрпа сыпса çиме шыв ыйтасшăн эпĕ,—терĕ çулпа килнĕ хĕрарăм.

— Ытти пулмасан та, шыв пурах ĕнтĕ. Ăна фашистсем типĕтсе лартма пултараймаççĕ. Кĕрĕр пӳрте,—тесе чĕнчĕ хуçа хĕрĕ.

Хĕрарăм пӳрте кĕчĕ. Хуçа хĕрĕ ăна пĕр курка шыв ăсса пачĕ те:

— Ăçталла каятăн капла?—тесе ыйтрĕ.

Хĕрарăм хуçа хĕрĕ çине ăшшăн пăхса илчĕ:

— Сирĕн яла килтĕм-ха. Кам патĕнче те пулин хваттер тупма май çук-ши, тетĕп.

Хуçа хĕрĕ ассăн сывласа илчĕ:

— Хăвах куратăн... Ненай. Çунмасăр юлнисенче пуринче те салтаксем пурăнаççĕ. Ют çынна мар, хамăра та тăвăр.

— Сирĕн патăрта та нимĕççем пурăнаççĕ-им? — пӳлсе ыйтрĕ хĕрарăм сăмах çавăрнăçĕ май.

— Пурăнаççĕ çав. Пиллĕкĕн.

— Халĕ ăçта вĕсем?

— Ĕçре. Ял тулашĕнче окоп алтаççĕ,—тесе пĕлтерчĕ хуçа хĕрĕ.

— Мана нумай вырăн кирлĕ мар. Пĕр кĕтес пулсан çитет. Ытти яла кайсан та çавах пулĕ,—терĕ те ун-кун пăхрĕ, хуйхăллăн сывласа илчĕ.

Хуçа хĕрĕ хваттер шыракан хĕрарăма шеллерĕ пулас:

— Ытах, хамăр патрах вăхăтлăха пурăнса пăх эппин. Аппапа йăмăк пек, пĕр вырăн çинче çывăрăпăр.

— Тавтапуçах, тусăм, эпĕ вăрах мар, пĕр 4—5 кун çеç пурăнăп сирĕн патăрта.

— Мĕн ятлă эсĕ, аппа?

— Ольга. Ху мĕн ятлă?

— Поля.

Çапла вĕсем пĕр-пĕринпе паллашрĕç. Поля та çамрăк-ха, 17—18 çулта çеç. Иртнĕ хĕл вăл 9-мĕш класра вĕреннĕ.

Ольгăпа Поля юнашар ларса чылай вăхăт каларĕç. Пĕрне-пĕри хăйсен хуйхисем çинчен каласа пачĕç. Вĕсем иккĕшĕ те качча кайман иккен-ха.

— Каччи-мĕнĕ... Вăрçă чарăнсан мĕнле пулĕ ĕнтĕ. Халĕ часрах фашистсене çапса аркатма пулăшас пулать,—терĕ Ольга сăмах çавăрнăçĕ май.

Поля ассăн сывласа илчĕ:

— Мĕнле пулăшма пулĕ-ши Хĕрлĕ Çара?

— Пулăшас тесен—май пур. Хăюллă çеç пулас пулать. Халĕ ĕнтĕ эсĕ пĕччен мар... Ăнланатăн-и?—терĕ Ольга, Польăна куçĕсенчен пăхса.

— Кала чăннипе, эсĕ Хĕрлĕ Çар хушнипе çӳретĕн-и?—тесе ыйтрĕ Поля.

— Хуллентерех эс... Никам та ан пĕлтĕр. Ялти çынсене: „Паллакан тусăм хăнана килчĕ", те. Фашистсене: „Манăн аслă аппам, чугунçулĕ çинче ĕçлет, хăнана килнĕ", тесе пĕлтер.

— Юрĕ. Ăна хамах пĕлетĕп. Ялти çынсем ыйтас та çук. Фашист салтакĕсене суйма пĕлĕп,—терĕ Поля хĕпĕртесе.

Çак сăмахсем хыççăн вĕсем тата çывăхрах туслашрĕç.

— Ах, эпĕ калаçнипе мансах кайнă. Мана салтаксем хăйсем ĕçрен таврăннă тĕле мунча хутса хатĕрлеме хушнăччĕ,—васкаса ÿкрĕ Поля.

— Ан васка. Эпир иккĕн вĕт. Эсĕ шывне тулт, эпĕ мунчине хутăп,—тесе лăплантарчĕ Ольга килхуçи хĕрне.

Тепĕр вунă минутран пахча хыçĕнчи мунчаран мăкăрланса тĕтĕм туха пуçларĕ.

Поля икĕ витрепе шыв тултать.

— Пыйтлăскерсем. Кун сиктерсе мунча кĕреççĕ. Çапах та пыйтăран тасалаймаççĕ,—тесе тарăхать Поля.

— Паян эпир хутнă мунчара пыйтăран тасалĕç вĕсем,—тесе йăл кулать Ольга.

Акă мунча пулчĕ. Çăвăнма хатĕр. Вĕри шыв та, сивĕ шыв та çителĕклĕ.

Нимĕç салтакĕсем çаплах ĕçрен таврăнмаççĕ-ха.

— Ольга аппа, нимĕçсем ĕçрен таврăниччен атя мунча кĕрсе тасалар,—терĕ Поля.

— Эсĕ çăвăн. Манăн пĕртте кĕрес килмест. Эпĕ кунта килме тухнă чух çеç çăвăннăччĕ,—терĕ Ольга.

— Апла пулсан, юрĕ. Эпĕ час çеç çăвăнса тухам. Киле ан кай, çакăнтах кĕтсе тăр,—терĕ Поля. Вăл çавăнтах хывăнчĕ те, çаппа-çарамас тăрса юлчĕ.

Ольга темшĕн вăтаннă пек пулса, Польăн таса шурă ÿчĕ çине пăхмасăр, тепĕр еннелле çаврăнса, шухăша кайса тăчĕ. Поля мунчана кĕрсе курăнми пулсан тин, унăн кĕписем çине çаврăнса пăхса тарăнăн сывларĕ те:

— Поля, тусăм. Эсĕ супăньсĕрах çăвăнасшăн пулас. Ме супăнь,—тесе, кĕпи айĕнчен тăхăннă шараварĕ кĕсйинчен супăнь татăкĕ кăларса, мунча алăкне уçса пачĕ.

— Тавтапуç!—терĕ Поля.

Поля мунчаран çăвăнса тухнă-тухманах, нимĕçсем ĕçрен таврăнчĕç. Вĕсем ним намăсланмасăр мунча патне кĕшĕлтетсе пычĕç.

— Поля тусăм, хăвăртрах мунчаран тух, тумлан. Нимĕçсем килеççĕ,—васкаса ÿкрĕ Ольга. Хăй хăвăртрах Поля кĕписене пуçтарса илсе мунчана кĕчĕ.

— Мура каясшӗсем. Ирӗклӗн ҫӑвӑнма та памарӗҫ,— тарӑхать Поля. Вӑл супӑньпе кӑпӑклана ҫӳҫне ҫуса тасатасшӑнваскать.

— Ме, хӑвӑртрах тӑхӑн кӗпӳне. Ав фашистсем кантӑк витӗр пӑхаҫҫӗ,—тет Ольга.

— Ха-ха! Я-и,—ӑйӑрсем пек кӗҫенсе кулаҫҫӗ салтаксем. Пӗр салтакӗ тӳрех мунчана кӗрсе кайрӗ. Вӑл кӗпине тӑхӑнса ӗлкӗреймен Польӑна ыталаса илме шутларӗ. Анчах ӗҫ тухмарӗ. Ольга салтака кӑкӑрӗнчен чышса ячӗ:

— Намӑссӑр!

Салтак кутӑн-кутӑн чакса шывлӑ валашка ӑшне кайса ларчӗ. Кантӑк витӗр пӑхакан салтакӗсем ахӑлтатса кулаҫҫӗ.

Поля кӗпине аран-аран тӑхӑнса мунчаран тухма ӗлкӗрчӗ. Унӑн хыҫӗнчен Ольга та тухрӗ:

— Атя хӑвӑртрах!—терӗ вӑл Польӑна аллинчен ҫавӑтса.

Валашка ӑшне кӗрсе ӳксе йӗпеннӗ салтак ҫиленнипе ним тума пӗлмесӗр тӑрать. Намӑс. Ольга, хӗрарӑм пулин те, ӑна ҫӗнтерчӗ. Ытти салтакӗсем унран кулаҫҫӗ:

— Арҫын пуҫупа хӗрарӑмсене ҫӗнтерейместӗн. Хо-хо-и-и-и!

Польӑпа Ольга пӳртелле чупрӗҫ.

— Яланах ҫ[illegible]ля, лешне [illegible]—тарӑхать Поля. Вӑл ҫӳҫне тирпейлет, ту[illegible]. Пӗр вӑхӑтра.

— Ан тарӑх, [illegible]рине те м[illegible]хат ҫитсен, эпир те вӗсенчен ҫапла мӑшкӑлласа ку[illegible]р,—тесе лӑплантарать ӑна Ольга.

— Унччен тӳсесси йывӑр. Хӑҫан вилӗм ҫитӗ вӗсене? Хӑҫан Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерсе килӗ?

— Урнӑ йытӑ ҫапла вӑл, вилес умӗн пушшех ухмахланать,—тет Ольга.

Пӗр ҫур сехет иртсен, нимӗҫ салтакӗсем мунчаран ҫӑвӑнса таврӑнчӗҫ. Вӗри мунчара пулнипе пӗҫернӗ рак пек хӗрлӗ сӑнлӑ хӑйсем. Вӗсем Ольга камне чухласа илеймеҫҫӗ-ха. Ӑна ялти хӗр тесе шутлаҫҫӗ пулас.

— Эпир сана халиччен курман. Мӗн ятлӑ эсӗ?—тесе ыйтрӗ пӗр салтакӗ Ольгӑран.

— Ольга ятлă эпĕ. Польăн аппăшĕ пулатăп. Чугунçулĕ çинче ĕçлесе пурăнатăп. Стрелочникре,—пĕлтерчĕ Ольга.

Фашист салтакĕсем пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăхса илчĕç. Унтан пĕрре Поля çине, тепре Ольга çине пăхрĕç. Хĕрсем иккĕшĕ те пĕр пек сăнлă, хăмăр куçлă, çырă çӳçлĕ. Анчах Польăн çӳçĕ вăрăм, Ольгăн çӳçне арçынла каснă, сăмсисем курпунтарах, илемлĕ, аллисем патвар.

Пĕр салтакĕ Ольга çине ăмсанса пăхрĕ те:

— Оля?.. Илемлĕ хĕр. Вырăссен кун пек илемлисем сахал,—тесе хăй тĕллĕн пек каласса илчĕ.

Ытти салтаксем те унăн шухăшне çирĕплетрĕç:

— Таса хĕр, вăйлăскер.

Поляваскаса кăмакине хутса ячĕ. Кăмакари вут тĕрлесе çуна пуçласанах, салтаксем хăйсене валли апат хатĕрлеме пикенчĕç. Хĕрсем çинчен вĕсем часах манса каяççĕ.

— Поля, тусăм, мĕншĕн эсĕ вĕсене валли ху апат пĕçерместĕн?—ыйтрĕ Ольга.

— Мана пĕçерттермеççĕ вĕсем. Шанмаççĕ пулас,—тесе пĕлтерчĕ Поля.

Каç та пула пуçларĕ. Салтаксем апат хатĕрлесе çирĕç. Унтан вĕсем пурте укçалла картла выляма ларчĕç. Пĕр салтакĕ:

— Хĕрсем, эсир çывăрăр,—тăлса, По… чăсса кăтартрĕ кăмака çинелле.

Халĕ ĕнтĕ вĕсем ним çинчен шламаççĕ. Вĕсен пĕтĕм шухăшĕ карт çинче. Кашни майрах укçа выляса илес килет. Картсене сĕтел çине çат та çат çĕклесе çапаççĕ. Пĕр вĕçĕмсĕр чĕлĕм мăкăрлантарса туртаççĕ. Маччаран урайне çитиччен тапак тĕтĕмĕ тулса ларчĕ.

Польăпа Ольга кăмака çине улăхса, çывăрма выртрĕç.

— Кашни каç çапла, çĕрĕпе çывăрмаççĕ. Чĕлĕм тĕтĕмĕпе чыхăнтарса пĕтереççĕ,—тесе тарăхса выртать Поля. Хăй Ольга çумне тачăраххăн сыпăçса выртать.

Ольга темшĕн Поля çумнерех çыпăçма хăрать. Ялан унран тарнă пек туйăнать.

— Ман çуммарах çыпăç. Ан хăра, манăн пыйтăсем çук,

сана ермĕç,—тесе пăшăлтатать Поля, хăй каллех Ольга çумне çыпăçать.

Нимĕç салтакĕсем пĕр чĕнмесĕр карчĕсене сĕтел çине çапаççĕ. Вăхăт-вăхăт çеç хыттăн калаçса илеççĕ те, каллех лăпланаççĕ.

Чылай выртсан, Поля та ыйăх тĕлĕшĕпе Ольгăна ыталаса илчĕ. Хăй:

— Сивĕ, çуммарах çыпăç,—тесе мăкăртатать.

Ольга çывăрмасть. Вăл шухăша кайса выртать. Унăн ĕçĕ пысăк. Вăл фашистсен тылне разведкăна килнĕ... Поля ăна ыталаса илсен, Ольга та чăтса выртаймарĕ, Поля çумнерех çыпăçса, ăна тутисенчен чуптурĕ. Поля ыйхинчен вăранчĕ пулас:

— Ольга, тусăм. Ара эсĕ мана чуптăватăн вĕт? Тĕлĕкпе-и?—тесе пăшăлтатрĕ.

— Эпĕ çывăрман-ха. Ху мана ыталарăн та, эпĕ те тӳсеймерĕм, чуптурăм. Каçар,—тесе Польăна ыталаса илчĕ те, хăй çумнелле туртса чăмăртарĕ:

Поля хăраса ӳкрĕ. Вăл пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтрерĕ. Чухларĕ: унпа юнашар выртакан „Ольга“ хĕрарăм мар арçын иккен!

— Ара, эсĕ вĕт хĕрарăм мар, арçын. Кай, тăр ман çумран!—терĕ Поля, лешне хăй çумĕнчен аллисемпе чышса яма хăтланса. Пĕр вăхăта вăл вĕсен çуртĕнче фашист салтакĕсем пуррине те манса кайрĕ, мĕншĕн тесен, халиччен ăна никам капла хĕрӳллĕн чуптуса курман. Ку чуптăву унăн пĕтĕм хĕрарăмлăхне хускатрĕ. Вăл хăйнехăй пĕлместь, сиксе чĕтрет. Чĕри кăкăрне çурса тухасла хăвăрт тапать.

— Ытла ан шарла. Фашистсем сисĕç,—тесе асăрхаттарчĕ ăна лешĕ.

Поля тин кăшт лăпланчĕ. Вăл каллех унăн çумне выртрĕ.

— Юнашар выртасса вырт та, асту, урăх ан чупту мана. Кăна пĕлнĕ пулсан, эпĕ сана хваттере те кĕртмен

пулăттăм. Ху арçын, хĕрарăм тесе суйрăн, тесе пăшăлтатать Поля.

— Эпĕ сана суймастăп. Фашистсене çеç. Эпĕ арçынла тумланса килнĕ пулсан, вĕсем мана тахçанах тытса илетчĕç. Халĕ эпĕ хĕрарăм пулса ирĕккĕн çӳретĕп. Сан патна хваттере кĕтĕм, санпа аппаллă-йăмăклă пултăмăр. Эпĕ сана чуптуни вăл ниме те мар, юратнине çеç пĕлтерет. Хушмастăн пулсан, ан хăра, эпĕ урăх чуптумăп. Анчах асту, фашистсем эпĕ камне ан пĕлччĕр. Вăрçă чарăнсан, чĕрĕ юлсан, эсĕ хуть те ăçта пурăнсан та, шыраса тупап сана. Хăвăн ирĕкӳ пулсан, эпĕ сана арăм туса, качча илĕп. Анлантăн-и?—тесе хăлхинчен пăшăлтатса каларĕ.

Поля ним шарламасăр шăппăн итлесе выртрĕ.

Нимĕçсем кăмака çиййĕнче хĕрпе каччă калаçнине нимĕн те илтмеççĕ. Вĕсен пĕтĕм шухăшĕ карт çинче. Вылясан-вылясан тула тухса кĕреççĕ те, тапак туртаççĕ. Унтан каллех карта çапаççĕ. Сĕтел çинче хут, кĕмĕл, пăхăр укçа сапаланса выртать. Çав укçана кашни хăй çумне чикме тăрăшать. Анчах укçи пĕрре пĕрин умне, тепре теприн умне куçса выртать.

— Чăн калатăн пулсан, эпĕ халех санпа пĕрле пыма хатĕр. Анчах пит ĕненсех пĕтместĕп,—терĕ Поля ассăн сывласа.

— Эх, Поля, мĕншĕн суяс-ха ман сана. Эпĕ вĕт фашист салтакĕ мар. Чăн-чăн партизан. Хамăн ирĕкпе тăван çĕршыва тăшмансенчен тасатма тухнă. Манра чăн сăмахран пуçне урăх нимĕн те пулас çук. Ĕнен. Чăннипе калатăп,—терĕ леш пĕтĕм чунĕнчен ĕнентерсе.

Пĕр вăхăта вĕсем çывăрса кайнă пек пулса, пĕрнепĕри сăмах чĕнмесĕр выртрĕç. Поля каччă сăмахне пĕрре ĕненет, пĕрре иккĕленет. Хăй чĕтрет, ӳчĕ пĕр вĕриленет, пĕр сивĕнет. Ӳпке тулли тарăн сывла-сывла илет. Хăй çапах каччă çумнерех тĕршĕнет.

Чылай вăхăт иртсен нимĕç салтакĕсем картла выляса ывăнчĕç пулас, выляма пăрахрĕç. Çывăрма выртма хатĕрленеççĕ. Пĕрне тула—алăк умне хурала тăма кăларчĕç.

Вăл пăшалне авăрларĕ те тухрĕ. Ыттисем вырăн хатĕрлерĕç те, икшерĕн-икшерĕн юнашар, саланмасăрах çывăрма выртрĕç. Лампа çутине пĕчĕклетрĕç. Кăнтăрла ĕçлесе, каçпа картла выляса ывăннăскерсем, часах çывăрса кайрĕç. Алăк умĕнчи хуралçă çеç каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет.

Çамрăксем çывăрмаççĕ: „Манăн вĕт ыран епле пулсан та отряда çитмелле. Унсăрăн кĕтсе ывăнĕç. А эпĕ мĕн тăватăп? Вăрçă вăхăтĕнче хĕрпе юнашар выртатăп. Кун çинчен юлташсем пĕлсен, мĕн калĕç? Нимăс. Эпĕ вĕт хĕр хыçĕнчен мар çӳреме тухнă... Фашистсен вăйне пĕлсе таврăнма“, тесе шухăшлать партизан. Вăл хĕре хăй арçыннине пĕлтернишĕн хăйне-хăй ятлать. „Мĕншĕн-ха эпĕ ăна чуптурăм? Чуптуман пулсан, вăл нимĕн те пĕлместчĕ. Халĕ ĕнтĕ чавса çывăх та, çавăрса çыртма çук“, шухăшланă май тарăн сывласа илет. Хĕр çумĕнчен тăрса кайма шутлать. Анчах Поля çывăрмасть. Вăл ăна мăйĕнчен ыталаса тытнă. Унăн ăшă сывлăшĕ пите ачашлать.

Поля та хăйне-хăй çиленет: „Мĕншĕн-ха эпĕ ăна ыталарăм малтан? Хам айăплă. Эпĕ ăна ыталаман пулсан, вăл мана чуптăвас çукчĕ, эпĕ вăл арçыннине пĕлмĕттĕм. Халĕ ĕнтĕ мĕн тăвас? Вăл мана пĕтĕмпех хăй çумне çыхрĕ“, тесе шухăшлать.

— Кала, чунăм, мĕн ятлă эсĕ?—ыйтать Поля.

— Эпĕ Олеко ятлă, хушамат—Зубов,—тесе пĕлтерет партизан.

Поля хăвăрт-хăвăрт сывлать:

— Олеко, итле, эпир санпа пĕрне-пĕри кĕтмен çĕртен юратрăмăр. Эпĕ сана айăпламастăп. Эсĕ те мана ан ятла. Çуралнă чухне аттте-аннесем çапла пулма сĕннĕ пулĕ... Эсĕ каланă пек пултăр эппин... Эсĕ манăн упăшкам пул, эпĕ саншăн юратнă арăму пулам. Анчах уйрăм пурăнма мар, пĕрле пурăнма, пĕрле—юнашар тăрса фашистсемпе çапăçар. Вĕсем манăн хама вĕрентнĕ учителе, тăван аннеме персе вĕлерчĕç. Çавсемшĕн эпир вăл тăшмансене

тавăрма тивĕçлĕ. Чĕрĕ пулсан та, вилсен те пĕрле,—терĕ Поля юлашкинчен.

Олеко хĕре хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, сăмахсăр, икĕ аллипе ыталаса илчĕ те, хĕрĕн тутисенчен чуптурĕ:

— Эсĕ манăн, эпĕ санăн! Анчах эпир пĕрне-пĕри çапăçса вилме мар, фашистсене çĕнтерме юрататпăр.

Унтан вĕсем пĕр пĕлмесĕр çывракан фашист салтакĕсене тĕп тума сăмах пĕтерчĕç. Олеко Зубов икĕ шит тăршшĕ кинжалне кĕпи çанни ăшне пытарчĕ те тулалла тухрĕ. Алăк умĕнче тăракан хуралçă, „хĕр“ тухнине асăрхасан, ун патне утса пычĕ. Ăна калаçтарма шутларĕ. Партизан та салтак умне чарăнчĕ. Салтак—пăшалне хулпуççи çине çакрĕ. Вăл „хĕре“ ыталаса илме шутларĕ пулас. Анчах ĕлкĕреймерĕ. Партизанăн кинжалĕ фашист салтакĕн карланкинчен кĕрсе кайса, вĕçĕ ĕнси çиййĕнче курăнчĕ:

— Акă сана хĕр!—шăлне çыртса сăрхăнтарчĕ партизан. Салтак çĕре ӳкрĕ.

Олеко Зубов юнлă кинжалне хатĕр тытса пӳрте кĕчĕ.

— Хуралçă хатĕр, кусене те унăн хыçĕнчен ăсатас... Унăн çиййĕнче хĕрарăм тумтирри пулсан та, вăл халĕ хĕрарăм сăнлă мар ĕнтĕ, чăн-чăн арçын пек.

...Тепĕр пилĕк минутран Олекăпа Поля ялтан тухрĕç. Поля хăй çуралса ӳснĕ тăван ялĕ çине çавăнса пăхрĕ те, вут çулăмĕ ялкăшса çуна пуçланине курчĕ:

— Çаврăнса пăх. Пирĕн çурта çулăм хыпса илчĕ.

Олеко утма чарăнчĕ:

— Ан шелле. Çунтăр. Ăна эпĕ юри, хамăр ялтан тухсан, вут хыпса илмелле туса хăвартăм. Вăрçă пĕтсен, вăл пӳртре пурĕпĕр эпир пурăнас çук. Çĕнĕ лартăпăр,—терĕ Зубов.

Вĕсем вăрманалла кĕрекен аслă çул çине тухрĕç. Тепĕр вунă минутран вăрман ăшнелле кĕрсе кайса курăнми те пулчĕç.

# АНТУН ÇЕМЙИ

Ульяна пĕр çĕклем вутă çĕклесе кĕчĕ. Вăл салма яшки пĕçермеваскать. Анчах вутти чĕрĕ, çунасшăн мар, шăхăрса-чашкăрса çеç выртать. Çунман вутăсене хăвăртрах хыптарса ярасшăн пулса, Ульяна вĕрме тытăнать.

— Ых, мур пуçĕ. Васканă вăхăтра вăл та çунасшăн мар,—тесе тарăхать Ульяна.

Анчах кăмакари чĕрĕ вутă çав-çавах чашкăрса çеç выртать.

— Ачам, эсĕ çăнăхна илсе кĕрсе салмăна çăр. Пар, кăмакăна хам тивертем,—тет Ульянана амăшĕ.

Ульяна хăвăрт тухса, нимĕç салтакĕсенчен пытарса усракан çăнăхне илсе кĕрет. Алламасăрах чуста çăрма пикенет. Амăшĕ кăмака умĕнче тăрмашать.

— Нимĕçсем таврăпиччен пĕçерсе çисе ĕлкĕресчĕ. Вĕсем çитсен, каллех кÿпсе ярĕç. Вара каллех кунĕпе выçă,—тесе хăй тĕллĕн тарăхса калаçать амăшĕ. Хăй пĕр канмасăр кăмака тивертме хăтланса асапланать. Пĕркеленчĕк питçăмартийĕсем тăрăх тар пĕрчисем юхса анаççĕ.

Вĕсен ялне нимĕç салтакĕсем пырса кĕнĕренпе икĕ уйăх çитет ĕнтĕ. Çак хушăра Ульянапа амăшĕ пĕр татăк çăкăр çисе курман. Нимĕç салтакĕсенчен пытарса ĕлкĕрнĕ çăнăхран салма пĕçеркелесе тăранса пурăнаççĕ. Салма яшкине те вăрттăн, салтаксем килте çук чухне çеç пĕçереççĕ. Яшка пĕçернĕ тĕле пулсан, лешсем калаçса та тăмаççĕ, вăйпа туртса илсе çиеççĕ. Нимĕç салтакĕсемшĕн кил-хуçи хĕрĕпе амăшĕ выçă пурăнни нимĕн те мар. Вĕсем хăйсем çеç тутă пулччăр. Вĕсене хирĕç сăмах чĕнме çук. Çавăнтах е çапса амантаççĕ е персе пăрахаççĕ. Юлашки вăхăтра вăл нимĕç салтакĕсем тискер кайăкран та тискерленсе çитнĕ. Нимĕç çарĕ хĕвеланăçнелле чакать. Çийĕнчен тата хыçалта партизан отрячĕсем сыв-

лама памаççĕ, кунĕн-çĕрĕн кĕтмен çĕртен сиксе тухса çĕмĕреççĕ. Йĕри-тавра вĕсем хăйсен тăшманĕсене кураççĕ. Капла пуласса кĕтмен-çке вĕсем. Вырăс халăхне çăмăллăн çеç пăхăнтарма ĕмĕтленнĕ.

Çапла ĕнтĕ вăл: тискер кайăка персе амантсан, вăл пушшех тискерленсе çитет. Хăйне персе амантнă сунарçа туртса çуркаласа тăкма хатĕр.

Амăшĕ асаплана-асаплана çунмасăр тарăхтарнă кăмакине тивертсе ячĕ. Часах чŷлмекри шывĕ те вĕреме кĕчĕ.

— Ачам, шыв вĕрет. Салмăна яр ĕнтĕ хăвăртрах,— терĕ карчăк ирĕккĕн сывласа. Унтан вăл тарланă питне кĕпи çанни вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ.

Ульяна салма татса пĕтерчĕ. Çак вăхăтра кантăк умĕнче çын ури сасси илтĕнчĕ.

— Ах, яшкана пĕçерсе ĕлкĕреймерĕмĕр. Салтаксем тавранаççĕ. Паян каллех выçă юлтăмăр. Ульяна, ачам, татнă салмуна пытар. Курсанах тытса илĕç!—терĕ амăшĕ васкаса ŷксе.

Ульяна урай хăмине уçрĕ те таканине тĕпсакайне лартрĕ.

Амăшĕ кăмакари вуттине сŷнтересшĕн васкать. Анчах тĕрлесе çунакан пуленесем нимпе те сŷнмеççĕ. Хускатсан пушшех ялкăшса çуна пуçларĕç.

— Анне, шыв сапса сŷнтер!—тесе васкатать Ульяна амăшне.

Амăшĕ ним тума пĕлмесĕр кăмака умĕнче чупкала тăрать. Акă вăл каткаран куркапа шыв ăсрĕ. Çак вăхăтра тултан кантăка такам хуллен шак-шак! шаккарĕ. Карчăк кантăк çинелле пăхрĕ те шартах сикрĕ. Хăранипе аллинчи шыв курки çĕре персе анчĕ.

— Ульяна, ачам! Пăх-ха... Хăратăп,—тесе сехĕрленет амăшĕ. Хăйĕн куçĕсем сиксе тухасла чалăрса кайнă, сăнĕ улшăннă, пĕтĕм ŷт-пĕвĕпе чĕтрет.

— Мĕн куртăн тата?

— Пăх-ха, авă пиччӳ кантăк умĕнче тăрать,—пăшăлтатать амăшĕ, кантăк еннелле пӳрнипе чăсса кăтартса.

— Ан аташ-ха, анне... Кăмакана хăвăртрах шыв сапса сӳнтер. Вилнĕ пичче ăçтан чĕрĕлсе килтĕр? Нимĕç салтакĕсем ăна юри, пире хăратасшăн, кантăка шаккаса çӳреççĕ,—тет Ульяна. Унтан вăл амăшĕ каланине ĕненмесĕр, хăй те кантăк умне пырса пăхать. Сасартăк, хăранипе, кутăн-кутăн чакать. Чĕтрене ерет.

— Мĕнле?...

— Çавă, пичче сăнĕ!.. Ку мĕне пĕлтерет?—аран пăшăлтатать Ульяна.

Амăшĕпе хĕрĕ пĕрре хăранипе, тепре тĕлĕннипе ним тума пĕлмесĕр хытса тăраççĕ.

Чăнах та хăрамалла вĕт: Ульянан пĕртен-пĕр пиччĕшне Антуна—уйăх ытларах каялла нимĕçсем тытса кайрĕç. Пĕр ăна çеç мар, Антунпа пĕрле тата 5 колхознике. Вĕсене фашистсем пурне те, коммунистсемпе комсомолецсем тесе, персе вĕлермелле тунă. Персе вĕлерес умĕн хăйсене валли хăйсене шăтăк алттарнă. Вĕсене персе пăрахни ĕнтĕ уйăх ытла. Пиччĕшне тата унăн ытти юлташĕсене пытарнă масар çине Ульянапа амăшĕ темиçе хут та кайса ларса, тăприсем çинче выртса йĕнĕ. Мĕн чухлĕ куççуль тăкнă... Халĕ акă çав персе вĕлернĕ çын кантăк умне килсе шаккаса çӳрет! Ку мĕне пĕлтерет? Тен амăшĕпе хĕрĕ çывăраççĕ? Тен ку тĕлĕк пулĕ? Çук, ку тĕлĕк мар, чăн. Акă вĕсем иккĕшĕ те Антунăн сăнне кураççĕ. Антун та амăшĕпе йăмăкĕ çине пăхса тăрать. Унăн тин çеç сухал шăтма пуçланă тутисем савăнăçлăн кулаççĕ, таса хăмăр куçĕсем йăл-йăл выляççĕ.

Ульяна савăннипе Антун çинчен куçне илмесĕр пăхать.

Антун та амăшĕпе йăмăкĕ çинчен куçĕсене илмест. Юлашкинчен, амăшĕпе йăмăкĕ хăраса ӳкнине чухларĕ пулас, сасă пачĕ:

— Ульяна, анне, ан хăрăр манран. Эпĕ вилмен. Сире

курма, сирĕн сывлăхăра пĕлме, хама вĕлерме тăнă фашист салтакĕсене тавăрма килтĕм.

Ульянапа амăшĕ илтеççĕ: сасси те Антунăн. Кураççĕ: çиййĕнчи тумтирри те унăн.

— Ах, пӳлĕхçĕм, чăнахах Антун-шим эсĕ?!—кăшкăрса ыйтрĕ амăшĕ.

— Пичче, пӳрте кĕр!—чĕнчĕ Ульяна.

— Кĕретĕп. Анчах ан хăрăр эсир манран...

— Антун ачам, пӳрте кĕр часрах.

Антун, пӳрт алăкне ярр уçса пăрахрĕ. Унăн хулпуççийĕ çийĕнче автомат çакăнса тăрать, пилĕкĕ çумне наган хĕстернĕ. Кĕсйинчен граната аврисем курăнаççĕ. Вăл чăн-чăн вăрçă çынни.

Алăк янаххи урлă урине ярса пусрĕ:

— Халĕ ĕнтĕ эпĕ иккенне ĕненетĕр-и?

Ульяна чăтса тăраймарĕ, хирĕç чупса пырса, пиччĕшне ыталаса илчĕ:

— Пичче! Кала, вилĕмрен мĕнле хăтăлтăн?

Антун тĕпелелле утса иртрĕ. Амăшне ыталаса чуптурĕ.

— Антун, ачам!—тесе амăшĕ ăна çурăмĕнчен ачашласа çупăрлать.

Пăртакран Антун хăй мĕнле майпа вилĕмрен хăтăлни çинчен каласа пачĕ:

— Хам вилĕмрен хăтăлнинчен хам та тĕлĕнетĕп эпĕ. Нимĕçсем пире масар çине хăваласа пычĕç. Кашнине тимĕр кĕреçе тыттарчĕç. „Алтăр хăвăра валли шăтăк", терĕç. Акă, аршăн çурă тарăнĕш, сарлакăшĕ—виçĕ аршăн шăтăк хатĕр. Унтан вĕсем пире ултсăмăра та шăтăк хĕррине юнашар тăратрĕç. Ултсăмăра—ултă фашист салтакĕ пеме хатĕр. Пурсăмăра та пуççенчен тĕллерĕç. Пеме команда янтраса кайрĕ. Çак вăхăтра эпĕ, хам та сисмерĕм, пуçа сылтăм еннелле пăрса ĕлкĕртĕм. Фашист салтакĕн пульли лекмерĕ, мăйран шăтарса тухса кайрĕ. Эпĕ шăтăк хĕрне ӳкрĕм. Хамăн ăн çухалмарĕ. Вара юри вилнĕ пек пулса выртрăм. Ытти юлташсем пурте шăтăка ӳксе пĕтрĕç. Нимĕç салтакĕсем: пурте вилчĕç, тесе шут-

ларĕç пулас. Унтан вĕсем мана урараn сĕтĕрсе юлташсем çине пăрахрĕç, çиелтен пĕр шит хулăмĕш тăпра витрĕç. Чылай выртрăм тăпра айĕнче. Пăчă пулса çитрĕ. Сывлăш тухми пулчĕ. Унтан тăпра айĕнчен тухрăм. Пăхап: никам та курăнмасть. Çĕр тĕттĕм. Ăçта каяс ĕнтĕ? Киле таврăнма çук. Майран юн юхать. Кĕпе çаннине татса илсе сурана çыхрăм. Çăмăр çăва пуçларĕ. Çĕр пушшех тĕттĕмленсе çитрĕ. Утатăп. Суран ыратать. Пĕр вăрмана çитсе кĕтĕм. Ыйăннипе урасем утмиех пулчĕç. Канма тесе лартăм. Хам та сисмен, ӳкнĕ те çывăрсах кайнă. Хĕвел тухас умĕн тăрса лартăм. Тӳсме çук ĕçес килет. Çăвар ăшĕ типсе çитнипе чĕлхе хускалмасть. Йĕри-тавра пăхатăп: çук, ниçта та шыв курăнмасть. Эпĕ çывăрса кайсанах çăмăр çума чарăннă пулас. Эпĕ тăтăм та, шыв шыраса пĕр вар тăрăх утрăм. Чылай вăхăт çӳрерĕм аташса, анчах шыв тупса ĕçеймерĕм. Нимĕç салтакĕ персе вĕлерейменĕ, ун вырăнне типсе вилетĕп, тесе шухăшлатăп хам. Каллех каç пулать. Эпĕ вăрманта аташса çӳретĕп. Халĕ ĕнтĕ маншăн тискер кайăксем: упа, кашкăр хăрушă мар. Каяллах фашистсен аллине çитсе лекес мар. Çавăнтан çеç хăратăп.

Çӳресен-çӳресен партизансене тĕл пултăм. Вĕсем манран эпĕ камне, мĕншĕн кунта çӳренине ыйтса тĕпчерĕç. Эпĕ вĕсене ĕç мĕнле пулнине тĕрĕссипе каласа патăм. Вĕсем мана ĕненчĕç, хăйсем пурăнакан вырăна ертсе кайрĕç. Ĕçтерчĕç, çитерчĕç. Сурана тирпейлесе çыхрĕç. Уйăхран суран пĕтĕмпех юсанса çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ акă эпĕ партизан. Хама вĕлерме тăнă фашистсене тавăрма килтĕм. Эпĕ пĕччен мар, манăн юлташсем те пур, вĕсем ял тулашĕнче кĕтеççĕ... Мана нимĕçсен штабĕ кам çуртĕнче вырнаçни кирлĕ,—тесе пĕтерчĕ Антун хăйĕн калавне.

— Ах, эпĕ вĕт малтанах ĕненмесĕр тăратăп. Ырусал пулĕ тесе чунăм тухать,—терĕ амăшĕ.

Пĕр вăхăта вĕсем—амăшĕ, ывăлĕ, хĕрĕ—пĕр çĕре чăмăртанса тăчĕç. Пĕрне-пĕри темиçе хут чуптурĕç. Ах, епле хаклă вăл амăшĕ ачисемшĕн, ачисем—амăшĕшĕн!..

Çак чунилен нимӗç салтакӗсем килмен пулсан, вӗсем пӗр хуйхӑсӑр пурӑнатчӗç. Халӗ ӗнтӗ акӑ пӗри унта, тепри кунта саланса кайрӗç. Выçӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнаççӗ.

Амӑшӗпе йӑмӑкӗ Антуна курса тӑранаймаççӗ. Калаçмалли нумай та,—сӑмах çук.

— Ачам, Антун, санӑн хырӑму выçӑ пулӗ? Мӗн тупса çитерес-ши сана?—терӗ амӑшӗ.

— Анне, кӑмака çунать. Татнӑ салма хатӗр. Халех пӗçерсе пиччене апатлантаратпӑр,—васкаса ӳкрӗ Ульяна.

— Ан чӑрманӑр. Эпӗ тутӑ. Апатланса тӑма вӑхӑт та çук. Тул çутӑличчен пирӗн хамӑра кирлӗ ӗçе туса пӗтермелле,—терӗ Антун.

Амӑшӗпе йӑмӑкӗ нимӗçсен штабӗ кам çуртӗнче тӑнине каласа пачӗç.

— Пирӗн патра та тӑватӑ нимӗç салтакӗ пурӑнаççӗ. Калама та çук усалскерсем. Пире çиме те ирӗк памаççӗ. Вӗсем çук вӑхӑтра çеç салма яшки пӗçерсе тӑранкаласа пурӑнатпӑр,—тесе пӗлтерчӗ амӑшӗ.

— Халӗ ӑçта вӑл салтаксем?—ыйтрӗ Антун.

— Кам пӗлет вӗсене? Каçпа тухса каяççӗ те, çӗрӗпе таçта çӳреççӗ. Çутӑлас умӗн тин килеççӗ. Çимеллишӗн кастараççӗ. Мӗн пурне йӑлтах кӳпсе пӗтерчӗç. Кӑнтӑрла кунӗпе килте. Çывраççӗ. Пире нимӗн тума та памаççӗ. Хамӑра пӳртрен хуса кӑлараççӗ. Кӳрше каяс,—унта та çавах—салтаксем...

Антун çиллипе шӑлне çыртрӗ:

— Ых, йытӑсем! Пире чура тума-и? Çук, вӑл пулмӗ. Эпир вилмен-ха, чӗрӗ. Пурсӑмӑра та вӗлерсе пӗтерейменӗç. Кирлӗ пулсан, вилнисем те масар çинчен тухса çапӑçӗç.

— Пичче, эпӗ те санпа пӗрле пыратӑп,—терӗ Ульяна, Антун куçӗсенчен пӑхса.

Вӑл вунпиллӗкре çеç-ха...

— Вилсен те, чӗрӗ пулсан та, ачамсем, пӗрле. Нимӗçсен мӑшкӑлне тӳссе пурӑнасси пулмасть. Эпӗ те сиртен юлмастӑп,—терӗ амӑшӗ те.

Антун кӑшт шухӑша путса тӑчӗ. Куçӗсемпе пӳрте

йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Стена çумĕнче вунпилĕк çул ĕлĕк вилнĕ ашшĕн сăнне курчĕ. Вăл салтак шинелĕпе, уринче кĕске кунчаллă салтак атти, пуçĕнче сăмсасăр картус. Ку сăнне вăл 1915 çулта ӳкерттернĕ. Вăл та вĕт 1914—1915—1916 çулсенче вăрçăра нимĕçсемпе çапăçнă. Суранлансан, нимĕçсен аллине тыткăна лекнĕ. Унта икĕ çул тăршшĕ нимĕç баронĕ патĕнче йывăр ĕç ĕçлесе пурăннă. Çавăнта вĕт вăл чире кайса таврăннă. Темиçе çул хушши вăл Германирен илсе килнĕ чирпе асапланнă. Амăшĕ Ульянана çуратнă çул ашшĕ вилсе выртнă. Амăшĕ, çамрăк пулсан та, урăх качча тухман. Ачисене пăхса ӳстерме тăрăшнă. Ӳстерсе çитерсе пурăнма çеç пуçланăччĕ. Каллех нимĕçсем вăрçăпа килчĕç.

— Юрĕ, анне, Ульяна, пуçтарăнăр, манпа пĕрле пырăр. Антив, пирĕн пĕтĕм çемье нимĕçсемшĕн хаяр тăшман пултăр,—терĕ Антун.

Лешсем хĕпĕртесе ӳкрĕç. Çавăнтах тумланма пуçларĕç. Анчах çуртне пăрахса хăварма çавтери йывăр пек туйăнать амăшне. Вĕсем вĕт çак çурта упăшкипе иккĕшĕ татăкăн-татăкăн пухса тунă. Çак çуртра пурăнса çур ĕмĕрне ытла ирттернĕ. Ватăлмалăх кунĕнче хăйĕн тăван çуртĕнче выртса вилме ĕмĕтленнĕ.

— Антун ачам, çурта мĕнле пăрахса хăварăпăр? Шелçке?—терĕ амăшĕ.

— Ан кулян, анне. Пуçсем сывă пулсан, çурт тăвăпăр. Анчах малашне ĕнтĕ пирĕн çуртра нимĕç салтакĕсем те саркаланса пурăнаймĕç. Çитĕ,—терĕ Антун татса. Уншăн халĕ нимĕн те шел мар, вăл халĕ пурин çиччен те маннă. Унăн пĕтĕм шухăшĕ нимĕç оккупанчĕсене пĕтерес, вĕсене ăçта курнă унта персе пăрахас шухăш.

— Пичче, хăвăртрах тухса каяр. Унсăрăн нимĕç салтакĕсем час таврăнĕç. Яланах вĕсем пĕр вăхăтра таврăнаççĕ,—терĕ Ульяна пиччĕшне васкатса.

— Юрĕ. Эсир аннепе малтан утăр. Вăрмана кĕрсен, çулăн сылтăм енче пĕр ватă хыр пур, çавăн айĕнче пире кĕтсе тăрăр.

— Эпĕ юлташсемпе пĕрле пырăп,—терĕ Антун. Вăл йăмăкĕпе амăшне ăсталла каймаллине кăтартса ячĕ.

Вĕсем пӳртрен тухрĕç. Антун çаврăнса пӳрт алăкне хупма çеç пикенчĕ, сасартăк асне илчĕ:

— Ах, чуть аттен сăнне манса хăварман. Эпĕ халех кĕрсе илсе тухăп. Эсир карта хыçнелле утăр,—терĕ вăл.

Ульянапа амăшĕ пахча урлă каçса вăрман еннелле утрĕç. Антун каланă ватă хыр вĕсене хăнасене йышăннă пек кĕтсе илчĕ.

Амăшĕпе хĕрĕ хыр айне çитсе ларсан, вăрах та вăхăт иртмерĕ, ялта пăшал пенĕ сасăсем, гранатăсем ухлатса çурăлни илтĕнчĕ. Çуртсене пĕрин хыççăн тепĕрне вут çулăмĕ ыталаса иле пуçларĕ. Çулăм айĕнче фашист салтакĕсем хăшĕ çаруран, хăшĕ кĕпе вĕççĕн чупкаланине Ульянапа амăшĕ савăнăçлăн пăхса ларчĕç.

— Ак, çапла кирлĕ вĕсене.

Нимĕçсен штабĕ вырнаçнă çурт пĕренисем çӳлелле çĕкленчĕç. Çурт тĕлĕнче хура тĕтĕм çеç мăкăрланса тăчĕ.

— Тăшмансен пĕр йăви пĕтрĕ,—савăнса кулчĕ Ульяна.

Антунпа унăн юлташĕсем фашист салтакĕсемпе офицерĕсене миçе çын пĕтернине эпĕ çырмастăп. Çапла çеç калама пулать: вĕсем ялтан пĕри те тухса каяйман. Мĕншĕн тесен ялăн йĕри-тавра партизансем тăрса тухнă та, курнине пĕр пере-пере ӳкернĕ. Чылайĕшĕ çулăм ăшĕнче пĕтнĕ.

Шурăмпуç шуралса килчĕ. Партизансем ватă хыр айне пуçтарăнчĕç.

— Паллашăр: ку манăн анне, ку йăмăк—Ульяна,—тесе пĕлтерчĕ Антун хăйĕн юлташĕсене.

Пурте алă тытса паллашрĕç.

Çапла Антунăн пĕтĕм çемйи тăшманпа çапăçма тухрĕ.

1943 ç.

# ÇЫРУ.

Валя алса-чăлхасем çыхакан мастерскойĕнче ĕçлет. Стахановка. Ĕç нормине икĕ хут ытла тултарса пырать. Кăçал курорта кайса килчĕ. Канса килнĕ хыççăн унăн сăнĕ татах та илемлĕн курăнать. Куçĕсем кăвак шăрçа пек таса. Икке уйăрса явнă çиттунисем, сарă ука пек кăтраланса, хулпуççийĕсем çинче авкаланса выртаççĕ. Халĕ вăл ĕçрен таврăннă. Çийĕнчи пальтоне хывса çакрĕ те:

— Анне, апат хатĕр-и? Манăн çиес те комсомолецсен пуххине каяс пулать. Паян унта мана комсомола илесси çинчен ыйту тăрать,—терĕ Валя, юр пек шурă катанпир çине тĕрĕ тĕрлесе ларакан амăшĕ çине пăхса.

— Апат хатĕр, ачам. Сана çеç кĕтсе лараттăм. Чим-ха, кăштах манман, Валя, сана валли пĕр çыру пур. Ме, эпĕ апат хатĕрличчен вула. Камран-ши?—терĕ амăшĕ çыру парса.

— Пĕлместĕп, камран, ăçтан ара ку çыру? Эпĕ халиччен никам патне те çырман, хам та илмен,—терĕ Валя, аллинчи çыруне çавăркаласа пăхса. Унтан конвертне тирпейлĕн уçрĕ. Çырăвĕпе пĕрле карточка тухрĕ. Пăхать—красноармеец тумтирĕ тăхăннă çамрăк çын сăнĕ. „Ăçтан? Мĕнле красноармеец ку? Эпĕ кун пек çамрăк çынпа нихçан та паллашман“, тесе шухăшларĕ вăл.

Валя çамрăк-ха. Вунçиччĕ тултарса вунсаккăр çине тин пуснă. Халиччен нимĕнле каччăпа та паллашман. Вăхăчĕ те пулман унăн: вĕреннĕ, ĕçленĕ...

— Ачам, ăçтан, камран вăл çыру?—ыйтать амăшĕ сĕтел çине апат хатĕрлесе лартнă май.

Валя чĕнмест. Вăл шухăша кайнă. Çырупе вулать, хăйне хăй ĕненмесĕр, чĕрĕк листи хут çине пăхать. Унта акă мĕнле çырнă:

«Валентина Ивановна, эпĕ Сирĕн пата çыру çырсă чăрмантарнăшăн каçарăр. Сире эпĕ курман, Эсир мана пĕлместĕр. Эпĕ Ленинград Çар Округĕнчи красноармеец—

Борис Васильевич Любимов. Ман шутпа эсир алса-чăлхасем çыхакан мастерскойĕнче ĕçлекен мастерица пулассăн туйăнать. Астăватăр-и, Эсир пĕр мăшăр алса ăшне вичĕ сăмахлă çыру чиксе янине? Çав çыруллă алса мана тиврĕ. Халĕ эпĕ çав ăшă алсапа, алла ручной пулемёт тытса белофиннсене хирĕç çапăçатăп. Пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар куллен кун малалла çĕнтерсе пырать. Финнсем каялла чакаççĕ. Çанталăк асар-писер сивĕ тăрать. Анчах эпир, красноармеецсем, лайăх тумланнă. Пирĕншĕн сивĕ ним те мар. Эпир тутă... Тавтапуç Сире — ăшă алсашăн! Эсир хĕр пулсан—манăн савни пулăр. Мăшăрлă хĕрарăм пулсан—вăрăм ĕмĕрлĕ пулăр, чечекленекен Совет çĕршывĕнче савăнăçлăн пурăнăр! Йывăр пулмасан, ответ çырăр. Кĕтетĕп. Сирĕн шанчăклă тусăр—Б. В. Любимов. 1/1—1940 çул».

— Мĕнле пит вăрăм çыру? Халĕ те вуласа тухаймастăн. Камран вăл? — тĕпчесе ыйтать амăшĕ. Унăн та пĕлесси килет.

Валя амăшне хирĕç нимĕн те чĕнмест. Пĕрре çыру çине, тепре çамрăк та илемлĕ красноармеец сăнĕ çине пăхать. Савăннипе унăн аллисем чĕтреççĕ. Хăвăрт-хăвăрт сывлать хăй. Чĕри уççăн тапать. Куçĕсем пĕр йăл кулаççĕ, пĕр вăтанаççĕ. Питçăмартисем хĕрелеççĕ. Ним тума та пĕлмест. Кĕтмен çыру хĕрĕн çамрăк шухăшне пĕтĕмпех хускатрĕ.

— Ачам, çыруна вуласа пĕтертĕн пулĕ? Васкатрăн: лар ĕнтĕ, апатлан, сивĕнсе кайĕ тата. Пухăва кайма кая юлăн. Ятлаçĕç тата хăвна,—тесе васкатать амăшĕ.

Валя амăшĕн сăмахĕсене хăшне илтет, хăшне илтмест. Вăл шухăша путнă... Астуса илчĕ. Валя ĕçлекен мастерскойĕнче Хĕрлĕ Çар валли алса-чăлхасем çыхса хатĕрлеççĕ. Пĕрре, нумаях та пулмасть, Вальăн тантăшĕ, Катя ятлăскер, шӳт тусах:

— Валя!—терĕ.

— Мĕскер?

— Çак эпир çыхнă алсă-чăлхасене красноармеецсем тăхăнаççĕ ĕнтĕ.

— Хĕрлĕ Çар валли хатĕрлетпĕр те, урăх камсем тăхăнччăр тата, красноармеецсем пулмасăр.

— Çыру çырас шухăш кĕчĕ ха мана. Красноармеецсем алсасене илĕç те, пирĕн çырусене вуласан, хамăр пата çырусем çырса ярĕç. Хăйсене курмасан та, çыру тăрăх паллашни питĕ интересно пулмалла!—терĕ Катя савăнăçлăн.

— Килĕшетĕп. Уншăн вĕт нимĕн те пулмасть. Красноармеецсем те çамрăк çынсем, эпир те хĕрсем,—тесе килĕшрĕ Валя.

Унтан вăл ним шухăшламасăр пĕр хут татăкĕ çине çапла çырчĕ:

„Çак, эпĕ çыхнă алсана тăхăнакан красноармеец—манăн савни пултăр. Хĕрӳллĕ салампа ыталаса чуптăватăп. Валентина Ивановна Караева“, тесе алă пусрĕ. Хăйĕн адресне çырчĕ те, çыруне алса ăшне тирпейлĕн чиксе хучĕ. Катя та çапла турĕ. Анчах кам мĕнле сăмахсем çырнине пĕрне-пĕри каламарĕç.

— Эпир, хĕрсем,—çыртăмăр ĕнтĕ. Вĕсем, красноармеецсем, пирĕн пата, палламан çынсем патне, çырас çук. „Пĕр-пĕр вата карчăк çырса чиксе янă пулĕ“ тесе кулĕç хамăртан,—терĕ Катя.

— Айта, çырусене каялла кăларса илсе çурса пăрахар,—терĕ Валя. Катя çавăнтах хăй çырнă çыруне алса ăшĕнчен кăларса илчĕ те çурса пăрахрĕ.

Валя та çыруне яман пулĕччĕ. Анчах вăл çыру чикнĕ алса мăшăрне, нумай алсасем хушшинче пăтрашса кайнипе шырарĕ-шырарĕ—тупаймарĕ.

— Ан тив, манăн çыру кайтăр ĕнтĕ. Нимех те çырман эпĕ унта,—терĕ Валя, аллипе сулса. Кайран вăл çыру çинчен шухăшлама та манчĕ. Катя та асăнтармарĕ.

Кунсем, эрнесем, уйăхсем иртрĕç. Чăнах та ун чухне савăнăçлă хĕршĕн шӳт тунă пек çеç туйăнчĕ пулас. Акă халĕ ĕнтĕ шӳт мар, чăнах пулса тăчĕ. „Мĕн тăвас? Мĕн-

ле ответ парас? Ответ памасан юрамасть. Вăл вĕт çак эпĕ кĕтмен çырăва çырнă чух, унăн пуçĕ урлă пульăсем шăхăрнă, снарядсем уланă, самолётсем явăнса вĕççе çӳренĕ. Унпа юнашар тăрса çапăçакан юлташĕсем хăшĕ суранланнă, тен, хăшĕ вилнĕ... Вăл çапах хăрамасăр, манăн виçĕ сăмахлă çырăва сума суса ответ панă. Çакăн хыççăн вара ун çыруне хирĕç ответ памасан, калама çук вăтанмалла пулать-çке... Çук, ответ паратăпах. Анчах, мĕнле унăн кăмăлне хавхалантармалли сăмахсем тупса çырса ярăп?" тесе шухăшлать Валя. Халĕ ĕнтĕ вăл хăйĕн алса ăшне чиксе янă çырăвĕшĕн ӳкĕнмест. Ӳкĕнме мар, савăнса тăрать вăл уншăн, мĕншĕн тесен Вальăн та вĕт унта—фронтра кăшт та пулсан пулăшăвĕ пур. Вăл хăйĕн тусĕсемпе çыхнă алса-чăлхасене тăван халăхăн ывăлĕсем— красноармеецсем тăхăнса белофиннсене хирĕç ăмăрткайăксем пек хастарлăн çапăçаççĕ. Вăл красноармеец Вальăран çыру илсен татах та вăйлăрах çунатланĕ. Савăнĕ, хĕпĕртĕ. Тен вăл чăнах та авланман çын? Финнсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, пĕр-пĕринпе тĕл пулса, вĕсен хушшинче ĕмĕрлĕхех мăшăрлă пурнăç пуçланса кайĕ. Халĕ ăна Валя калама пултараймасть, çапах унăн шухăшĕ çавăн патнелле сулăнать-сулăнатех...

Валя амăшне сăмах чĕнмесĕр çиме ларчĕ. Çăтса апат анмасть. Кĕтмен çыру, красноармеец сăнĕ унăн яланах куç умĕнче:

„Мĕнле ответ парас?"

Амăшĕ те хĕрĕ шарламаннипе шухăша ӳкрĕ.

— Мĕн пулчĕ сана, Валя? Капла пулакан марччĕ-çке? Кала ĕнтĕ аннӳне. Тен санăн хуйхуна пусарăп,—тесе йăпатать ăна амăшĕ.

— Кĕтмен çыру, анне, красноармеецран,—тесе пĕлтерчĕ Валя амăшне.

— Ара, мĕнле красноармеец вăл? Хăçан, ăçта курса паллашрăр эсир унпа?—тесе тĕлĕнет амăшĕ.

Валя амăшне ĕç мĕнле пуçланса кайнине пĕр пытармасăр каласа пачĕ:

— Эпĕ ăна хăйне курмасăр, карточка çинчи сăнне курнипех кăмăлларăм. Акă, кур.

Амăшĕ карточка çине пăхса, пĕр самант шухăшласа ларчĕ.

— Хăвăн ирĕк, ачам, эпĕ чарма пултараймастăп. Сăнне пăхсан, пултаракан çын пек. Ответ çырас пулать. Акă, манран та пĕр пĕчĕк кучченеç. Хам алăпа тĕрленĕ алтутри, çыру ăшне чиксе яр, манран та салам çыр,—терĕ амăшĕ тин çеç тĕрлесе пĕтернĕ катанпир тутăрне парса.

Валя савăннипе амăшне ыталаса чуптурĕ. Унтан вăл:

— Ну, анне, эпĕ халĕ пухăва каятăп. Унтан таврăнсан Борис патне ответ çырăп,—тесе тумланса тухса кайрĕ.

Амăшĕ хĕрĕ çине ăшшăн пăхса юлчĕ.

— Кун пек пуласса пĕлнĕ пекех, паян васкаса тĕрлесе пĕтертĕм алтутрине. Пысăк пулмасан та, красноармееца кучченеç пулĕ,—тесе хăй тĕллĕн хĕпĕртерĕ вăл.

Çапла пуçланса кайрĕ Вальăпа Борис хушшинчи çывăхран та çывăх юрату.

1943 ç.

---

# ТУПМАЛЛИ.

*Стр.*


Умсăмах вырăнне . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Ашшĕçемпе ывăлĕсем . . . . . . . . . . . . . . 7
Кам айăплă? . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Вилĕмрен хăтăлнисем . . . . . . . . . . . . . . 16
Шăтăк-çурăка хĕсĕннĕ фашистсем . . . . . . . 23
„Кучченеçлĕ“ нимĕçсем . . . . . . . . . . . . 25
Лизавета Егоровна . . . . . . . . . . . . . . . 27
Красноармеец Самсонов . . . . . . . . . . . . . 34
Пăлан хыççăн . . . . . . . . . . . . . . . . . 37
Ту витĕр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
Кузьма Кукаев . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Политрук . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 57
Вăрманта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 62
Вĕретнĕ шыв . . . . . . . . . . . . . . . . . 65
Кĕтмен юрату . . . . . . . . . . . . . . . . . 69
Антун çемйи . . . . . . . . . . . . . . . . . . 79
Çыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 87



Редактор С. Эльгер.

НТ 00322. Подп. к печати 21-I-44 г. Объем 3 п. л. Тир. 3000 экз. З. 1219.

Отпечатано в типографии № 1 Управления полигр. промышлен. при СНК ЧАССР г. Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 3 руб.

Засон-

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

НА ФРОНТЕ

*РАССКАЗЫ и ОЧЕРКИ*

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1944
Чебоксары